К 84.09(=Чув)
В 55
Ч-49079

Эля Эльф

# Вĕре çĕлен е Сони

Тăватă пайлă трагеди

Национальная библиотека ЧР
4-049079

УДК 82-3
ББК 83.3(2Рос=Чув)-6
В 55

В 55 **Эля Эльф. Вĕре çĕлен** е Сони **(Софья).** Тăватă пайлă трагеди (Трагедия в 4-х частях). – Чебоксары. 2006.

XX ĕмĕрĕн варринче пурăннă Сони ятлă хĕр çинчен (Трагедия жизни чувашки Софьи в начале и до середины XX века).

4-49079

Национальная библиотека Чувашской Республики

Проверено 2017

© К.И. Вишневская, 2006

Эгея Эльф

# ВĔРЕ ÇĔЛЕН

## Тăватă пайлă трагеди

Шупашкар - 2006

## ПЕРСОНАЖСЕМ:

Энтри-вăтам чухăн
Ульяна – унăн арăмĕ
Крилле, Петĕр ӳссе çитĕннĕ, Соня – ачисем
Яша – тăлăх каччă Энтрисем патĕнче пурăнать
Çемен – ялти пуян
Марине – Çемен арăмĕ
Кĕтерук – вĕсен хĕрĕ
Кĕркури атте – пачăшкă
Асли – чиркӳ старости
Хĕрĕхрен иртнĕ арçын – чиркӳ хуралçи
Пуян каччă тата Слава, Ира, Лена – çамрăксем
Варламов – коммунист
Иван – Павăлсен пускилĕ, çӳллĕ çамрăк арçын
Икĕ манашка
Хресчен
Туйра – пуянсем, салтакра – чухăнсем
Павăл – чухăн яш

СОНИ

1 пай. 1 курӑну

Урамра шартлама сивӗ. Кутсӑр-пуҫсӑр ҫил улать, тӑман вӗҫтерет.

Чиркӳре. Икӗ пукан ҫине выранҫтарнӑ тупӑкра ҫамрӑк тулли хӗрарӑм выртать. Унӑн аллине ҫурта хӗстернӗ тата ҫамки ҫине тӗн ҫырӑвӗллӗ хӑю хунӑ.

ПУП (Чӳречерен урамалла пӑхать): Паян кунӗпех шӑтӑк чаваҫҫӗ ҫак вилӗ валли. Халӗ те хатӗрмар-шим? Такам васкасах килет-ха. Тен, пӗтерчӗҫ пулӗ?..
ХРЕСЧЕН (Шӑнса пӑрланнӑ сухалне шаккаса илет те ӑшӑ сывлӑшпа аранах сывласа ярать. Ҫӑварне уҫсанах...)
ПУП:Эсӗ, чухӑнка, малтан сухална мар, ҫӑпатусене юртан силле! Сухала нумай пӑр ҫыпҫӑнмасть.
ХРЕСЧЕН:Е–ара-мӗн, эпӗ пит-куҫа ӑшӑтасшӑн пултӑм ӗнтӗ малтан. Чӑтма ҫук сивӗ-ҫке, Кӗркури атте. Шӑтӑк чавасси те пулмасть паян пирӗнтен. «Кун пекки нихҫан курман», - теҫҫӗ ял арҫынӗсем те. Шӑнса пӑрланнӑ тӑпрана хӑйпӑтаймарӑмӑр вӗт. Лом та, пуртӑ та витмест. Паян халтан карӑмӑр, кун каҫа шӑтӑк мар, тарӑнӑшне шит чухлӗ те чаваймарӑмӑр. Турӑ ҫырлахтӑрах.
ПУП тарӑхса Иртерех тухмалла пулман-и?! Халӗ вилӗ чиркӳре ҫӗр каҫать-и?
ХРЕСЧЕН : Ульяна вилмен пулӗ вӑл? Тем, ман чун ҫапла калать.
ПУП Мӗн клаҫатӑн эсӗ? Ӑсран тайӑлтӑн-им? Ват сухал!
ХРЕСЧЕН Ара, Кӗркури атте, кун пек кун каҫа шӑтӑк чавманни ман ӗмӗрте пулман.Ку мӗне те пулин пӗлтеретех. Ҫӗр - анне пире итлемест. Пӑхӑнтарма ҫук ниепле те. Мӗнле тимӗрсемпе те алтаймарӑмӑр.
ПУП Пулни кӑна пулать-и? Пулманни те пайтах пулать. Ҫылӑха кӗнӗ ӗнтӗ ҫак ял арҫынӗсем. Ҫӗре

парăнтараймастăр.
ХРЕСЧЕН Пулĕ-пулĕ. Ара çут çанталăкран никам та уйрăлса тăмасть, вăл пурне те пăхăнтарать.
МАНАШКА чупса тухать: Эсĕ çитнĕ те, шăнса вилен пуль. Кил-ха вĕри чей ĕç, ăша сивĕ ан çаптăр.
ХРЕСЧЕН Тавах.( Ĕçет.Хырăмне шăлкаласа илет.) Ку ăшăнмалăх та , савăнмалăх та пулчĕ. Йăлтах пĕçертсе ячĕ. Вăт çавăн пек шыв пире пĕр чухне самаях савăнтрать. Вăт çылăхĕ ăçтан ан пултăр: çăпата пуçне шăма пуçласан та хĕрарăм çинчен шухăшлатпăр вĕт. Сухал шуралсан, шуйттанĕ айăка çыпçăнать, тет-и ?
ПУРТЕ (Ахăлтатсан, çав вăхăтра çурта шатăртаттарса çунма тытăнать. Пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ... Манашка сăх сăхса тухса каять) . Ыттисем те: – Тур çырлахтăр ( пуç çапаççĕ).
ПУП Куртăр-и? Вилĕ пĕлмест теççĕ. Епле пĕлмĕ.
ХРЕСЧЕН Эпир ăна усал каламарăмăр-çке.
ПУП Килĕшмест ăна ун пек калаçу. Хăй вăл çав тери чипер пулнă. Еплерех тути-çăварĕччĕ, епле калаçатчĕ чипер. Тата кĕлетки: пĕвĕ-сĕвĕ, сăнĕ-куçĕ еплерехчĕ. Шел. Мĕн пулчĕ? Ача çуратман хĕрарăм та мар ĕнтĕ. Кашни расна ача, расналла килет пуль çав çĕр çине.
ХРЕСЧЕН Турă каçартăрах, пулăштăрах. Епле те пулин чипер тирпейлесчĕ чипер хĕрарăма.
Пуп: Эс кала-ха мана. Çĕрне чазма пуçланă чухне эсир йĕркеллех пуçланă-и?
ХРЕСЧЕН Ун пирки иккеленме кирлĕ мар. Ульяна мăшăрĕ Энтри ĕç пуçлама пĕлет. Ахальтен-им ялта ĕç пуçлас пулсан ăна пуçлаттараççĕ. Ĕç кутăнла пыни темпе çыхăннă ĕнтĕ. Вилменех пуль?
ПУП Антра сухра, мĕн калаçан? Çăпан тухат-иç чĕлхӳне капла калаççан.
ХРЕСЧЕН Тухсан тухĕ. Мĕн тăвăн. Турă çырлахтăрах.
ПУП Юрĕ. Паян кĕлĕ вулар ытларах. Ырă Турă пулăштăр.

(Тухса кайнă чухне): Эсир, паян хĕреслĕ яла кайнисем, пĕри те киле ан кайăр. Пурте Энтри патне кайăр. Чухăнах мар, ĕçмелли, çимелли – ăшăнмалли пурах вĕсен. Ыран валли вăй пухăр.
ХРЕСЧЕН пуçне тайса: Çапла тумалла пуль. Энтри хăй те çапла каларĕ-ха. Юрĕ, эпĕ калăп. Çăва çинчисем шăнса та хытрĕç пулĕ.
(Чиркӳре хура тумлă хĕрарăмсем кускалаççĕ. Пĕри тимлесех «Псалтирь» вулать. Хушăран кĕвĕлесе юрлать,)
ХУРАЛÇĂ кĕрет: Халь тин никам та чиркĕве килес çук.
Питĕрмелле пуль хапхине, чиркӳ алăкĕсене.(Сăх сăхать).
ПУП сăх сăхса: Турă, çырлаха-ах. Кунта паян вилĕ çĕр каçать . Ăна пĕччен хăварма та юрамасть. Кам-ши ларĕ? Килĕнче кам пурччĕ-ши ватти?
МАНАШКА Эпир пулмасан, кам пултăр?
ПУП Аван. Эсир ăнланмасан кам пултăр тата? Кунта ним хăрамалли те çук.
МАНАШКĂСЕМ Юрĕ-юрĕ. Черетленсе те вулăпăр, пĕр каçа ирттеркелĕпĕр-ха. Чăтма тивет, Турă та чăтнă.
ПУП ладанпа çунакан лампадкине илсе тĕтĕм кăларать: Каçхи кĕлĕне паян çын та пухăнмарĕ. Ыррах-ши ку? Е Ульянана пытарайман пирки-ши? (Сулкаласа тĕтĕмне вăйлатать ) Çакăнта çĕр каçакансене канлĕх пултăр (сăх сăхса Алтаре кĕрет те унта йĕрке тусан, тумланса тухса каять).

## 2 курăну

Тĕттĕм урам. Чиркӳ чӳречи умĕнче улаха ал ĕçĕпе кайма тухнă çамрăксем шавлаççĕ.
КАЧЧĂ Пĕр хыпар пĕлтерем-и сире?
ИРА Хыпарçăн хыпарласси çеç.
КАЧЧĂ Тата мĕн – хыпашламаллаччĕ-им?(Тытса хыпалама хăтланать).
ПУРТЕ кулаççĕ.
ИРА кишĕр çыртса илет те иклетме пуçăнать.
ЛЕНА кулса: Пуçланчĕ. Татах иксӳ. Татах, татах. кулса вилмелле санран.
ИРА Мĕншĕн-ха çак иксӳ ялан кишĕр çиме пуçласан килет?
КАЧЧĂ Калас-и?
СЛАВА Кала-ха. Мĕн те пулсан çĕнни шутласа кăлар-ха.
КАЧЧĂ кулса: Хе-хе. Мĕн çĕнни илтесшĕн вара эсĕ Ира пирки? Хăв ăнланмастăн- и вара? Ирина наша чи хитри те, чи -чи... Ун пекки чиперри çук пулин те, хĕр упраç кишĕр çинĕ чухне лăкăртатаь пулсан, ун çинчен такам ха-ха шутлать, ăна курасшăн çунать.
СЛАВА Мĕншĕн апла шутлатăн эсĕ?(Шăппăнрах)Эсĕ пĕлетĕн-çке вăл мана килĕшнине...
КАЧЧĂ Шăпах çавăнпа каларăм та. Мĕн санăн кишĕр çук-им? (Хĕрсем вăтанса пăрăнаççĕ, каччă унталла-кунталла пăхкалать те чиркӳ чӳречи çине выртать. Унта тупăкра çын йăшăлтатнине асăрхать). Турă çырлахтăрах! Тупăкран вилĕ тухать!!! Настоящий Вий!!!
ПУРТЕ Мĕ-ĕн?!
КАЧЧĂ Вий кĕçех каçхи урама вĕçме тухать.
ПУРТЕ Мĕ-ĕн калаçатăн эсĕ, яш каччă?
КАЧЧĂ Мĕн теиччен чӳречерен пăхăр.
(Çамрăксм чӳрече еннелле чĕвĕленеççĕ, анчах хуралçă

хапха патне утнине курсан пытанса лараççĕ.
ЛЕНА: Паян суймалли кун шутласа кăларман пулĕ?
Ун пек кун та тума пулать-им?..
ИРА: Шăп-ха эс. Ман чĕре сиксе тухать хамран.
ЛЕНА Мĕнрен?
ИРА Эсĕ вара нимĕн те ăнланмарăн-и?
ЛЕНА Çук.
ИРА Паян Тăрханта ача çуратма пуçланă хĕрарăм вилсе кайнă тет.
КАЧЧĂ Тет хыççăн кайсан, Мускава çуран çитме пулать тет. Вилмен ĕнтĕ вăл, йăшăлтатнине хам куртăм.
ИРА Кай-ха эс, сўпĕлти. Эпĕ чăннине калатăп.
ЛЕНА Вара эсĕ мĕн, Ира,йĕретĕн-и? Вилнĕ-вилнĕ, шел пулин те. Эпир те вилетпĕр. Хăçан та пулин.
СЛАВА Вилни ак хамăра хăвалама пуçласан епле пулĕ?
КАЧЧĂ Ха-ха. Курнă-и эсир вилĕ тупăкран вĕссе тухнине... Анчах та темĕн те пулма пултарать, эп те йăнăш калама пултаратăп е чăн та килсе тухма пултарать. Çĕрĕн çырми тарăн, пурнăçăн ĕмри вăрăм та тĕрлĕ тĕслĕ.
СЛАВА Пулĕ те. Ара мучисем иртнĕ эрнинче, çĕрле, пасара кайнă чухне çутă куçлă утă капанĕ пек шуйттана курнă. Епле пистернĕ вĕсене. Илтмен-и?
КАЧЧĂ Çу-ук. Суятăн пуль?
ЛЕНА Суймасть пуль. юлашки вăхăтра ун пеккисем çинчен çине-çинех калама пуçларĕç. Ун пек усалсем куçа курăнма пуçласан, самана улшăнасса теççĕ ваттисем.
ЫТТИСЕМ харăсах: Шăп... (Çухăрашса малалла тапса сикеççĕ, çав вăхăтрах манашка та сирпĕнсе кăшкăрса тухать, çамрăксемпе çапăнса çĕре ўкет те):
МАНАШКА Турă, çăт, хăтар! Эпĕ çылăхлă. Вилĕ мана çылăхлăскерне урамра такăнтарать.Пĕр вилерен темиçе çын пулса тухрĕ. Ах! Турăçăм, хăтар. Хăтар мана çак

усалран. Хĕтар... (Тăма тăрать те каллех ӳкет.
Тĕттĕм урамра шăнса хытма пуçланă çамрăксем хăранипе кускалаççĕ, пĕрре пĕр еннелле, тепре тепĕр еннелле чупаççĕ).

ИРА Ай-уй.. Ĕненетĕп, темĕн те курма пулать, тупăкран вилĕ чупса тухрĕ вĕт. ( Пуç çапма сылтăм аллине çамки çине хурать те сулахай аллипе чĕрине тытса ӳкет. Вилнĕ пек тăнне çухатать.. Хул хушшине хĕстернĕ алă ĕçĕ юр çине ӳкет, катанпирне çил вĕçтере пуçлать... Çил улани, шавлани хаярлансах пырать).

ЛЕНА Тăр – çырлах. Тăр-Торă. Пĕр Торă. Ан пăрах пире. Ан хăрат пире. Сыхла. Эпир, çамрăксем, улаха выляса кулма çеç каймастпăр, акă алă ĕçĕ те пур. Çаплах. Сыхла. Упра, Торă, пире пур усалсенчен.

ХУРАЛÇĂ Камсем унта шавласа çӳреççĕ?

ÇАМРĂКСЕМ Питĕ хытă хăрарăмăр-çке.

ХУРАЛÇĂ Мĕнрен?

ÇАМРĂКСЕМ Ăна хамăр та калаймастпăр-çке.

ХУРАЛÇĂ Хальхи пек хам та нихăçан та хăраман. Тем вилĕ чĕрĕлчĕ-ши?

ÇАМРĂКСЕМ Мĕ-ĕн?

ХУРАЛÇĂ Ан шавлăр-ха. Кунта выртакансем вырччăр. Манпа пĕрле атьăр-ха.

ЛЕНА (Йĕрсе) Ира, тăр, мĕн пулчĕ? Ан хăра ун пекех. Эпир пĕччен мар-иç. Пур усал-шуйттанран хăрасан мĕн пулать.

ХУРАЛÇĂ Хăратать çав, хăратать. Акă Ульяна та пурăнмалличчĕ. Виççĕмĕш ачине çуратаймасăр вилсех кайнă. Халь хăй хăратать. Пурнăç усалланать. Вилĕсем хăратма пуçласан, пурнăç усалланассине пĕлтерет вăл. (Чиркӳре çутă шурăмпуçĕ пек çуталать те ача-пепке сасси илтĕнсе каять. Хăранипе пурте: кам куçне, кам хăлхине, кам... мĕн пĕлет, тепри тепĕрне... ярса тытаççĕ).

СЛАВА Вăт тĕлĕнтермĕш! Мучи ача çинчен каларĕ те ача сасси тухрĕ. Тĕлĕнмелле.
ХУРАЛÇĂ Ача макăрни илтĕнмеллеччĕ те... анчах Ульяна вăй çитерееймерĕ, Çӳлти Турă васкасах илес терĕ-ши? Ыр çынна юрататъ теççĕ. Турри те, мурри те юрататъ пуль ун пек чипер хĕрарăма (Сăмсине шăлкаласа чĕтресе илет). Самаях сивĕ вара (Ача сасси илтĕнсе каять).
МАНАШКА чупса тухать: Ăçта ман хĕреç, ăçта татăлса ӳкрĕ. Хĕреç çукки мĕн тăвать, куçа ача курăнать. Тĕлĕрсе кайнă вĕт вата супнă. Хĕрç ăçта ĕнтĕ ман?(Хĕреçĕ хăйĕн çинчех пулнине асăрхать те) Ак тамаша!.. Хам çумрах-иç. Мĕн амакĕ пулчĕ ку? Хăранипе çапла çухалса кайрăм-им?
ХУРАЛÇĂ Мĕн паян пурин çумне те усал çыпçăнать. Кӳршĕри ялта тăваршăн çынна вĕлернĕ терĕç. Çапла иккен усал çӳрет. Çын çынна улталама, курайми пулсан, вĕлерме пуçласан, тăван тăвана пĕлми пулсан, ырри патне пымасть пурнăç. Унта усалсем хуçаланма пуçлаççĕ.
ÇАМРĂКСЕМ (Ача сасси илтĕнет, майĕпен шăвăнкаласа) Атьăр каяр кунтан. Килсене вĕçтерер.
МАНАШКА (çамрăксене асăрхаса) Тĕрĕс, эпĕ те юлмастăп.(Тепĕр манашки тăрать) Эпĕ те сирĕнпе пыратăп. Кунта чиркĕ тавра усалсем чупма пуçларĕç.
ЛЕНА ( Ирăна тыса тĕккелет, аллисене тытать) Юн таппи ĕçлет пек. Ира, тархасшăн тăна кĕр.(Куçне ерипен уçакан хĕр ача сассине илтет те каллех тăнне çухатать).
ЛЕНА Тем пирĕн каччăсем хăраса ӳкрĕç.
КАЧЧĂСЕМ Хăрăн. Кун пекки халиччен курман.
ЛЕНА Ира ланчăрах кайрĕ. Ӳт ăшши çеç юлчĕ пулас.
МАНАШКĂСЕМ Тур çырлахтăрах. Санран асли никам та çук. Эсĕ пулăшнипе пурăнатпăр. Пулăш, ан пăрах. Ӳксе сăх сăхаççĕ.
ХУРАЛÇĂ Каччăсем, тытăр, чиркĕве илсе кĕрер.
КАЧЧĂ Мĕн тытмалли, Слава пĕччен илсе кĕтĕр, эпир киле каяр.

ЛЕНА Пуянсен чухӑнсенчен тарасси ҫав. Ёҫлеме кӑна кирлӗ эпир сире. Эпи карчӑк каланӑ тӑрӑх кӗҫех пурнӑҫ улшӑнмалла-ха. Ун чухне вара эпир те ҫын шутӗнче пулмалла тет.
КАЧЧӐ Ха!-Х! Ан пакӑлтат. Ун пекки нихҫан пулман, пулма та пултараймасть.
ХУРАЛҪӐ Ҫамрӑксем, эсир кайран тавлашӑр, халӗ каҫ пулнӑ: сӑмах ҫине чӑх сыснӑ.
КАЧЧӐ Илтрӗн-и?!
ЛЕНА Пирӗн сӑмах ҫине сысмаҫҫӗ, хамӑр ҫине сысмасан. Акӑ Ирӑна та тем пулчӗ. Эс, пуян, култӑн унран. Сан кулса пултӑр. Пулӑшасси ҫук.
КАЧЧӐ Эпӗ сана вара яланах пулӑшма хатӗр. УН пек ан кала.Кӳр, хам йӑтса кӗрем.
СЛАВА (пуяна тӗртсе ярса) Ан ҫулӑх ман... сав... чиперӗҫӗм Ира ҫумне.
КАЧЧӐ Юрать. Пымӑп.
ЛЕНА Ира амӑшӗ патне чупмалла пӗрин. Юн таппи каллех ҫухалчӗ.
ХУРАЛҪӐ Вилсе кайма ан парӑр. Пӗтме ан парӑр.
ЛЕНА (йӗрет) И–ИИ–ИИ –Р–Р–А–А!!!
ХУРАЛҪӐ Чиркӗве илсе кӗрер. Манашкӑсем те паян чиркӳ ҫыннисем пек мар, унтан тухса тараҫҫӗ.
МАНАШКӐСЕМ Паян эпир мар, унта пачӑшкӑ та кӗмӗ. Вилӗ чӗрӗлчӗ е усал вӑй вӗҫет унта.
СЛАВА Ирӑна килне илсе каятӑп. (Ҫамрӑксем тухса каяҫҫӗ. Юлнисем пуҫ ҫапаҫҫӗ)
ХУРАЛҪӐ Тӗрӗс. Тӗрӗс. Кайӑрах. Е тата пурне те ямалла марччӗ.
МАНАШКА Мӗн тен? Ҫав ҫамрӑксене шанмалла-и? Мӗн тума пӗлеҫҫӗ вӗсем?Тен, вӗсене пулах нуша куратпӑр халӗ те. Тем тунӑ-ха. Те чиркӳ ҫумне ларса шӑнӑ. Кам пӗлет вӗсене. Шанса пӗтер. Турра ҫавсемех ӗнтӗ

кӳрентернӗ. Кайччӑр. Тьфу. Таси паха-иҫ.
ТЕПӖР МАНАШКИ ҪАПЛА, ҪАПЛАХ.
ХУРАЛҪӐ Халь мӗнле кӗрес тен-ха?
МАНАШКА Ак (тӗллесе)чуптӑр пачӑшкӑ патне. Вӑл ҫамрӑкрах. (Лешӗ пуҫне тайса) Итлетӗп.(Тухса каять).

3 КУРĂНУ

ХУРАЛÇĂ (Чиркӳне малтан кĕрет) Мĕн куратăп?.. (Чиркӳри тупăкра ларакан хĕрарăм ача тытнă). Мĕн тăвать Ульяна?Кăвапа пыршине шăлпа çыртса татать. Вăт Торă пурах çылăхсăр çын валли. Ульяна чăн чĕрĕлнĕ.(Сăх сăхать).

МАНАШКА Хуп çăварна! Мĕн калаçан . Сан куçна курăнать çапла. Ун пекки халиччен пулман. Ма вара сан куçна курăннине пирĕн ĕненмелле-и?

ХУРАЛÇĂ Торă усалтан хăтартăр, эппин. Эсĕ мĕн куратăн вара?

МАНАШКА (Куçне хупнă хыпашласа утать) Эпĕ-и? Эпĕ нимĕн те курмастăп.

ХУРАЛÇĂ Курмастăп... Эпĕ мĕн аташа пуçларăм-и вара хăранипе? Ак тамаша . Пулманни пулать. (Пуп кĕнине курсан) Тавах Турра. Эсĕ пулмасан эпĕ ухмаха тухаттăм. Халĕ хама ухмаха тухман тесе ĕненме пултаратăп. (Пуп еннелле çаврăнса) Килтĕр. Çитрĕр пулать çĕр хута. Тавах.

ПУП Эсĕ мĕн туса çӳретĕн кунта? Ăçта санăн вырăн. Кай çавăнта. Кунта-мĕн хуралçă йĕрке тума пуçланă-им? Марш! Эпĕ тепре пăхнă çĕре ан курăннă пултăр!

ÕУРАЛÇĂ (Шăвăнать, хăй тем мăкăртатать).

ПУП (Манашкăна) Эсĕ усала куртăн пулĕ тесе, çак таранччен ĕненмесĕр утрăм сан хыççăн.(Çӳлелле пăхса) Ах, Турăçăм, ан пăрах пире. Çӳлти Турă, пирĕн паян тĕлĕнсе каймалла çылăхлă кун. Кутăнла ĕç пырать ялта. (Тупăк еннелле пăхса) Илтме хăрушла, пăхма хăрамалла, калама пĕлмелле мар ... Мĕн япала ку? Пурне те чĕнмелле е çук? Хам та нимĕн те пĕлместĕп.

МАНАШКА Ах, Торăçăм. Ах, Торăçăм( Темиçе хутчен сăх сăхать). Чиркӳ старостине чĕнмелле-ши?

ПУП Чĕн-ха, чĕн.

МАНАШКА (Тухма тăрать те Асли кĕнине курать).Килет.

Хǎй килет.
(Ульяна ачине чӳркеме тупăкри çиттине туртать).
АСЛИ (Пăхма хăраса). Ку мĕн япала? Ку мĕне пĕлтерет? Мĕн тăвăпăрах кун пек ырă мар ĕçпе? Ку ырра марах.(Шăппăнрах) Ĕлĕк те пулнă тет ун пекки, анчах вĕсене пурăнма паман. Чукмарпа çапса вĕлернĕ.
ПУП Мĕн калçан? Юлашки çула кĕлĕ ирттернĕ пулсан, вĕлерме , тен, юратчĕ. Эпĕ вара отпевани туман. Вилĕ кĕлине ирттермен. Чунсăр ялта шăтăк та алтăнман. Ăна вĕлерме сăлтав та çук. Турă ун майлă. Ĕнер пĕри те пĕр кĕреçе ăсса шăн çĕре тапратайман. Хресчен калшлĕ, пĕр шит тарăнăшĕ те шăтăк алтайман.
АСЛИ Шутласан, шутламасн та, вĕлермелле. И вçо.
ПУП Эс асли, анчах кун пек йышăнса Торра хирĕç кайни пулмасть-и?
АСЛИ Çакна калама пĕлместĕп çав. Тĕрĕс пуль те, анчах ку япала та ырра марра.
МАНАШКА Тата тепĕр вилĕ пулĕ. Вилнĕ çын чĕрĕлни, паллах , ырра марах.
ПУП Ан аташăр-ха. Епле вĕлерес тетĕр? Чухăнах та мар вĕсем. Чухăннине хĕрхенмесен те, анчах ку çемье чиркӳне те самаях тупăш парать. Аларманĕ те пур. Хамăрах усă куратпăр. Мĕнле шутлатăр?
МАНАШКА Мĕн калаçса тăмалли. Чукмарпа çапмалла та вĕлермелле. Çăва шăтăкне алтма кайнă ĕнер.
ПУП Кайнă , алтайман. Ку мĕне те пулин пĕлтерет.
САСĂСЕМ ( Хура халăх васкасах кĕрет) Пурте: Вĕлермелле! Çапса вĕлермелле! Унсăрăн яла усал çыпçăнма пултарать. Торă, çăлтăрах...
САСĂ Шăтăкне паян чаватпăр, ялĕпех каятпăр.
САСĂСЕМ Çапла! Тĕрĕс!
АРçЫНСЕМ (Чукмарсем илсе кĕреççĕ те çӳлелле çĕклесе) Çапас! (Çав вăхăтра çуртасем сасăпа шатăртатаççĕ).

ПУП Тăхтăр-р-р!!! Эсир ырă мар шутланине çуртасем те сисрĕç. Пăхăр эсир Турăшсене. Турă амăшĕн ачи тăрăх куççулĕ юхать. Курăр! Курăр. (Турăш çине тĕллесе тăрать). Кам ирĕкĕпе чĕрĕ çынна вĕлеретпĕр?
( Чиркĕве кĕрсе тулнисем шăпах пулаççĕ те ерипен пĕрерĕн пуç çапса тухса шăвăнаççĕ).
АСЛИ (Çурта тытнă, пуç çапать) Эппин, çак хĕрарăмăн пурăнмалла. Пулăшăр Ульнана тупăкран тухма.
МАНАШКА (тупăк еннелле утса) Тĕрĕсех тăватпăр-ши? Тупăкри çынна çĕнĕрен пурнăç парса хамăра йывăр тумастпăр-ши?
Çамрăк МАНАШКИ Эпĕ хам пирки шутламастăп. Ульяна ырă хĕрарăм, пурăнтăр.
МАНАШКА Хуп çăварна!
Ç. МАНАШКА Тĕшмĕш хыççăн кайса çынна вĕлерсе хумалла-и вара? Икĕ чуна çĕнĕрен чун кĕни япăх-и вара вăл?
ПУП Çитĕ сире. Шăп. Таса вырăна варалар мар. Хамăр çылăхлă пулни те çитĕ. Вырăна варалар мар. Ку пирĕн тасалмалли вырăн.
Ç. МАНАШКА Кĕркури атте, эсир тĕрĕс калатăр. Тĕрĕс тăватăр. Вĕлерме юрамасть. Ялти çамрăксем те курнă вĕт чĕрĕлнине.
МАНАШКА Ульнаран ачине туртса илет) Кӳр кунта.
УЛЬЯНА (Пăшăлтатса вăйсăррăн) Памастăп. Вĕлерме илетĕр эсир. Эпĕ илтрĕм.

МАНАШКА Вӗлерекенсем тахҫанах кайнӑ. Кам вӗлертӗр сире халь. Эпир сире пурнӑҫ паракансем.
МАНАШКА Кӳр-кӳр ачине. Кам-ха унта сан?
УЛЬЯНА Хӗр. Хӗр ача.
Ç. МАНАШКА Соня ҫуралнӑ. Соня. Ҫавӑнпа нумай ҫывӑрнӑ вӑл.
МАНАШКА Мӗн пакӑлтататӑн ара эсӗ?
Ç. МАНАШКА АРА нумай ҫывӑракана соня теҫҫӗ вӗт.
МАНАШКА Ку тӗрӗс. Эпир ватӑсем тӳрех чухламастпӑр ҫав ӑна. Апла эсӗ ятне те тупса хутӑн пулать.
Ç. МАНАШКА Ятне хӑйсем хурӗҫ-ха. Унччен халь вӗсен ураланмалла. Сывлӑхӗсем самаях тарнӑ ӗнтӗ вӗсен иккӗшӗн те.
МАНАШКА (Тупӑкран тухма пулӑшса) Халӗ ӗнтӗ эсир, Ульяна, тепӗр ҫӗр ҫул пурӑнатӑр.
УЛЬЯНА Ӑҫта эпӗ? Нимӗн те ӑнланмастӑп. Тӑнран кайнӑ- ҫке эпӗ.
МАНАШКА Халь ӗнтӗ веҫех йӗркеллӗ пулать. Хӗр ачин ячӗ те пур. Соня. Аван ят. Атя, тӑр. Тепӗр пӳлӗме тухар. Ачине те чӗчӗ ӗмтермелле.
УЛЬЯНА Тавах сире.Тухар. Тав Турра. Ачана ҫӑлса хӑварнӑшӑн.

И-49079
Национальная библиотека
Чувашской Республики

4 курăну

Чиркӳ умĕнче.

ХУРАЛÇĂ Тавах Торра. Виле пытарас хуйхи пĕтрĕ, ача çăвас савăнăçпа улшăнчĕ. Питĕ савăнмалла (кулать).

АРÇЫНСЕНЧЕН ПĔРИ (Сăх сăхса) Тор ан пăрахтăрах та, çапах çак шутлаттаракан япала. Ахаль тăрăм марах ку.

ТЕПРИ Нумай калаçатăр. Сăмах вăл турпас пекех. Мĕн чуль касан, çавăн чуль тухать. Камăн мĕн шут: пĕрисем чукмарпа вĕлересшĕн мĕн сывлакан икĕ чуна, теприсем чĕрĕлнĕшĕн савăннипе тăрăнса кайиччен ĕçсе юласшăн.

ХУРАЛÇĂ Ун пекех ан кала ĕнтĕ. Эпĕ те çынах. Сан пырна типĕ тунăшăн эпĕ айăплă мар, ман пыра йĕпе тунăшăн эсĕ айăплă мар. Кашни хăй пурăнать хăйне пĕлнĕ пек (Махорка чĕркет).

АРÇЫНСЕМ Тĕрĕс. Питĕ тĕрĕс каларăн. (Теприсем те пĕрле туртмалли кĕтсе илесшĕн). Туртса ярар.

ВИÇÇĔМĔШĔ Пире нимĕн те кирлĕ мар. Каяр эпир кунтан.

ЫТТИСЕМ Тĕрĕс. Каяр. Атьăр.

ПĔРИ Тăхăтăр-ха, Кĕркури атте килет. Кĕтсе илер.

ПУП Эсир-мĕн, итлĕр. Тупăка татса вакласа çунтарăр. Çын-мĕн – ялĕпех пĕличчен.

ХУРАЛÇĂ Ялĕ-мĕнĕ пĕлнĕ-ха та. Çывăракансем кăна пĕлмеççĕ пуль.

ПĔРИ Энтри те пĕлмест.

ПУП Чăн та. Вĕçтерĕр халь унта, савнăç – хыпар çитерĕр! (Арçынсем: пĕрисем тупăка вакласçĕ, теприсем унран тухнă вутта йăтаççĕ. Ыттисем васкасах тухса каяççĕ).

ХУРАЛÇĂ Эпĕ те Энтри патне вĕçтерем.

ПУП (Тытса чарать) Э-Э... Эсĕ ăçта-ха. Карланкă чӳкеме вĕçтересшĕн-и? Çу-ук. Санăн вырăн кунта. Ниçта та каймастăн!

ХУРАЛÇĂ А-а эп-п мĕ-ĕн-н ахаль çеç. (Хăй пуçне пăркаласа пачăшкăна хыçалтан чышкăлать. Сухалне тытса нимĕн калама аптăраса тăрать те)

Çаратакансем паян килмеççĕ.
ПУП Эсĕ-мĕн, хăçан килессине те пĕлнтĕн-им?
ХУРАЛÇĂ (Пытанкаласа) Эпĕ-мĕн ун пек каласшăн марччĕ.
ПУП Ăнланмалла. Урăххи çинчен шутланă чухне сăмах мĕне пĕлтернине те манса каякан пултăн-им?
ХУРАЛÇĂ Кĕркури атте, ун пекех ан кала ĕнтĕ.
ПУП (Хăй тимлесех кĕлĕ кĕнекине уçса хупать, тем шырать, тĕллĕн-тĕллĕн вуласа пăхкалать). Ĕçне тума вăтанмастăн, сăмахне- ятне илтме вăтанатăн. Ай, еплерех вăл. Пăх та кур. Ку маншăн питех те интереслĕ. Апла пулсан сана вăл усал ĕçрен пистерме те пулать. Тăрăшса пăхăп.
ХУРАЛÇĂ (Хăраса) Кирлĕ мар, Кĕркури атте, кирлĕ мар. Шĕвексăр пурнăçа ăнланмастăп. Вăл – манăн пурăнăç.
ПУП Юрать. Эп ăнлантăм. Сана юсамалла, иккен.
ХУРАЛÇĂ Ай, кирлĕ мар. Теме тесен те кирлĕ мар.
ПУП Кала-ха, эппин, ку сан мĕнпе çыхăннă, эсĕ çын пек пурăнас мар тени?
ХУРАЛÇĂ Ку маншăн çапла курăнать. Эпĕ çакăн пек маскăпа çӳрени мана пурăнма пулшать. Акă ăнлан мана. Эпĕ ĕçсен, пачах урăх çын. Манăн çемйе çук ун чухне. Манăн ĕçлес килесси те таçта кайса кĕрет. Пуçра-чунра ах, ла-а й-ăах (Хырăмне йăвалать). Арăмпа çывăрас хуйхи те çук. Урă чухне эп ялан ун çинчен шутлатăп. Арăм вара мана ĕçлесшĕн мар наянланса çӳрен тесе патакпа перет.
ПУП Чăнах, хуйхи пы-ысăк вара сан (Кулса). Кун пек пулсан ĕçмеллех. Хĕ-хĕ-хе. Мулахай, эс. Вăт кам? 40 çула çитнĕ, пурăнма вĕренеймен. Камăн вĕрентмелле сана? Аннӳн сĕчĕпе ăс пухса илеймен эсĕ. Пĕрех ман сана вĕрентме мар, юсама тивет.
ХУРАЛÇĂ (Хăраса) Мĕн тума пултаратăр?
ПУП Тепре ӳсĕр курсан, сана хам пĕлнĕ пек ю-асат...ăп.
ХУРАЛÇĂ (Пĕшкĕнсе юнашартарах тăрса) Мĕнле?

ПУП  Халь каламастăп. Ĕçсен куран...
ХУРАЛÇĂ  (Шăвăнса тухса тарать).
ПУП Мĕн чĕнместĕн, кукша этем? Ăнлантăн-и?(Çаврăнса пăхать)  Э-е, эсĕ те çын пулсан, Раççей тахçанах этем валли патшалăх пулмалла. Сирĕн пеккисенчен мĕн кĕтен? Ĕçме те шăвăнма çеç пĕлетĕр çав. (Пуçне хыçать). Çыншăн шутласах пуçра çӳç шуралчĕ, пуçра турапа турамалăх çӳç те юлмарĕ. Эх-хе-хей. Мĕнле пурăнас темеççĕ-ши? Ачисем çинчен шутласси пирки каламалли те çук, енчен те хăй çинчен шутлама пĕлмест пулсан...(Ал сулать).Тьфу! тепĕр тесен. кам çинчен шутлатăп эпĕ.

5 курăну

Энтри килĕнче кулянса ларакансем, выртакансем шаккани илтĕнсе кайнипе тăрса лараççĕ.

ЭНТРИ Мĕн амакĕ ку? Этем пек мар хăрушла шаккать. Карчăк хăратма килмерĕ-и? (Кăмакаран кĕл илет те алăк патне сапса ярать). Ак сана! Вĕри кĕл парам! Ан хăратса çӳре. Хăвăн юратнă çынна çапла хăратмалла-и?Эсĕ мĕн хăратса çӳрен кунта? Эп санпа ни усал пулман. Ха вăл, явăл е шельмă темелле ĕнтĕ сана. (Çав вăхăтрах)
АРÇЫН (Шакканă май урисене таккать, кĕлне тумтир çинчен силлет) Ай-уй! Энтри пичи, мĕн хăтланатăн эсĕ? Мана кĕл айне турăн вĕт.
ЭНТРИ Ку эсĕ-çке тăванăм, . Эпир çывăрма выртнă. Эсĕ мĕн туса çĕр хута çӳретĕн? Килтĕн пулсан кĕр ĕнтĕ.
АРÇЫН Эп п-пĕ-м-ĕн-м-ĕн-мĕн...
ЭНТРИ Мĕн чĕлхӳ çĕтрĕ-им?
АРÇЫН Çу-ук-çу-ук-çу-у-у-у-ук...
ЭНТРИ Мĕн, кала тата мĕн калама килтĕн-и?
АРÇЫН Ах-аа-ахх-а-ах-ха...
ЭНТРИ Мĕн пулнă сана? Нимĕн те ăнланмастăп.
АРçЫН Ха-а-ль-ха-аль -ха-аль ...
ЭНТРИ Тăванăм, эсĕ тем тĕлне пулнă пул-иç. Эсĕ мĕн калама килнине эпир пĕлеймĕпĕр-и?
АРÇЫН Аха–аха-аха...
ЭНТРИ Эсĕ мĕн калас тенинчен пуçла эппин калама.
АРçЫН Юр-ать-ать-ать-ать...
ЭНТРИ Эсĕ юрать тесе ан кала. Тӳрех пуçла.
АРÇЫН Ăнлан-тăм-тăм-тăм...
Энтри Пĕтрĕмĕр. Мĕн ку? Пуçла мĕн каламаллинчен.
АРÇЫН (Пуçне сулать) Со-о-ня-ня-ня…
ЭНТРИ Сони-мĕн тата? Пĕтрĕ пуçах. Ăçта мĕн курнă вара эс ун пек хăрама? Кала! Тарăхса çитет те тытса силлет).
АРÇЫН (Хăранипе) Ульяна инки чĕрĕлчĕ те Сони ятлă хĕр

ача çуратрĕ.

ЭНТРИ Ку этем тăнран кайнă. Пирĕн ыран йывăр кун, халь канмаллаччĕ пирĕн, эсĕ чăрмантарса тăратăн.

АРÇЫН Энтри мучи, эпĕ хăранипе хам çавăн пек пулса ларнине те симен. Тавах сана силленĕшĕн.

ЭНТРИ (Тĕлĕнсе пăхать) Ĕненмелле-ши ку çынны е çук? Вăхăтлăх пăтранакан пулнă-им эсĕ?

АРÇЫН Çук. Пĕтĕмпех йĕркеллех. Халь тăнпах калаçатăн-и? (Ыттисем ун тавра сырăнаççĕ, аллисене сулаççĕ Энтри умĕнче).

ЭНТРИ Çук-ха. Сулмалла мар-ха. Тем манăн çынпах тем пулнă. Ахальтен килмен çĕр хута. Халь ăнланмалла кала-ха.

АРÇЫН Юрать-юрать-юрать.

ЭНТРИ Пуçланчĕ.

АРÇЫН Çук. Пуçланман. Ульяна чĕ-ĕрĕлчĕ! Ача çуратрĕ. Ачине час çуралманран, нумай çывăрать тесе, манашка Сони ят пачĕ–ĕ!!!... Ăнлантăр-и?!

ЭНТРИ Эсĕ кăшкăрса хăратса пăрахрăн та,халь ăнлантăр-и тесе ыйтатăн.

АРÇЫН Ульяна чĕрĕлчĕ тесе юрласа кăтартам. (Юрлать). Ульяна чĕрĕлнĕ те ача, хĕр ача çуратнă. Вĕлерес тесен, Кĕркури атте эсир чухăн мар тесе вĕлерттермен.

ЭНТРИ Эсĕ-мĕн, тăванăм, чипертерех пул-ха. Тепĕр хут васкамасăр кала мана чĕререн, хăлхаран...

АРÇЫН Ульяна- инке- чăн -чăнах,(сăх сăхать) Туршăн та, чĕрĕлчĕ те ача çуратса пачĕ. Халĕ ăна манашкăсем тупăкран кăларса тепĕр пÿлĕме илсе кайрĕç. Ачине хĕр пулнăран, нумай çывăрнăран Сони ят пачĕç.

ЭНТРИ Мĕн илтетĕп, Турăçăм. Эсĕ пурах, чăн пурах. Мана хĕрхентĕн. Эс куратăн эпĕ никама та усал туса курманнине. Тавах сана, Турăçăм. Çапах та хам куçпа хам курмасăр ĕненме йывăр–р... Атьăр каяр чиркĕве. Икĕ çынн-на... илсе килер (тухса каяççĕ).

6 курăну

Чиркӳре. Унти пĕр пӳлĕмре Ульяна ача тытса ларать. Васкасах Энтри кĕрет те, арăмĕ умĕнче чĕркуçленет.

ЭНТРИ Апай-апай, мĕн ку? Мĕнле савнăç ку чĕрене шăнăçайми. Шыв çине çырса хунă телей кăна мар ку. Торăçăм, Ульянаçăм, мĕнле телей (йĕрет).

Ульяна Турра шĕкĕр. Туррах. Урăх вăл тĕнчерен никам та илсе килеймест вăл пулмасан. Тав Туррах.

ЭНТРИ Вăт порнăç. Кам шутлама пултарат ь кун пек япалана? Каласан ĕненмелле мар, карчăкăм (аллипе тытса ыталать, тĕрлĕ вырăнтан хыпашлать) Эсех-и, савнă мăшăрăм, мăшăр çунатăм? Ĕненес те килмест вĕт. Ухмаха ернĕ тĕнчере çӳретĕп вĕт – эсĕ вилнĕрен вара çапла. Кун хыççăн чăн тем те пур тенине ĕненме пулать. (Ачи патнелле туртăнать). Ах пĕчĕк пепкеçĕм, пĕчĕкскер пуканем, епле сана йывăр пулчĕ пуль çак çут тĕнчене килме? Кил-ха, кӳр тытам сана алла. (Ачана алла илсе) Пирĕн пĕчĕкçĕ чиперĕ-ĕм, Сониçĕ терĕç-и-ха?

УЛЬЯНА Энтри...(Лешĕ илтмест). Энтри-и...

ЭНТРИ А. А. Эсĕ чĕнтĕн-и, карчăкăм.

УЛЬЯНА Чĕнтĕм-ха та, эсĕ илтместĕн. Ялта тем тепĕр калаçаççĕ пуль тесе хăраса ларатăп (Япăх пулса илет те тăнне çухатса, сак çине тайăлать).

ЭНТРИ ÇОК! Çо-ок. Памастăп. Сана вилме памастăп. Ульяна!.. (Тăна кĕмен пирки кăшкăрса ярать). Çок! Юхакан шыв çине çырса хунă телей пулчĕ ку-у! Тухтăр! Тухтăра чĕнĕ-ĕр-р!!! (Чупакакансем, васкакансем, кăшкăракансем урлă та пирлĕ пĕр-пĕринчен иртсе каяççĕ. Ульнана илсе тухса килне леçеççĕ. Энтри нĕшлесе утать). Шыв çине çырса хунă телей çеç пулчĕ пуль çав. Шывпах юхса кайрĕ ĕнтĕ ку савнăç. Çапла усаллин юхасчĕ. Хурлăхĕ шывпа юхмасть-ха. Пĕтĕм нуши сырăнса çынпа пĕрле утать те утать, телейĕ хыт юхакан шыв пек самантпа çеç курăнса

юр пек ирĕлсе пĕтет. Çапла ĕнтĕ пирĕн пурнăç. Ача çуратаканăн хăрах ури тупăкра тесе ахальтен каламан. Ман арăм вара кĕлеткипех тупăка кĕрсе выртрĕ. Юрать-ха Турри пур. Унсăрăн нимĕн те тăвайрас çук. Вăт мĕнле, чунсăр ялта çĕре хăпăтма памарĕ. А Турă кутăнла ĕç юратмасть, ништо чавма памарĕ.

УЛЬЯНА АХ... Ăçта эпĕ? Ăçта илсе каятăр мана-а?

ЭНТРИ Ульяна! Чунăм... Ах, ман...

УЛЬЯНА Энтри, эс кунтах-и? Ăçта ман хĕр ача?

ЭНТРИ Эсĕ ун пирки ан пăшăрхан, шăнтасран хăйĕн кĕрĕкĕпе чĕркесе Сонине пирĕн киле илсе кайрĕ пăяхаму.

УЛЬЯНА Юрать-а эппин... Киле çитесчĕ.

ЭНТРИ Çитрĕмĕр. Тавах Турра.

(Вĕсем кĕреççĕ,шаккакан тухать. Çав вăхăтрах аслати кĕрлесе илет). Мĕн пулчĕ ку? Ырра марах. Çуллахи пек кĕмсĕртететрĕ, ырра марах ку.

САСĂ Килте пур-и? Кĕме юрать-и? Ман кĕрес.

УЛЬЯНА Ман хыпарпа пуль-иç.

САСĂ Никам та ,ним те хыпарламан. Эпĕ хыпарлатăп.

УЛЬЯНА Мĕнле çын пулчĕ ара ку?

САСĂ Ырă мар хыпар пĕлтерекен.

ЭНТРИ Тата мĕн?! Мĕн чухлĕ ман чăтмалла?

САСĂ Микулай патша вăрçи пуçланнă! Микулай Энтрийĕ эсир-и?

ЭНТРИ Эпĕ-ха.

САСĂ Сирĕн ят тухнă. Ыран ирех кантура çитмелле! (Пўртре сăпка çакаççĕ. Ача макăрнипе пĕрлех ытти ачисем те макăраççĕ. Ульяна та макăрать. Кўршĕ хĕрарăмĕсем макăрса кĕреççĕ те хăйсен упăшкисем çине уртăнаççĕ).

ЭНТРИ Пускилсем, ял-йышсем, ан макăрăр. Эпир макăрни ачасене ырă тумĕ. Пирĕн вăйлă пулмалла, пирĕн ачасне йăпатмалла. Ура çине тăратмалла. Эсир, хĕрарăмсем, сирĕн татах та вăйлăрах пулмалла. Халĕ сирĕн манăн Ульянана пăхма татах та вăйлăрах пулмалла. Арман пур,

укçасăрах тырă авăртăр. Пĕрле пулсан вилместĕр.

УЛЬЯНА Энрти, эсĕ эп сывă мар тесе ил-ха хут, тен, хăварĕç.

ЭНТРИ Ун пек тусан çынсем курайми пулаççĕ. Халăхпа, мирпе тумалли вăрçă-харçăран никам та юлас çук. Арçынна кăмака умĕнче тăма çуратмаççĕ. Пурте кайсан, эпĕ кăна юлас çук, каçар мана, Ульяна.

УЛЬЯНА Сан сăмахран тĕрĕсси тĕл пулман. Юрĕ, эпĕ каçаратăп (Йĕрет).

ЭНТРИ Пускил вăрăм кĕпесем, ан пăрахăр ман Ульянана. (Кашнине ыталаса) Ан пăрах эсĕ те эсĕ те – пурте. Эпир çук вăхăтра та сирĕнпе çăкăр пайланă, хамăр пуян тесе уйрăм çисе ларман. Сирĕнпе пĕрле ĕçленĕ, сирĕнпе пĕрлех пурăнар малалла та.

ПУРТЕ Çапла пултăр, Энтри. Сан пек пуян чун... чухăнра та сахал пулать.

ЭНТРИ Савнăçĕ-хурлăхĕ пĕрле! Ларăр ял-йыш, мĕн пурра çукка пайлар – хурланмаллине хурлантăмăр, халь юлашки кун, тен, пулĕ пĕрле савăнса юлар ыранччен.

ПУРТЕ Килĕшетпĕр. (Арçынсем хăйсен арăмĕсене тĕке-тĕке) Чуп-ха, илсе кил пуштук .

ТЕПРИ Мĕн пуррине илсе кил кунта.( Хĕрарăмсем тухаççĕ).

ЭНТРИ (Аслă ывăлне,Криллене тата Петĕре ыталасан, пепкине илет те мăшăрĕ патнелле утаççĕ. Хăй юрлать):

Эпĕ кайсан мĕн пулĕ-ши Турта тулли ай, Тур лаши...
Мăшăр çунат-ачамсене? Турти тăрăх тарĕ юхать.
Камах пăхса ўстерĕ-ши Ик куç тулли ай, тăвансем...
Куçăм тулли ачамсене? Мĕнле уйрăлса каям-ши?

ЫТТИСЕМ Шăлăпăр-ха ай, килхушши
Шур юр кайса пĕтсессĕн.
Курăпăр-ха ай, ырлăхне
Хурлăх курса ай, пĕтерсен. (Тул çутăлать. Арçынсем кутамкисемпе васкаççĕ, арăмĕсем йĕреççĕ).

2 пайӗ ХУРА КУҪҪУЛЬ

1курӑну. Ҫу. уйӑхӗ. Ӑшӑ та хӗвеллӗ.

Салтак юрри илтӗнет.Ульянасен килӗнче чухӑнсем Криллене салтака ӑсатма пухӑннӑ. Сӗтел ҫинче четвертпе эрех ларать. «Аки-сухи» юрласа сӑра пички пуҫлаççӗ. Ульяна пуҫ ҫапса пичке пуҫламалли кӗлӗ ирттерет. Криллене ял хӗрӗсем ал шӑлисемпе хӗреслеççӗ.

УЛЬЯНА Турӑ пилӗпе Криллен салтак ячӗ тухнӑ ятпа сӑра пички пуҫлатӑп. Турӑ, ан пӑрах пире. Салтака кайса тӗрӗс -тӗкел таврӑнса килме сывлӑх та чӑтӑмлӑх пар ман ывӑлӑма. Урӑх нимӗн те калама пӗлместӗп. Турӑран асли ҫук, эпир санӑн ирӗкре, эсӗ мӗн панине эпир яланах тӳсеме хатӗр. Ан пӑрах, ан айӑпла пире. (Пичкерен сӑра витрене юхтарса илет те унтан пӗр куркине ӑсса Турӑ умнерех «ваттисене» асӑнса лартса парть, кайран хӑй ӗҫет. Унтан тултарса тухать те). Халь ӗнтӗ пурте сӑра куркисене ҫӗклӗр те шаклатса ӗҫсе парӑр. Ывӑлӑм!.. Епле чӑтас ман? Аҫу таврӑнни 7 ҫул анчах. Алли ҫук, сывлӑхӗ те начар, халӗ эсӗ тӗреклентӗн те сана илсе каяççӗ.

ЭНТРИ Амӑшӗ, ҫитет, ҫитет, ан хуҫӑл. Йӗркеллех. Вӑл манран хӑвӑртрах килет, ан кулян. Ак Сони те ӳсме кайрӗ. Анчах пӗчӗкккӗччӗ, чӗрҫи ҫинче кӑна выртатчӗ эпӗ кайнӑ чухне, эпӗ киличчен хӗр пулнӑ.

УЛЬЯНА Ашшӗ, Сони хӗр пулман -ха та. Мӗнле ҫапла лапӑртатас килет. Тӗрӗс тӗкел ӳсни аван.

ЯША (Кӗрет) Лашине, трантасне йӑлтах хатӗрлерӗм. Васкӑр, Крилле, тӑванусем нумай, каҫ пулттипе те пулин ҫаврӑнса килесчӗ.

КРИЛЛЕ Эп хатӗр. Тухса кайиччен эпӗ юратнӑ йӑмӑкӑмпа ташлам-ха. Юрлӑр, ташлӑр, савӑнӑр, тантӑшсем! Пӗрре пурӑнатпӑр, кулянса ывӑнатпӑр, ташлама-юралама вӑтанатпӑр. Йӑмӑкӑм, ӑҫта, манӑн йӑмӑкӑм?

УЛЬЯНА Эпӗ ӑна кӳршӗне чуптартӑм-ха. Вӗсен пӗчӗккипе лартӑр терӗм. Эсӗ ӑна ан кӗт. Кӑштах савӑнкалӑр та

вĕçтерĕр.
КРИЛЛЕ Юрать, аннеçĕм. Эпир халех кайса çавранатпăр, тăвансем кĕтсе те ыванчĕç пăль?
(Ташă ташлакансем тухаççĕ, Крилле ташă карти варринче такмакпать)
Чечек çине лĕпĕш ларать,
Лараймасть чечек ун çине.
Патшашăн кĕрешнĕ вăрах,
Вăл манать эпир пуррине.
ПУРТЕ (Тапăртаттарса ташласа) Ай! Ай! Ай! Лайăх мар.
Чечек çине лĕпĕш ларать,
Лараймасть чечек ун çине.
Кĕрешме патшашăн пăрах,
Çутăр телей пирĕн çине.
ПУРТЕ (Тапăртаттарса ташласа) Хоппа! Аван пулмалла!
ЯША (Крилле турта) Эпĕ тухатăп, хăвăртрах....
КРИЛЛЕ (Юрă пуçлать)
Ай, аттеçĕм, ай аннеçĕм,
Вăхăт çитрĕ, эп те ÿсрĕм.
Сирĕнпеле эп те тÿсрĕм.
Ай, самани, ай, самани!
Пирĕншĕн мар ай, савăнни.
Эсир кăна – чун савнăçи,
Ай, аттеçĕм, ай, аннеçĕм?
Ай, аттеçĕм, ай, аннеçĕм,
Вăхăтпала эп те кайăп.
Самантпала çеç чун – кайăк.
Ай, самани, ай, самани!
Пирĕншĕн мар ай, савăнни.
Эсир кăна – чун савнăçи,
Ай, аттеçĕм, ай, аннеçĕм?
(Вĕсене пырса чăмăртать, куçĕсене шăлать). Ăçта лекĕпши?
УЛЬЯНА ( Саппун вĕçĕпе питне-куçне хуплать).
ЭНТРИ Юрĕ-юрĕ, тăварлă кÿлĕ ан уçăр пÿртре. Тăварлă шывра шапа та пурăнаймасть. Йĕрсен шурри мар, хури çеç тупăнать... Вĕçтерĕр, эппин, Крилле ывăлăм. Килте сансăр, ÿснĕ ачасăр йывăр çĕр ĕçне тума, мĕн тăвăн, чăтмалла. Уçăмлăн васка,ывăлăм.
САЛТАК АЧИСЕМ Атьăр! Тухрăмăр! Туăхрăмăр!

2 курăну

Каç пулса килет. Салтак юрри илтĕнет. Вăрмантан трантас кўлнĕ лаша тулхăрса тухать.

КРИЛЛЕ Иван пичче, мĕн пулчĕ лашана? Ма тулхăрать?

ИВАН Пĕлмес çав, ачам. Çак выăрăна ĕлĕкрен таса мар теççĕ, çаплах-ши?

КРИЛЛЕ (Сасартăк) Курăр-ха! (Пўрнепе тĕллесе) Курăр! Лаша умĕнче пысăк-ысăк çутă куç, пы-ысăк мăйракаллă капан тăрать! Чăн... (Сăнсăрланса каять).

ИВАН Крилле, çырт пўрнўне, çырт!

КРИЛЛЕ Ах, (унтан юнашар ларакан çине таянса каять, вăйĕ пĕтнипе урăх нимĕн те калаймасть). Ах, мана питĕ япăх-çке. (Лаша тепĕр хут ĕрĕхсе каять).

ПУРТЕ Яшук, тыт лашана аванрах!

ИВАН Çăварлăх памаллаччĕ.

ЯША ТР-Р! (Тилхепене туртса тытма тпаланса) Патăм-ха, пулăшмасть. Кам чартăр ăна халь, темрен хăранăскере! Тăр тетĕп. Тăр-р, тăр, манăн шурă Минька. (Лаша тапăртатса кĕçенсе чăрсăрланать те лăпланать). Аван, Минка, Мина-Миня...(Анса ачашлать).

СЛАВА Ахаль те нумай çухалса çўрерĕмĕр. Çĕрле пулса кайрĕ. Киле хăçан çитĕпĕр?

ЯША Мĕн куртăн эсĕ, Крилле? Эпĕ нимĕн те курмастăп.

ЫТТИСЕМ ТЕ Эпир те нимĕн те курмастпăр.

ИВАН Салтаксем, ан шавлăр-ха. Уй-вăрман йĕркине ирттермех тивет пирĕн. Унсăрăн эпир киле нихăçан та çитеймĕпĕр.

ХĂШĔСЕМ Асли каланине итлемеллех. Иван пичче, эсир хăвăр пĕлнĕ пек йĕрке туса çитерĕр.

ЯША Турри пулăшсан, Иван пичче йĕркине йышăнсан, эпир тĕрĕс тĕкелех çитĕпĕр.

ИВАН (Юман патне чĕркуçленсе сăх сăхать, кĕсьери çăкăрне кăларса хăй çыртса илет те юман кутне хурать).

Ватти-вётти тутă çӳрĕр, пире ан асăнăр, эпир сире асăнсах тăрар. Халĕ пире киле çитме пулăшăр. Криллене чипер çул уçса пама ан манăр. (Сăх сăхать те каялла çаврна-çаврăна пăхса лаша еннелле утать).

ИВАН  Атя, Яша, яра пар!

ЯША  Ăçталла халь каймалла?

ИВАН  Лаши халь хăех илсе кайĕ.

КРИЛЛЕ  Минька илсе каять киле... (Аран калать ). Мăнака та курас килетчĕ те, вăл кĕтет ĕнтĕ, чирленĕччĕ тата çитменнне. Вилес пекех тенĕ сăмах та килнĕччĕ тăвансенчен.

ИВАН Апла вăл вилме те пултарнă. Çав чарчĕ пулĕ лашана. Çак вырăнĕ вилĕсен чунĕ пуçтарăнакан вырăн тесе каланине илтнĕ-ха эпĕ.

ЯША Ну, ăçталла вара?

КРИЛЛЕ  Килелле-е... Ы–ывăн-н-тăм эпĕ. Çутă куç манăн вăя илсе кайрĕ пулмалла.

ИВАН  Крилле, апла ан кала-ха. Кун пек пире пăшăрхантаран. Киле çитсен тăван çуртăн стенисем те вăй парĕç ак. Лăплан эсĕ малтан. Ан шухăшла усалли пирки.

КРИЛЛЕ (Пĕтĕм вăйне пухса тăма тăрать те, тăраймасть, ӳкет) Я-ша-а, яра пар килелле.

ЯША  Мĕнле калатăр. Эпĕ хавас килелле кайма та. Ну! манăн тусăм, Минька! Вĕçтер килелле. Авантарах ларăр вырнаçса. Ну!  Атя...(пушшипе лашана çаптарса илет те). Эсĕ ан кӳрен мана, Турлашам. Сан çине усал сиксе ан лартăр тесе çеç çапрăм.

ИВАН  Лаша та кил еннелле аван чупать. Ăçтан пĕлеççĕ тулькăш кил енне?

ЯША  Пĕлмесĕр. Кил шăршипе пурăнакан выльăх ăçтан ан пĕлтĕр. Инкеке сисет пулать те çынран малтан.

ИВАН  Çапла çав. Кирек мĕн пулас пулсан, вĕсем е тараççĕ, е пĕр вырăна кăкарнă пулсан, хыттăн кĕçенсе чарусăррăн тапăртатма пуçлаççĕ. Халĕ те çаплах пулчĕ-иç.

КРИЛЛЕ Яша, асту, лашана çирĕп тыт. Çутă мĕлке каллех тухрĕ. (Çутă куçлă , улăм капанĕ евĕр пысăк çăмламас кĕлетке лаша умĕн чупса каçса каять те çухалать).
ЯША Нимĕн те çук-çке. Вăл халиччен таçта тарса пытаннă-ха. Иван пичу чŭкĕнчен такам хăрĕ.
ИВАН Эпĕ те курмастăп.
КРИЛЛЕ Авă-çке, епле курмастăр?
ЯША Ку – яла çитрĕмĕр. Тавах Турра.
ИВАН Чăнах та.
ПУРТЕ (Алă çупса ярса) У–РР–РР–АА! Çитрĕмĕр.
ПĔРИ Çитессĕн туйăнманччĕ.
(Кил умне çитсен пурте урапа çинчен сикеççĕ).
КРИЛЛЕ (Анаймасть те ăна ыттисем çĕклесе киле илсе кĕреççĕ). АХ, Яша...(урăх сăмах клаймасть).
ЭНТРИПЕ УЛЬЯНА (хирĕç пулаççĕ те) Мĕн ку салтак чупни-и вара санăн, Крилле?
УЛЬЯНА Эрех персе лартни çеç! Нихçан ĕçсе курманнине халь ĕçсе пăхас терĕн-им?
ЭНТРИ Ма култаратăн çынна?
УЛЬЯНА Кун пеккине хам пурăннăранпа ас тумастăп пулас салтак çапла ĕçсе лартнине. Салтак ăсатаканĕсем ĕçни пулкаланă-ха та хутран-ситрен. Анчах питĕ сайра пулнă ун пекки.
ЯША Ăçта вырттарар ăна, Ульяна ап-п-па?
КРИЛЛЕ Ах, пуç ыратать...
УЛЬЯНА Мĕн ку? Эсĕ ŭсĕр мар-иç. Мĕн пулнă сана, ачам? Кунта илсе килĕр, çак вырăн çине вырттарас.
ЯША (тата тепĕр каччӑпа Криллене вырăн çине вырттараççĕ) Тем пулчĕ ăна, çул çинчех аптраса ŭкрĕ вăл. Тем аташа пуçларĕ, куçне те темĕн те пĕр курăнни çинчен каларĕ.
КРИЛЛЕ Ах, аннем, салтăр (хăй тапаланса пăхать) çак пăвса хунă ал шăлисене. Мана ытла та йывăр.

ЭНТРИ Яша, эсӗ васка-ха. Минькине тӑварса яр та, тепӗр лашине кӳлсе тухтӑр патне вӗҫтер.
ЯША Эпӗ халех. Эпӗ васкӑп. Ҫил пек вӗҫтерсе кайса килӗп. Эппин эп Ҫилҫунатне кӳлӗп.
ЭНТРИ Хӑшне саван, ҫавна кӳл. Вӗсем санӑн ачусем, эсӗ хӑвах аван пӗлетӗн вӗсене.
ЯША (Сиккелесе чупас пек, васкасах тухнӑ чухне). Пурӑнмалли майӗ пур. Пӗрне тӑвар та теприне кӳл.(Чарӑнса тӑрать те) Юрать-ха эпӗ ҫак ырӑ ҫынсем патне лекрӗм. Лашисем те хӑйсем пекех вӗт. Ҫемҫе кӑмӑллӑ. Ахальтен каламан: хуҫи епле,выльӑххи ҫапла тесе. Темле ывӑнсан та ман каймалла. Тепӗр чухне тата мана ывӑл тесе калани те вӑй хушать. Пурӑнас, ӗҫлес килет. Манӑн ҫеҫ аттепе анне темелли юлнӑ. Манӑн вӗсем нихҫан та пулман та, ӑна калама чӗлхе ҫаврӑнасшӑн мар. Калас пулсан, хирӗҫ пулас ҫуккине пӗлетӗп-ха та, хӑяймастӑп.(Чупса тухса каять).
КРИЛЛЕ Атте, ан яр Яшӑна.
ЭНТРИ Мӗншӗн?
КРИЛЛЕ Ыратма чарӑнчӗ. Манӑн нимӗн те ыратмасть.
УЛЬЯНА Вара эсӗ хӑвах тӑрайратӑн-и? Тӑрса пӑх-ха. Ура ҫине тӑма пултарсан ҫын пулӑн, унсӑрӑн каламалли ҫук: тухтӑр кирлӗ мар тесе.
КРИЛЛЕ (Тӑма хӑтланать, тӑраймасть). Ах... Вӑй ҫитеймест кӑна, нимӗн те ыратмасть-ха.
УЛЬЯНА Ҫапла ҫав вӑл, чир тени ҫаклансан часах вӗҫернесшӗн мар. Шала юласшӑн чакаланать.
ЭНТРИ Кӑштах выртса кан-ха эсӗ, айванӑм. Кӑна пӗлнӗ пулсан, мӗн салтакӗ чупмалли... Чипер ачана пӗтерсе хутӑмӑр. Халь тата Совет мӗн калӗ? Шӑпах колхоз ячӗ ҫывхарнӑ чухне пулчӗ ку чир-амак.Тем, пире ӗненес ҫук.
КРИЛЛЕ Мӗншӗн апла шутлатӑн, атте? Эпир усал туман.
ЭНТРИ Эпир пурӑнмалӑх пурнӑҫ тунӑран шанчӑксӑр ҫынсем шутланатпӑр-иҫ вӗсемшӗн, ачам.

УЛЬЯНА Яша кайрĕ-ши? Тухса пăхам.(Кайма тăрать те каялла çаврăнса Криллен шăк тазне илет. Шăршлать: пĕрре, иккĕ лартать).Шăрши пĕтнĕ. Ку аван мар. Чĕртейместпĕр.
ЭНТРИ Ан лапăртат! Япăххине ан асăн. Чупсах усалĕ килĕ тата. Хырăмĕ выçрĕпульЯшăн, шарламасть ача. Çитермесĕр тытмасть. Илсе тухса пар-ха эсĕ ăна. Тата унпа тем ан пултăр, ачи лайăх, ĕçчен, хамăр ача пекех ĕнтĕ вăл.
УЛЬЯНА (Тĕпелтен саппунпа çимелли илсе тухать). Сурăх какайне илтĕм-ха ун валли. Вăл усăллă та тутăллă. Çитĕр тăраниччен.
КРИЛЛЕ (Пуçне çĕклесе) Атте, пирĕн сурăх какайĕ çукчĕ.
ЭНТРИ Халь пур. Уйри кўршĕн сурăххине хам пусрăм ара. Пирĕн калчана çисе яратчĕ вĕт.
КРИЛЛЕ (Арантарах) Эсĕ мĕн калаçатăн, атте?
ЭНТРИ Çаплах ара. Уйкуçсенне. Кунĕпе хăваласа тăнран кайрăм та... Кайран вăрмана пушăта кайнă чухне те çавсен сурăххисенех куртăм та тарăхсах кайрăм. Çăка хуппине сўмелли пуртта мĕнле ывăтса янине те сисмерĕм. Çитменнине, сурăха ахаль лекмерĕ, вăйпа пенĕрен-ши? Сурăхăн урине татса пăрахмаллах лекрĕ. Э–й, ачам, чухăнсем халь пуç пулас пек. Чухăн Уйкуçĕн ывăлĕ ялти старостăпа пĕрле ĕçлекенни пулать тет-и?
КРИЛЛЕ Тем илтнĕччĕ, çапларах сăмах-юмах çўрерĕ. Старости – унăн куммăшĕ, тет. Пире пăсташ та турĕç пуль?
ЭНТРИ Çапла пуль çав. Çавăнпа тўрех пĕрре мар, икĕ сурăх паратăн тесе кăшкăраççĕ мана. Эпĕ пĕрне сăмахсăрах хам йăтса кайса патăм-ха, хăйсем айăплине пăхмасăрах хама та айăплă тесе шутласа. Вĕсем эпĕ ыррине кура хăпарсах ларасшăн.
КРИЛЛЕ Ах, ат.. (аллине усса ярать те урăх калаçаймасть).
ЭНТРИ Ывăлăм!!! (Пĕшкĕнсе анать те аллине тытса) Кайрăн-и? Пире пăрахсах кайрăн-и? Карчăк! Карчăк теп!..

УЛЬЯНА (Чупса кĕрсе) Мĕн ара? Ма ун пекех çухăран? Шăрса ярать-им? Тазĕ унтах-иç ара. Пурăнасси те-ем... Пайсăрах сисрĕм-ха: Криллен шăк шăршийĕ те тарнăччĕ, çĕр каçаймасть пулĕ тесех шутларăм çав. Ах, ачам, Криллем (Татăлса йĕрет. Аллипе ывăлĕн куçĕсене хупать те унăн аллисене хĕреслесе тирпейлĕн хурать). Çав Уйкуç тухатмăш тем тумарĕ-ши?

ЭНТРИ Ун пекех тума пултарсан, тахçанах ĕçлемесĕр пуйса кайĕччĕç те. Ĕçлесе те пуйма çук-çке.

УЛЬЯНА Вăл та тĕрĕс. Анчах чăвашăн тĕшмĕшĕ пысăк.

ЭНТРИ Вăйлă ĕненни, темĕн те пултарни мар-ха вăл. Тĕшмĕш кутне – вĕри пăшатан мар-и?!.

УЛЬНА йĕрекенскер: Мĕн туса хутăмăр? Яшăна каламаллаччĕ, ан кайтăр.

ЭНТРИ Çапла. Эп часах. Яша ывăлăм! Яша!..(Тухать).

ЯША (Сасă парса). Э-э. Эпĕ хатĕр! Кайрăм!.. Ну! Сони, хапхана хуп!

ЭНТРИ Ан кай! Ан кай. Крилле вилсе кайрĕ, ачам...(Каялла пӳрте кĕрет çеç, алăкран шаккакан та тухать). Ку ача мĕн халĕ те шаккаса кĕрет. Кĕр,ывăлăм, кĕр, ачам. Крилле вилсе кайрĕ вĕт.

(Çанталăк улшăнать. Пĕлĕт хуралса килет те çил тухса каять. Çавăнтах кĕмсĕртеттерекен аслати çиçĕмпе таврана çутатса-касса каять).

САСĂ Эпĕ кĕрсе тăмастăп-ха! Сире ялта чи малтан раскулачить тумалла тесе йышăннă хута парса хăварасшăн! Ыранах арман пушатма тивет, лашисене тепĕр уезда кайса пама сирĕн Петĕре çирĕплетнĕ. Вăт! халĕ эсир ĕçлесе туман япаласене пире паратăр.

ЭНТРИПЕ УЛЬЯНА Мĕ-ĕн?! Эпир ĕçлемен тесшĕн-и? Эпир сирĕн чухлĕ çывăрса курман, ачам.

УЛЬЯНА Ачасем те кăвак çутлах тăраççĕ. Санăн апу Уйкуç – эпи карчăк çеç ĕçлемен, эсĕ те çавах иккен. Тасал!

Пăсташ туса Крилллене вĕлертĕр. (Йĕрет. Аслати кĕмсĕртетет, çиçĕм çиçет. Çумăр чашлатса çуса ярать).

ПРАСКИ ЮРРИ

Чечек пекех полаймарăм
Хĕвелпеле савăнма.
Поян пике полаймарăм
Ырă корса порăнма.

Хора ĕмĕр конĕ мар,
Чона кышлать кашни кон.
Эпĕр поян çынсем мар
Ырă корса порăнма.

Чечек çеçки полаймарăм
Сăнăмпала савăнма.
Коç хывсан та саваймарăм:
Поян пирки корайман.

Хора ĕмĕр конĕ мар,
Чона кышлать кашни кон.
Эпĕр поян çынсем мар
Ырă корса порăнма.

3 курăну

Тĕксĕм хура пурнăç. Урамра юр çăвать.

Пӳртре. Йывăç кравать çинче аран ахлатса, йывăр сывлакан Энтри выртать. Вăл хăй арăмне темскер калас пек кăчăк туртать те çавăнтах вилсе каять. Сони кил хушши шăлса юрлать: Кам ир тăрать, ăна Турă пулăшать. Эпĕ ирех тăратăп, мана Турă пулăшать.

УЛЬЯНА Çав Энтри каллех пĕр сăмахсенех каласшăн ĕнтĕ. – Эп вилсен ӳснĕ ачасене выçтарса ан вĕлер, çичĕ юта та пулин вырнаçтар, – тет.Апла пулин те, каймасан кӳренĕ. Кайсах пăхам-ха.(Вăл упăшки патнерех çывхарсан мăшăрĕ вилнине асăрхать. Çийĕнчех урайне ӳксе хыттăн йĕрме пуçлать. Петĕрпе Соня чупса кĕреççĕ.)

ПЕТĔР Соня, эсĕ мĕн, ӳкнĕ-ӳкмен юр пĕрчисене шăлатăн-им? Тыт-ха аннене, хăйне те тем пулĕ. Вăйсăрскер вилсе те кайĕ.

СОНЯ Çаплах, пиччем. Атте чирленĕрен вара анне йĕркеллĕн апат çимен тесен те юрать. Унтан-кунтан çырткаланипех пурăнкаларĕ. Авăн çапса килет те, атте çумăнчех ларса ирттеретчĕ. Çапла кулянса вăйран кайрĕ. (Амăшне ура çине тăратаççĕ. Кантăкран юр ӳкни курăнать).

ПЕТĔР Анне, анне теп. Мĕн пулчĕ? Вилсех ан кай-ха.

СОНЯ Эсир иксĕр те вилсен, пирĕн ăçта кайса кĕмелле?

УЛЬЯНА (Сывлăш çавăрса) Тĕрĕсех, ачамсем. Вилнĕ çынпа пĕрле каяс çук. Эп хама тытма вĕреннĕ. Ывăла пытартăм. Халĕ аçуна пытармалла. Ял- йыша пуçтарăр аçуна пытарма. ( Петĕрпе Соня пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ те Соня Петĕр çумне тĕшĕрĕлсе йĕрме пуçлать. Петĕр те куçне шăлать).

СОНЯ Петĕр, мĕн эсĕ манпа йĕретĕн? Эсĕ пысăк каччă, акă пуян Çемен Кĕтерукне илĕн те, пире палламăн та. Кунта вара пире шăл шурри мар, ура йĕрри те тутармăн. Пире мĕншĕн хура куççуль йĕрлет-ши?

ПЕТĔР Çитĕ йĕрсе. Чуп хăвăртрах. Аттене пытармалла.

. Аттене шыва кěртме çывăх тăванне, аппăшне, чěнмелле. Эпир унпа çăвăпăр.

УЛЬЯНА Çук, ывăлăм. Ăна ют-е тăван арçынсен çумалла, арăмěн тата хěрěн çăвас çук.

СОНЯ Халех чупатăп. (Тухать.)

ПЕТěР Анне, сана та çитě йěрсе. Вилнě çынна куççульпе чěртеймěн. Хăв чěрěлнě тесе пурне те чěртесшěн-им? Атте чěрěлсе ларма хěрарăм пек йывăр çын мар вěт. Аттене çума пуçлас ман.

УЛЬЯНА Юрě, ачам, юрě.

ПЕТěР (Чўречерен пăхса) Анне, çынсем пирěн паталла килеççě. Платниксем те пур. Анне, эпě Саньăна питě шеллетěп. Эпě пуян Кěтерукпа пурăнăп, выçмах памě, эсир мěнле пурăнас тетěр?

СОНЯ (Чупса кěрсе хурлăхлăн) Анне, эпě платниксене пур-çук хăмасене кăтартрăм та, вěсем тупăк тума хăма çитмест, терěç. Пуян Çемен памасть-ши? Петěр кайса ыйттăр мар-и?

УЛЬЯНА Петěрěм, ах, кайсамах.

ПЕТěР Паллах, каятăп. Вěсен куçěнчен ытларах пăхăнмалла пулмасть-ши кайран?

Ульяна: Мěнех тăвěç. Каççăр хěрне ниçта вырнаçтараймарěç. Кайман тавара витерме йывăр çав. Таварě хăй хакне тахçанах çухатнă сасă пулнăччě. Тавар кивелсен никамах та кирлě мар çав. Халě сана уйăрас çук хăйсенчен. Аçуна типтерлесен, туя васкатěç. Эсě пěрех килěштеретěн, çавах мар-и сана. Хăванне хăв пěл.

4 курăну. Çулла. Кайăксем юрлаççĕ.
Туй пырать, Петĕр авланать.

ÇЕМЕН Петĕр, эсĕ кĕрӳ темеллĕх çук та, ну мĕн тăвăн, савнă хĕрӳ, сана саваканни манăн хĕр пулчĕ пулсан...
МАРИНЕ Итле Петĕр, мĕнле шуралать ман Кĕтерук: Сирĕн килтисене курнипе çапла вăл.
ÇЕМЕН Аплах кулянмалла пулсан, санпа ĕмĕрлес çук манăн хĕр.
МАРИНЕ Çемен, мĕн вара уншăн кулянан, пирĕн хĕр качча кайса килсен те хĕрех юлĕ, ăна такам та илĕ пĕрех.
ÇЕМЕН Мĕн вара, Марине, çак хĕрарăмсене Петĕр çак килтех усрас тет пулсан, пур парăма паччăр та Кĕтерук киле пытăр пурăнма. (Хăй Петĕре ĕçтерет) Ĕç те, пуçна ан çухат. Пирĕн Кĕтерук пекки ялĕпе те çук.
ПЕТĔР (Пуçне усать, шутласа ларать). Мĕн эсир. Апла мар. Пирĕн килте Кĕтерукпа мансăр пуçне никам та пурăнмасть. Эпĕ Кĕтерука саватăп.
ÇЕМЕН Пирĕн хĕре те юратмасан. Ха– ха –ха... çапла вĕт.
ПЕТĔР Çаплах. Мана ĕçтеретĕн, хăв ĕç-ха (ĕçтереме хăтланать).
ÇЕМЕН (тарăхса) Хамах тытса ĕçетĕп! Хамăн ĕçмелли пур чухне, хамăн апат-çимĕçе алăран парасса кĕтсе лармастăп-ха.
МАРИНЕ Çемен, ан шарла. Итле. Мĕнле юрлать пирĕн хĕр.
КĔТЕРУК (юрлать):

Пирĕн аттен Çĕн арман. (2х)
Виç çул пушă ларсан та
Пăрçа-ясмăк ярас çук.
Ай-хай, савнă Петĕрĕм, (2х)
Тăванăмсем пулмасан та
Сан йăмăкна усрас çук.

Пирĕн аттен Çĕн арман. (2х)
Виç çул çынсем выççан та
Эпир выçă ларас çук.
Ай-хай, савнă Петĕрĕм, (2х)
Тăванăмсем пулмасан та
Сан аннӳне усрас çук.

СОНЯ (йĕрсе килтен тухса тарать.)

ПУЯННИ Пултарулла Кĕтерукăн пуçĕ ĕçлет-ши е урăххи? Çапла юрать-и вара? Хамăн хĕр çапла хăтлансан, çапса –çапсах вĕлеретĕп! Пĕр сăмахпа яла ура çине тăратать, сасипе чан çурать. Ĕçлекен çынна кӳретнтерекен малалла каяймасть. Вăл ĕлĕкрен пыракан пурнăç çапла пулнă. Халĕ те çаплах.
ТУЙ арăмĕ: (йĕкĕлтесе) Çапла кирлĕ те вĕсене, çын ĕнси çинче пурăнас текен çынсене.Вĕсем Кĕтерука кĕтсе ларнă пуль-ха.
УЛЬЯНА Ну, ачам, Петĕр, чипер юл. Сана пур-çука парса хăварма пăхса ӳстертĕм. Пĕтĕм пуян хушшинче савăн, сана вĕсем пăхса ӳстернĕ, çĕрĕ-çĕрĕпе чĕрчи çинче сиктернĕ, кăкăр сĕчĕ çитернĕ. (Хутаç шырать, тупать, çакса тухса кайма тăрать
ПЕТĔР Утах эппин! Мĕн туса тăратăн!...
УЛЬЯНА Кайрăм, кайрăм, сывă юл. (Хутаç çакнипех тухса каять).
Туй арăмĕ Ай – уй, Ай – уй! Мĕн пулĕ – пулать. Туй та саланать.
КĔТЕРУК Ман вĕсем çине пăхас килместчĕ,Петĕр. (Петĕр пăр пек хытса кайрĕ те нимĕн чĕнмесĕр тăчĕ).
Петĕр, мĕн эсĕ? Е хĕрхенетĕн? Е эпĕ çак çурта килнĕрен хăраса ӳкрĕн?
ПЕТĔР (Арăмĕ енне çаврăнать те ăна пăчăртаса тытать).
Чарăн. Эсĕ мана çаплах темĕн те ан кала! Эпĕ ахаль те ухмаха тухманни çеç. Юрататăп, тенĕ эпĕ сана. Анчах ытлашши юратни те ырă патне илсе пымасть. Çак суккăр юратăва пулах йăмăкпа анне килтен... (Пуçне тытать.) Тухса кайăр кунтан пурте. Йалт! Никам юлмиччен! Пурте!..
( Пуян туй чунсăрла арканать. Туйрисем пурте тухса каяççĕ.)

5 курăну

Çуллахи лăпкă каç, кайăксем юрлаççĕ.

ПЕТĔР Эх, пурнăç, пурнăç. Епле пулса тухрĕ-ха капла?... Тĕнчере пуринчен ухмаххи эпĕ. Тăван аннене, йăмăка килтен хăваласа кăларса ятăм. Ăçта-ши халь эсир, мĕскĕнсем? (Ăшĕ çуннипе аллипе кăкăрне хыпалать, куççульне шăлать). Туртма та юрамасть, мур илесшĕ. Йăлтах çак çĕрме пуянсене пула пуçа çухатрăм. Пурăннă пулсан, тен, пурнăç та йĕркеллĕ пулатчĕ, аннепе...йăмăк та... Эх, выçлăх çул пĕтерчĕ çав. Çу тутă пулнă пулсан, ун пек тумастăм. Хамăн та нимĕн те çукчĕ те.

КĔТЕРУК (Йывăр çын апат йăтса кĕрет) Лар çиме, çиессу килет пуль -ха санăн. Мĕн çинĕ пуль эсĕ çак çуртра?

ПЕТĔР (Алне сулать те сĕтел хушшине ларать).

КĔТЕРУК Каллех çав йĕксĕксене аса илтĕн пуль? Пĕрлешнĕренпе сан курнăçна курса йĕрĕнтĕм, хăлха йӳçсе кайрĕ ĕнтĕ çав харампырсен ятне итлесе. Хăв пуçна тата кам çăкрипе усратăн? Çитмест-им?

ПЕТĔР ( сиксе тăрать, тем каласшăн хаярланать, анчах...)

КĔТЕРУК ( Пӳлсе ĕлкĕрет, шăл витĕр). Аттепе пичче чĕрĕ чухне хăраса тăмăп. Лар, вырăнна... Енчен те...

(Алă сулать те вăшт çаврăнса хыттăн утса алăкран тухса каять те çывăрма хывăнать).

ПЕТĔР Эх, анне!..(Йĕрсе ярать.) Ăçта-ши халĕ эсир? Тен выçса та вилтĕр пулĕ. Тен, сирĕн вилĕр урлă та каçса çӳреççĕ. Манăн анне пĕрре те çапла хаяр пулса кăтартман. Усал çын пулман çав вăл. Çук пирки такам ухмахлантарчĕ. Халь тин мĕн тума пултарăп эпĕ? Нимĕнле каçару та пулма пултараймасть кунта. Мĕнле-ха çак пурнăçа ку таранчен ăнланман эпĕ. Эх, эпĕ те. Капла пурăнса пулмасть... Пĕччен телейлĕ пулни çырлахтамасть.

(Çутă вылять. Петĕр умне шурă кĕпеллĕ Варламов коммунист тухса тăрать те çухалать).

Санпа паллашни мана куç уçма пулăшрĕ. Эсĕ çын çав. Çамрăк пулин те, ăнланатăн пурнăçа. Акă эпĕ санран аслă. Усси çук. Чул хуларан терĕн-ха. Мана ма килĕштертĕн? Юлташсем пулăпăр тени те аван маншăн.
Унччен вырăспа юнашар тăрса курман эпĕ. Ай, епле намăс пулĕ мана аннепе йăмăк çинчен ыйтсан... Намăс пулĕ. Манмалла ман ăна. Ç-у-ук. Ун пек çынсем кирлĕ пире. Эпĕ хамăн йăнăша тӳрлетме хатĕр. (Сехет çине пăхать). Çывăрма та вăхăт, манăн вара çывăрас килмест. (Çунакан хăйăва сӳнтерет те пушă вырăн çине кĕрсе выртать. Тепĕр вырăнĕ çинче Кĕтерук çывăрса кайнă. Шаккани илтĕнсе каять).
КĔТЕРУК (Вăранса) Такам шаккать пулас. Ырă çынсемех çĕрле çӳрес çук.
ПЕТĔР Каç кӳлĕм кирлĕ мар çынах çӳрес çук. (Çав самантрах Петĕре Кĕтерук хăваласа çитет те аякалла тĕртсе ярать. Хăй алăк уçма чупать.)
Вăт çапла пуян çынсем, анне каларĕ, Кĕтерук пирĕн куççулĕ çеç мар, сан икĕ куçăнтан тухман куççуле те кăларĕ-ха. Вăт чăнах, çитрĕ, çывхарса килчĕç унăн сăмахĕсем. Вată çын пурăнса курнă, пĕлет. Эх, мĕнле ман ăш варкать-ши, Кĕтерук амăшĕ тарăç ачине мĕнле хĕстернине куртăм та эпĕ çĕр çывăраймарăм вĕт, калама та намăс çынна. Улми улмуççинчен аякка ӳкмест, тет. Халь хама та кăшласа ярĕçĕ-ха. Вăт хăмăт, чăн хăмăт тăхăнтăм...
КĔТЕРУК Кам унта çĕрле çĕмĕрттерсе çӳрет? Мĕн çухатса эсир кунта?
УЛЬЯНА Ку, эпĕ-ха, пĕр татăк çăкăр та пулин памасть-ши, тесе шаккаса пăхас терĕм те. Çук пулсан каçарăр.
ПЕТĔР (Чĕрине ярса тытать, хăвăрт сасă еннеле утса каять.) Ку манăн анне, пулмарĕ пуль те. Нивушлĕ манăн анне илтрĕ пуль. Эпĕ ăна шыраса тупасшăнччĕ. (Кĕтерук

Петĕре ятласа.)
КĔТЕРУК Шуйттан ывăлĕ, халĕ тата тепĕр шуйттанĕ килет.
ПЕТĔР Эх пурнăç мар. Мĕн туса хутăм-ха эпĕ. Манăн йăмăк та çапла çӳрет ĕнтĕ ыйткаласа. Хăçан çак пурнăç улшăнĕ, хăçан çакăн пек çĕрме пуянсен шăпи тулĕ. Варламов каларĕ, кĕçех вĕсен шăпи тулать тесе. Тултарас пулать вĕсен шăписене, унсăрăн пурăнма памаççĕ вĕсем чухăнсене.Тултарас пулсан, Варламов калать, пур чухăнсен пĕрле пулмалла.
УЛЬЯНА (Чӳрече умне пырса) Петĕр, ывăлăм хĕрхен мана, эпĕ саншăн, çичĕ ют мар, аннӳ пулатăп.Пĕр татăк çăкăр парсам мана е улма та юрать. Хырăм выçнипе вăй тарчĕ.
ПЕТĔР Мĕн эпĕ тĕлĕк куратăп е чăнах.?(Петĕрпе Кĕтерук алăк уçаççĕ. Пӳрте Ульяна кĕрсе тăрать. Çĕтĕк-çатăк тăхăннă, ыйткалакан хутаçне çакнă, пиртен çĕленĕскер вăл та саплăклă, пуш пушах).
УЛЬЯНА Çак çĕтĕк хутаç пушă пулман пулсан кĕрес çукчĕ те. Каçарăр ĕнтĕ мана. Петĕр...
ПЕТĔР Эсĕ хăв, анне, каçар мана, ухмаха. Айăплă эпĕ санăн умăнта.
КĔТЕРУК Мĕн, халь хăв тутă тесе аннӳне тăрантарма шутларăн-им?
ПЕТĔР Вăл манăн анне, эпĕ выçă пулсан та вĕсен тутă пулмалла. (Ульяна ывăлĕ çине тĕлĕнсе йĕрсе ярасла та, çавăнтах савăннăн пăхать. Ывăлĕ улшăннине сисет, куççулĕсене шăлса илет).
КĔТЕРУК Ав, епле калаçатăн эсĕ! Варламов ыррине вĕрентмест.
ПЕТĔР Мĕнле Варлам? Эпĕ никама-та пĕлместĕп.
КĔТЕРУК Пĕлместĕн апла. Манăн анне курнă çав сире. Варламов пуçĕ пĕтессине те пĕлетĕп.
ПЕТĔР Анне, эсĕ пире ан кур,ан итле. Лар тĕпелелле, вырнаç. (Тĕпеле иртеççĕ).

КĔТЕРУК Выçă хырăм, çӳрет сулланса. Юрать. Юрать. Эсĕ кунта манăн тарçă пулăн. Тӳрех тĕпеле тата. Кайăр – кайăр. Сире унта çимелли кĕтсех тăрать. Виçĕ çĕр улми çитмест-и? (Кулкаласа пăхать тĕпелелле).

ПЕТĔР (Тĕпелте Кĕтерук тăхăнмаллисене илсе тухасшăн) Ăçта лартса пĕтернĕ çимеллисене? Хăш вăхăтра ĕлкĕрнĕ пытарма? Анне, каçар-ха. Эсĕ лар. Кĕтерук? Кил-ха кунта!

УЛЬЯНА (Çĕр улмине алăран алла куçарать те хуппипех çиме пуçлать).Ах, Петĕр, эсĕ мана ан кӳрен. Мана çĕр улми те çитет. Анчах эсĕ выçă кашкăр тесе ан шутла. Халĕ пур çĕрте те чухăнсем выçă. Ах, Ăçта çӳрет-ши хĕрĕм Сони? Эсир те пĕлместĕр пулĕ?

ПЕТĔР Çук çав, пĕлместĕп.

КĔТЕРУК (Калаçнине итлесе тăнăскер, тĕпел хăмисем витĕр калаçăва хутшăнать). Мĕн пĕлместĕн вара. Пĕри килсен,теприне кĕт. Ăçтах кайтăр вара вăл та?

УЛЬЯНА Ах, кинĕм, Кĕтерук, аплах ан кас-ха.Эпир те айăплă мар-çке кун пек начарлăхшăн. Унччен пирĕн те пурччĕ-ха та. Чухăнах та пулман. Санăн аçу айăплă мар-и вара? Чухăнсене майлă пек пулса, хăй пуянне упрас тесе, миçе çынна сутрĕ-ха?.. Эсĕ ăна пĕлетĕн-и? Пĕр парăмран миçе çĕр парăма çитрĕмĕр. Эх-хе-хей… Шăши те хӳрипе çапса кулать ĕнтĕ пирĕнтен. Армана та клохоз тăвакансем мар, чухăнсене пулăшатăп тесе, сирĕн аçу илсе кайрĕ. Эпир - мĕн пулăшатпăр мар, ялан пулăшнă. Халĕ хамăра выçтарса вĕлересшĕн. Пире хута кĕрекен те çук. Эпир пуян çын вăйĕпе пуякансем пулман. Хамăр ĕçленĕ, хамăр тунă. Халĕ пире сутса...Ы-ых! Çĕленсем – хăшĕсем. Çын çынна курайми пулсан, ырă патне пымасть.

КĔТЕРУК Суя! Ку суя! (Тарăхса Ульяна патне пырса тăрать. Лешĕ, улма çисе лараканскер, хыпнă улмана та çăтса яраймасть хăранипе). Манăн телее эсир çиетĕр. Куратăн-и çакна! (Чышкине пӳрнепе вĕçлесе. Унтан

тĕпелтен тухать те никам илтмелле мар: Э-э, çук, капла мар, мĕн усси вăрçни. Ĕçлеттерсе тăнне илетĕп вĕсенне.
УЛЬЯНА (Çĕр улмине аран çăтать те урăх çимесĕрех сĕтел хушшинчен тухать те кĕл тума пуçлать). Эй, çӳлти аттемĕр, санăн яту яланах хисеплĕ, çӳлти патшалăху çĕр çине килтĕр. Çĕр çинче те çӳлти пекех санăн ирĕкӳ пултăр. Паян пурăнмалăх çăкăр пар пире. Ытти парăмлисене каçарса пынă пекех пирĕн парăмсене те каçарса тăр. Усал ан ту. Çылăхран сыхла. Ашшĕшĕн, Ывăлĕшĕн, Таса сывлăшшăн. Аминь. Аминь. Аминь. Çĕре çити пĕшкĕнсе 3 хутчен сăх сăхать. Унтан тухса кайма тăрать).
ПЕТĔР (Чарса) Ăçта эсĕ, аннем? Сана урăх ниçта та ямастăп. (Лартать). Лар-ха. Ку сирĕн кил. Эсĕ килтен урăх ниçта та каймастăн. Эпĕ ухмахланнишĕн каçар (чĕркуçленет). Каçар, аннем. Малашне эсĕ хуçа пулăн кунта.
УЛЬЯНА Каçаратăп. Тăр. Хам ачах вĕт.
КĔТЕРУК Вилме пĕлменскер. Çак карчăка хуçалантарма юрамасть. (Анаслаcа).Çĕр улмине кăмакана пĕçерме шутласа пăрахам-ха.
ПЕТĔР Кĕтерук, эсĕ-и ара мăкăртататăн? Сана ĕçлеме кăна кирлĕ, эппин, ман анне.
КĔТЕРУК Çапла. Хăв пурăнма пĕлместĕн пулсан, мана ан вĕрент. (Петĕр ун-кун уткалать Кĕтерук хырăмне шăлса тăрать. Ульяна кĕрсен, Кĕтерук кĕпе-йĕмне илет те тăхăнма пăрăнать. Сасартăк. Кĕтерук кĕпе тăхăнма тăрсан, аллисене çĕкленĕскер, ахлатса ярать те çĕре ӳкет. Петĕр чăлана кĕме тăрсан, амăшĕ тытса чарать. Петĕр ним тума аптраса тăрать. Ульяна кинĕ патне васкаса кĕрет. Кĕçех ача сасси янраса каять).
УЛЬЯНА (Ал шăлипе алă шăлса тухать).Ывăл çуралчĕ, ывăлăм, тавах Турра.

Пурте тĕрĕс тĕкĕлех, анчах кине йывăртарах килчĕ. Ачи пы-ы-сăк, улăпах.

ПЕТĔР (Каласа пĕтерме памасăрах амăшне çӳлелле йăтса) У-ура! Ывăл çуралчĕ. Тавтапуç сана, анне, çак пепкеме çĕр çине килме пулăшнăшăн. Анне, халь ĕнтĕ санăн мăнук çуралчĕ.

УЛЬЯНА (Тапкаланса) Кай, ачупала. Вĕçерт-ха мана. Ват шăмшака кам çапла чăмăртать, мĕнпур сок тухса вĕçетчĕ вĕт. Кай! Ачупала. (Петĕр амăшне сак çине лартать те хăй Кĕтерук патне кайма тăрать. Амăшĕ туртса хăй çумне лартать). Суккăр пуласран та хăрамастăн-и? Тăмана. Кай-кай... Чисти амăшĕн сăнĕ. Эсĕ хутшăнман пулĕ вăл ачана пуçтарма? Тепĕр тесен, ывăл амăшĕн сăнĕпе çурални сахал та, анчах телейлĕ пулать теççĕ. Эпир ырă курманнине мăнуксем курччăр-и?

ПЕТĔР Ывăла курас килет, аннем. Курас киле-ет. (Тата патнерех пырса хăлхинчен). Ку-ра-ас ки-ле-ет пи-итĕ.

УЛЬЯНА Курăн-ха, курăн. Ăçта васкатăн? Вăт хăямат ачи. Кайса сăпка илсе кĕр ав хăвăра сиктернине.

ПЕТĔР (Тухса сăпка илсе кĕрет те вырнаçтарса çакать). Анне, халь сиктерме пултаран. Кӳр, Кĕтерук, ачама. (Ачине савăнах сăпкана вырнаçтарать). Анне, халь сиктерме пултаран. Сана валли пысăк ĕç пулчĕ.

УЛЬЯНА (Васкасах утса пырать те ачана çиттипе витсе сăпка сиктерме пикенет).

ПЕТĔР (Кантăкран Сони утнине асăрхать). Кĕтерук, кур-ха, пирĕн ачана пăхма Сони те килсе çитрĕ.

УЛЬЯНА (Пăшăлтатса). Ма кĕмест-ши тата хăй?

ПЕТĔР Кĕтерук, мĕн эсĕ нимĕн те чĕнместĕн?

КĔТЕРУК Мĕн чĕнес ман, паян анне çаплах Соньăна асăнать. Шутларăм, çавах килет тесе. Эпĕ алăка питĕрсе илтĕм. Унăн пирĕн патне халех килес çук.

ПЕТĔР (Кĕтерука йăпăлтатса). Хăш вăхăтра алăка хупрăн?
Кĕтерук, итле-ха, анне пирĕн ывăла çăлчĕ, хăй мĕн пĕлнипе сана йăлтах пулăшрĕ, тата çĕр улми кăна çитерĕн пулин те пирĕн пепкеçе алăрах сиктерсе юратсах пăхать, а эсĕ пур хăвна лайăх тунине те манса каятăн.
КĔТЕРУК Петĕр, чăнах та ку питĕ хăрушла йывăр пулнăччĕ. Мĕншĕн-ха эсĕ ăна асăнатăн?
ПЕТĔР Мĕншĕн тетĕн? Мĕншĕнне хăв туймастăн пулать. Эпĕ чăннипех савăнатăп-çке эсир чĕрĕ юлнишĕн.
(Петĕр Кĕтерука тытса ыталать те) –Эх!..
КĔТЕРУК Кĕрт эппин, кĕрт, пуçтар хăвăн çапкаланчăкусене. (Петĕр унталла – кунталла чупать, çухалса кайса пуçне ярса тытать).
ПЕТĔР Соня, йăмăкăм, кĕрех, кĕр. Шăнса та хытрăн пуль сивĕ çумăрта. Кĕр çумăрĕ ăшă пулмасть.
СОНЯ Çук, эпĕ халĕ кунта алăк урлă каçсанах мĕнле шăнса йĕпенни пĕтĕмпех иртсе кайрĕ. Пĕр сăмахпа каласан, чунăм алăк уçнине курнипех ăшăнчĕ. (Соня амăшĕ йĕрсе ларнине, Петĕрĕн куçĕ шывланнине асăрхать те амăшне ыталаса илсе иккĕшĕ те йĕреççĕ).
ПЕТĔР Кĕтерук, çитĕ мана çаплах сан куçунтан пăхса пурăнма. Çамрăк пулнă, ухмах пулнă, çавăнпа та сана пăхăнса пурăнтăм. Тен, эсĕ мана та кăларса ярас тейĕн. Вăл, ман йăмăк вĕт, мĕнле ăнланмастăн, эсĕ çавна та! Соня ӳссе çитнĕ чипер хĕр, пăх-ха ун çине мĕнрен кая сăнран.
КĔТЕРУК (Çынсен енне çаврăнса, шăппăнрах ). Çук, тек эпĕ Петĕре çавăраймăп хам енне, темле шăна çыртса кайнă тейĕн – «Самана та улшăнать, ун чухне мĕн калăн,» – тесе те хăратать. (Петĕр енне çаврăнса, йăпăлтатса). Петĕр, атя тек вăрçмăпăр, лайăх пурăнăпăр. Пурăнччăрах вĕсем те.

ПЕТĔР Эпĕ кĕтсех тăтăм, эсĕ çапла каласса, мĕншĕн каланине те калама пултаратăп. Кĕçех сирĕн аçупа аннӳне раскулачить тăвĕç, çавăнпа та эсĕ хăраса ӳкрĕн. Мана пур пĕрех. Эсĕ хăратăн-и? Е çук... Пул çын пек, çитет илемсĕр пурăнăçпа пурăнса.
КĔТЕРУК Петĕр, шутла-ха çăмăл-и çавсене усрама? Соня, ав çитĕнсе çитнĕ. Ну юрĕ. Ывăла ура çине тăратсан, чупма пуçласан, ăна качча парăпăр-и-ха.
ПЕТĔР Э-э-э çук! Апла мар, хăв ачуна хăв пăх. Хăв та нимĕн те тумастăн, сысна пек хăрлатса çывăрма çеç пĕлен, анне вара ыратакан хулĕпе ача çĕклесе çӳрет. Çапла вара Соньăна ача пăхтарса лартмастăп, ĕç тупатăп ун валли. Варламов вырнаçтарĕ хăй патне. Соньăна курни çинчен те, килĕшни çинчен те сăмахларĕ сахал мар. Кĕçех çураçма та килетĕп терĕ. Тен, паян-ыран çитĕ те.
КĔТЕРУК Мĕн, мĕн калаçатăн эсĕ? Эсе мĕнле туй туса парасшăн ăна, нивушлĕ хамăр çимĕçрен, пирĕн пурлăхран?
ПЕТĔР Мĕнле-ха вара эпĕ пулатăп пиччĕшĕ, енчен те эпĕ пулас кĕрĕве пăхаймасан ... Çĕр çинче пурăнам та мар. Хамах пăхатăп. (Петĕр тухса каять. Сони кĕрет. Кĕтерук ун çине кураймасăр пăхса илет те тухать).
СОНИ Эпĕ ма ытлаши-ши çак çĕр çинче? Тăхта-ха, эпĕ кăлăхах йĕретĕп-çке. Эпĕ качча кайсан, манăн хамăн йăва пулать-çке, Варламов пек çынна кайсан япăх пулмĕ те, ăна кĕтсе илеймĕп. Пиччепе инки пурнăçĕпе пурăнма чун чăтаймĕ урăх. Хура пӳртлĕ Павăлах кайма тивет ĕнтĕ. Хура куççультен уйрăлма шăпа пӳрмен пуль мана.

6 курăну

Хĕлле. Сонине тытăнчăклă калаçакан Павăл качча илме килнĕ. Çийĕнче саплăк çине саплăк лартнă фуфайка, çĕлĕкĕ татăлса пĕтнĕ – çĕ-ĕтĕк, шăлаварĕ кăвак пиртен, уринче – çĕнĕ çăпата.

Петĕрсен пуян кил-çурт, сĕтелĕ апат-çимĕçлĕ.

ПАВĂЛ (Алăк уçать те пуяннине курсан, çăварне карса пăрахса каялла тухма тăрать, анчах ăна Славăпа чиркӳ хуралçи шалалла тĕртсе кĕртçĕ. Вăл çаплах каялла туртăнать).

ХУРАЛÇĂ Мĕнле вăкăр пулчĕ ку, малалла мар,каялла тĕкет. Хап, тĕлĕнмелле. Тем те пур çав. Эсир мана ан ятлăр-ха чĕнмесĕр килнĕшĕн.

УЛЬЯНА АРА, ирт-ирт, пурте иртĕр, ларăр. Паян пирĕн хăна кунĕ.

КĔТЕРУК (Павăла курсан хăраса кайса) Ку тата мĕн туса çӳрет кунта?

СЛАВА Ку Павăл. Эпир Криллепе салтак йĕркипе чупма кайсан Хусах касси ялĕнче паллашрăмăр. Вăл питĕ ырă çын. Пирĕн урхамах пăявĕ талса кайнăччĕ те, вăл тӳрех хăйĕнне кӳлнĕ лашине тăварсах пире пырса пачĕ.

ПАВĂЛ В-в в-ăл ман-н-н-ăн м-м-ар. Ху-ç-ан.

СЛАВА Çавах эпир вăл пулмасан, ăçта мĕн тумаллине пĕлместĕмĕр.

КĔТЕРУК Чухăнсем яланах хăйсене ырă пек кăтартаççĕ. Вĕсен шăл варрине лек-ха, вара мĕн вăл çепĕçлĕхе тӳрех манса каятăн. Ялан выçакан йытă та хаяр пулать те.(Витре илсе тухса каять).

ПЕТĔР (Кĕрет) У-у. Пирĕн патра хăнасем пур.( Вăл Славăна кăчăк туртать те хăй патне чĕнет. Шăппăн). Ку Сонине çураçма килекенни-и?

СЛАВА Çапла. Лайăх ача вăл. Анчах пирешкел чухăн.

Халь кам чухăн мар, выçлăх çула пула ун хыççăн пурте нишленсех кайрăмăр ĕнтĕ.
ПАВĂЛ (Илтет) А-а, ça--пп-ла. Ч-ч-ч-ухăн. Пит-т-т т-те.
ПЕТĔР (Пуçне пăркаласа чӳрече умне пырса мăкăртатать). Эх, мĕн пулчĕ-ши? Ăçта-ши Варламов? Кĕтерук тем каламан-ши? Сони епле кайтăр унта, выçса вилме-и? Сони, кил-ха.
УЛЬЯНА Эсĕ ăна халь ан чăрман тар-ха. Вăл хыпăнсах саппунпа кĕпе çĕлесе пĕтерет. Пирне те ĕнер анчах тĕртсе пĕтертĕмĕр те халь алăпа çĕлемелли нумай. Çĕр çывăрмасăр ларчĕ-ха та, тен, вĕçлесе те пырать. Пĕтерсен аванччĕ. Петĕр, çынсене сĕтел хушшине ларт-ха.
ПЕТĔР Кам çыннисене?
УЛЬЯНА Килнĕ хăнасене ара.
ПЕТĔР Хăнасем-и вĕсем?
ХУРАЛÇĂ Эпир пушмак пăру шырама пулăшакансем, çапла-и, Слава?
СЛАВА Çапла, мучей.
ПЕТĔР Сони ăна курман та вĕт.
ПАВĂЛ ЯТ-т-т а т-та п-п ĕлмест.
ПЕТĔР Вара мĕнле авланас тетĕн?
ПАВĂЛ П-п-паянах илсе каяс тетĕп.
ПЕТĔР Мĕнпе пурăнĕ сирĕн патăрта? Выçса вилĕ.
ПАВĂЛ ЭП–П–ПИР в-вилменнине в-вăл т-а в-в-илмест.
УЛЬЯНА Юрĕ-юрĕ. Сĕтел хушшине куçса ларăр.
ПАВĂЛ (Хӳмĕнчен четверть кĕленчи туртса кăларать тесĕтел çине лартать). А-к-кă ман к-кучч--енеç. Х-х-хĕр-р ç-ç-ураç-çмалли, к-к-качча илсе к-к-каймалли.
ХУРАЛÇĂ Маттур, ячĕ мĕнлерехчĕ-ха?
СЛАВА ПАВĂЛ первый.
ХУРАЛÇĂ Хĕлре шăнтмасăр илсе килнĕ четвĕртшĕн хĕр мар, сана пĕтĕм чиркӳне парса яма хатĕр эп.(Савăнса

алисене сăтăрать, çапса илет). Эх, савнăç! Савăнмалли шырасан тупăнать иккен. Сăмса умнех килчĕ вĕт. Пĕрле çаклантăм та хĕр çураçма та лекрĕм.

УЛЬЯНА Хĕрне курмасăр епле авланма шутланă-ха эсĕ?

ПАВĂЛ Ав-в-вланнишĕн х-хĕр ç-çыпç-ç-ăнса лармасть. К-к-килĕшмест, т-т-ĕк те яр! К-кайтăр. Л-л-аша мар, ш-алкă мар.

УЛЬЯНА (Пуçне чикет те куçне саппунпа шăлса тухса кайма тăрать).

ПАВĂЛ М-м ĕн? Э-п-п к-к-кулса к-каларăм.

УЛЬЯНА Ара, ара. Çаплах. Пирĕн Энтри вилнĕрен вара суйлама тивмест. Кам илет, унпа кай. Эпир халь хамăр та аран темелле.

ПЕТĔР Ун пек ан кала-ха.

УЛЬЯНА Эпĕ хамшăн мар, саншăн мар, Сонишĕн калатăп-çке. Вăл халь 16 çулхи хĕр ытлашши хырăм пек ĕнтĕ кунта. Кĕтерук кин ăна мар, хама та хĕстерет те, чăтмаллах. Турă та чăтнă.

ПЕТĔР Çитĕ калаçса, ларар та ĕçер. Паян четвертьпе йăмăка сутмалли кун пултăр, эппин. Каччи пурччĕ-ха та, анчах унăн хăй çинчен шутлама та вăхăчĕ çук. Пурăнмалли хура пӳрт те çук-ха халлĕхе.

ПАВĂЛ Х-х-ура п-п-ӳрт п-пур. М-ман х-х-амăн.

ПЕТĔР Аван. Хăв та ача анчах та ... (Хăйсен кĕленчинчен ĕçтерме пуçлать).

ХУРАЛÇĂ Тинех сывалатăп-ха. Аш-ш, шуйттан лавĕ вăл – мухмăр тени! (Чĕтрекен аллисеммпе енчен енне куçарать черккине, ниепле те тути патне илсе çитерейместь). Хăямат. Ĕнер ытлашши пулнă çав.

СЛАВА (Кулса) Хăçан сахал ĕçнĕ вара эсĕ?

ХУРАЛÇĂ Сахал чухне.(Кулаççĕ). Паян нумай пулать-ха. (Четверть тытса кулать).

ПЕТĔР Эсĕ черккене пар-ха. Ăçта ятăн?

ХУРАЛÇĂ Хăямат, çăтса ямарăм-и? Хам та курмарăм. (Хăй çăварĕнчен туртса кăларать те пуртĕ ахăлтатса кулаççĕ).
СЛАВА Черккине ĕмсех илтĕн пуль.
ХУРАЛÇĂ Паллах, пăрсан тухмĕ, парсан пулĕ, çавăнпа черккене кăларса тытса тултарса паччăр тесе ларатăп.
ПЕТĔР Шеллемес. Кунта ĕçмелли хĕрхенме кирлĕ мар. Çитет. Тепре ĕçсе пар, эппин, çăмăл алă пулса.
ХУРАЛÇĂ Ĕçме-и? Çăмăл... Еплерех çăмăл ишо.
УЛЬЯНА Эсир кăштах çырткалăр-ха. Эп хуçи мар та, сĕтел çине лартнă пулсан, курма лартман пуль, çимех лартнă пуль. Хам ларам-ха.
ПЕТĔР Анне, эсĕ те ĕçсе пар-ха.
Ульяна (Сăх сăхать те) Пайтах пуç çапрăм, ыррине ĕçлесен те кураймарăм. Манăн хĕрĕн те шăпи ырă пулас çук. Татах та чухăнрах пурнăçа кайса чунне усрĕ-ши? Е вăл та пульмĕ? Мул пирки каламалли те çук.
ПАВĂЛ Эси-с-сир ун п-п-ек ан к-к-калăр-х-х-а.
УЛЬЯНА Чĕре çурăлсах тухать. Хĕрĕн чĕрипе амăшĕн чĕри пĕр кăкăртан пайланаççĕ те, çавăнпа унăн хуйхи - манăн та. Епле пулсан та, кĕрӳ теме ирĕк пар, эппин. Сони пирĕн лайăх та ĕçчен хĕр, ан кӳрентер. Пĕр-пĕриншĕн пулсан пурăнма пулатех. Выçсах вилмĕр-и, тен? Сони халех хатĕрленсе тухать ак. Хатĕрленет-ха вăл.
ПАВĂЛ Х-хĕлле к-каç ч-чачах пулать.
ПЕТĔР Ăнлантăмăр. Халех. Сони кĕпе тăхăнтарттăр-ха, сана.
ПАВĂЛ М–мана? Ç-çук. Т-аса, ç-çĕн кĕпе т-тăхăнма м-мунча к-кĕмен эп-пир.
УЛЬЯНА Мунчи те çук пуль-ха. Халь хура пӳртре кăмака умĕнчех çăвăнма вĕренчĕç чухăнсем. Вут хутса ярсан шыв ăшăнать, тĕтĕмĕ куçа кĕрет те шывпа çăвăнса тухать.
ПАВĂЛ Ç-çапла.

СОНИ (Кĕрет. Аллинче тутăрпа çыхнă çыхă, пиртен кăвакартнă кĕпе тата тĕрленĕ сăмса тутри тытнă. Хăйĕн çинче çĕнĕ шурă пир кĕпе, умне çакнă хĕреслĕ шупка саппун, уринче çĕнĕ çăпата. Пуçне чиксе çынсен еннелле утать). Пурне те ырă кунпа сывлăх сунатăп.

ПЕТĔР Йăмăкăм, ирт кунта. Эсĕ-мĕн çăпатапа каятăн-им? Эпĕ илсе панă калушне ма тăхăнмастăн?

СОНИ Ăна Кĕтерук хывса илчĕ.

ПЕТĔР Ну-ну!!! Пуçланать... (Кĕрсе кайса калуш илсе тухать). Ме, ан пар никама та. Вăл санăн. Тăхăн.

СОНИ Кам валли тăхăнас? Чухăнсем патĕнче калушпа çӳреймĕн.

ПАВĂЛ Т-тĕрĕс. К-калушне с-сутса к-кирлĕ япала илме п-пулать.

ПЕТĔР Сутса пăх-ха. Хăвна сутса яратăп. Унта та, Сони, кунта епле хитре çӳренĕ, çапла çӳре. Ан ӳк. Ахалех васкатăн-ха. Кĕтмеллеччĕ, чăтма пулатчĕ-ха та хам пур чухне. Хăвăн ирĕк. Курманнин курас килет.

СЛАВА Курнин тарас килет.(Кулаççĕ).

ХУРАЛÇĂ (Çине-çине хăй ярса ĕçет те) Халĕ çитĕ, кайма та вăхăт.

СЛАВА Анчах тăраймастăн.

ХУРАЛÇĂ Эсĕ тăрататăн.

СЛАВА Атя, тăр, эппин. Каяр киле.

ПАВĂЛ (Сони çумне именчĕклĕн пырса тăрса аллине тытма тăрат те вăтанать). Эс-с ĕ х-хитр-ре.

СОНИ (Вăтанса пуçне чикет). Анне, пилле, пире, эпĕ качча каятăп, п-п-ппулас. (Павăла кĕпе, Славăна сăмса тутри парать). Мĕн илмеллине илтĕм. Ман çавах нимех те çук.

ПАВĂЛ А-п-п-ай к-калар-рĕ, х-х-хĕртен ш-ш-ăп--пăр ç-ç-еç ю-л-л--м-мал-л-а тесе. В-вăл ал-ăк х-х-ыçне п-ытанать тет.

УЛЬЯНА (Икон илсе пиллет те çав иконне Сони тутри çине çыхса парать). Ачам, хĕрĕм, ма çак тĕнчере телей тени

çӳремест-ши? Хурлăх тени чĕнмесĕрех килет-çке.

ПАВĂЛ Э-п-п-ĕ х-х-ур-р-л-лăх п-п -ул-лт-тăм-и?

УЛЬЯНА Эсĕ ун пек ан шутла-ха. Эпир сана пачах пĕлместпĕр. Темле : те усал, те лайăх.

ПЕТĔР Усал пулса пăхтăр-ха. Ĕçтерсе пăхам-ха малтан. Тыт.

ПАВĂЛ (Хăюланса). Ю-р-р-ать. Т-тав-в-тап-пуç. К–к-аяр. Н-н-начар л-л-аш-ша-а х-х-ăв-ăвă-р-рт ут-таймас-с-ть.

УЛЬЯНА Начар çав. Пирĕн пурте начар çав. Пурнăç начар пулсассăн ăçтан ытти аван пултăр-ха, ачам? Халь ĕнтĕ, Сони, килпе сывпуллаш.(Йĕрет).

СОНИ Анне, пиччем(ыталаса йĕрет).

ПАВĂЛ Ç-ç- ап-пла х-х-ыт-ă ан й-й-ĕр-ха. Ун -нă п-п-ек ă ç-ç-ын в-в-илсен-нĕ й-йĕр-реçç-ç-ĕ.

ПЕТĔР Хĕрарăмсен йĕресси, арçынсен чарасси. Павăл, ил-ха пушă, кăтарт епле пĕлен пушша чашлаттарма. Эсĕ арçын , авланатăп, тен. Ну! (Пушă тыттарать).

ПАВĂЛ (Вăр-варланса. Çапса вăйлă сасă кăларать). Мĕнле? К-каймалл-ла п-пек-и? К-кайрăмăр, Сони! (Тухса каяççĕ).

ВАРЛАМОВ (Чупсах кĕрет). Петĕр, пытар мана! Улăм ăшне хупла мана.

ПЕТĔР Бандитсем?

ВАРЛАМОВ Вĕсем нумай клаçса тăмаççĕ, тӳрех переççĕ. (Пăшал сассипе пӳртрисем шартах сикеççĕ).

ПЕТĔР Атя, тух кунтан хăвăртрах! Унта сана никам та шырамĕ.

УЛЬЯНА Турă, çырлахах, ах. (Сăх сăхать). Самана пăтранать, çын пăшалпа перет, тĕнче кисренет. Тата мĕн курмалли юлчĕ-ши? (Татах пăшал сасси).

ВАРЛАМОВ Пе!..

ПЕТĔР ВА!... (Ульяна чупса тухать. Иккĕшĕ те вилнине курсан, кăшкăрма çăварне уçать те Петĕр çине тӳнет).

## В Ĕ Р Е   Ç Ĕ Л Е Н

ВЫЛЯКАНСЕМ:

Ульяна – ватă хĕрарăм
Соня – унăн хĕрĕ
Яша
Хуралçă
Çемен – ялти пуян
Марине – Çемен арăмĕ
Кĕтерук – вĕсен хĕрĕ
Слава – яш каччă
Иван – Павăлсен пускилĕ, çӳллĕ çамрăк арçын
Власса – Иванăн арăмĕ, питĕ пĕчĕкскер
Павăл – чухăн яшă
Праски – Павăл амăшĕ кахал та мăран
Лаврентии – колхоз председателĕ
Караç – бригадир, авланман ватă хусах
Степан – салтак
Лавçă
Уйкуç – эпи карчăк
Милиционер
Старик
Юмăç карчăк
Илпи

3 пайĕ

Хура пурнăç

1 курăну

Çулла. Хура пӳрт. Павăлсен килĕнче.

СОНИ (Урай çăвать. Кулянса). Телейсăр пусăма ниçта чикеймесĕр çакăнта килтĕм. Пĕчĕк пӳрт пулин те, хамăрăн. Уйрăлса тухасси çук. Пĕр патаксăр пурнăçа пуçла-ха.Пĕри илсе каясшăнччĕ, анне хăрарĕ, уйрăлса тухмалли ывăл, терĕ. Теприн – аппăшĕпе йăмăкĕсем пурччĕ. Ун пек çĕрте ют хĕрарăм ырă кураймасть, тет. Виççĕмĕшĕ пачах килĕшместчĕ, сăнĕпе те, чĕлхи-çăварĕпе те. Вăт ман çакăнта килмелле пулчĕ. Выçса вилсен те, çакăнта чун тухиччен пурăнмалла. Ăçта-ши Варлам?

ПАВĂЛ (Кĕрет). Соня, эпĕ килтĕм, хырăм выçрĕ. Çимелли туп-ха?

СОНЯ Пĕр татăк çăкăр пурччĕ те аннӳ пытарчĕ, хам та нимĕн те çимен.

ПАВĂЛ (Тарăхса) Ай, тата мĕн! Вăл санăн аннӳ мар-и?

СОНЯ (Хуйхăллă). Павăл, ăнланатăп, йывăр – суха хыççăн выçă пулни тарăхтарать, анчах эпĕ нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп. Акă ясмăк икерчи пур. Çи-ха.

ПРАСКИ (Хунямăшĕ, кĕрет). Мĕншĕн çĕмĕрлетĕр ара? Урамах илтĕнет. Ан вăрç-ха, Павăл. Пурте выçă. Эпĕ те пĕр çĕр улми çеç çирĕм.(Çăкăрне саппун кĕсйинелле тĕртет).

СОНЯ Анне, ма апла калатăн?

ПАВĂЛ Ан чĕн. Шăп, выç хырăм!

СОНЯ Павăл, мĕншĕн аплах калатăн, ват çын суймасть тетĕн-и?

ПРАСКИ Суять! Вăл суять! Вăт шуйттан, хĕсĕрскер! Виçĕ çул хушшинче те ача туса памасть!

ПАВĂЛ Юрать, Сони, кил-ха. ( Пушшине илет те)Тӳрлетсе илем сана. Капла суйма кам вĕрентрĕ сана? Ĕнер ак

услам çу çухалчĕ.
СОНИ (Йĕрсе) Эпĕ ĕнер урама та тухман-çке, Павăл. Кăмăл пăтраннипе аран çеç çӳрекелерĕм. Эпĕ пахчаран кĕнĕ чухне апай хăй нӳхрепрен тухрĕ те урамалла вĕçтерчĕ. Саппунĕпе тем хуплана хăй. Ĕнен мана, Павăл.
ПРАСКИ (Мăкăртатса пуç çапать) Эй, Турă, çылăхран хăтарах мана. Кин çăкрине мана пачĕ, хамах пачĕ, хамах çирĕм. Çуне те тепĕр татăк çăкăр саппас пултăр тесе кайса патăм.

## ЮРАТУ ЮРЛАТĂР (Степан юрри)

Вĕçенче, 97с.

Çăлтăр, çутатма эс кăмăл ту
Савăш сукмакне çак çĕр çинче.
Ирĕклĕн юрлатăр юрату
Ирĕлсе кашни çын чĕринче.

Çăлтăрсем çуталчĕç касхине,
Çутипе киленĕç урамсем.
Çепĕç туйăм витрĕ чĕрене,
Тупрăм çăлтăр евĕр савнине.

Çăлтăрсем выляççĕ тӳпере,
Вăтанса пăхаççĕ çĕр çине.
Ай, мĕнле-ха ырă чĕрере,
Тупрăм çăлтăр евĕр савнине.

Ăнтăлать ман чун тӳпенелле,
Ăмсанать çут çăлтăр шăпине.
Пĕр çулпа кăна çӳремелле
Кăмăлтан савсассăн пĕр-пĕрне.

2 курăну

КĔТЕРУК ( Васкасах вут хутать, апат хатĕрлет. Шаккани илтĕнет). Кĕрĕр. Уçах. Ман камран питĕрес алăка. Хама хӳтĕлес-и? Манăн никам та юлмарĕ. Ачам та... (йĕрет. Татах шакаççĕ). Кĕрĕр. Кĕрĕр. Кам тесе те ыйтмастăп.
Яша, Слава, хуралçă: Кĕртеççĕ-и? (шавлăн кĕреççĕ.
КĔТЕРУК Кĕртетĕп. Эсир темшĕн кĕместĕр.
СЛАВА Эпир хаваспах.
ЯША Чăрмантарса çӳретпĕр.
ХУРАЛÇĂ Çын чăрмантармасан çынна, упа килсе чăрмантартăр-им?
КĔТЕРУК Эй – ара! Çапла çав, мучи. Тĕрĕс калатăн. Иртĕр. Эсир килмесен кам килтĕр. Хамăн та никампа та калаçас килмест. Иртĕр. Кĕçех улма пиçет.Çиетпĕр те каçхи ĕçе тытăнăпăр. (Тĕрĕслесе) Акă, пиçнĕ çĕр улми. Ларăр васкасах. Пирĕн икĕ мăн яла çитсе килмелле паян.
ХУРАЛÇĂ Эпĕ те пыратăп.
КĔТЕРУК Апла пулсан икшерĕн каяр, тӳрех икĕ ялта пулатпăр.
СЛАВĂПА ЯША Тӳрех. Аван. (Пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ).
ЯША Эсĕ мĕ-ĕн?
СЛАВА Эсĕ?
ХУРАЛÇĂ Эпĕ, эсĕ. Çавах мар-и? Пĕрле пĕр шухăшлă.
КĔТЕРУК Хуралçă пирĕн ялан тĕрĕс калаçать.
СЛАВА Ĕçме пăрахнăранпа тĕрĕс калаçма пуçларĕ çав.
ЯША Тен, юратма пуçланăранпа?
КĔТЕРУК (Хуралçă патне çитсе тăнăччĕ çеç тем калас пек пĕшкĕнсен, тӳрленчĕ те кăмака еннеллех утрĕ).
ХУРАЛÇĂ Апăрша ачисем тем сисеççĕ.
ЯША Туй тăвасшăн эпир.
СЛАВА Хуралçăн çемйине ăçта яратăн вара?
ЯША Э-э. Ара ун пек туй мар, вăрттăн туй.
КĔТЕРУК Ма кулатăн эсĕ, Яша? Вăл хăйĕн çемйипех

пурăнтăр.
СЛАВА Чăнах, Яша. Эсĕ мĕн авланнă çынна авлантарасшăн. Хăв авлан.
КĔТЕРУК Эсир маншăн пăшăрханатăр-и?
ХУРАЛÇĂ Çук. Вĕсем кăштах кулас шутпа.
ЯША Ватă-вĕтĕрен кулсан та çылăх мар.
СЛАВА Кулса та мар-ха. Хуралçă пирĕн вăл чи-чи ырă çын, ĕç тума пулать унпа. Эпĕ ĕçсе каясран хăратăп. Вăл хăйĕн арăмĕпе каллех ĕçсе кайма пултарать.
КĔТЕРУК Арăмĕ мĕн. Арçынна юратнă ĕç кирлĕ. Вара вăл нихăçан та ĕçсе супмасть. Арçын чунĕ – çинче струна пек., трин-трин! кантăк пек чĕлпĕ-ĕр! тăвать, анчах курăнмасть те, илтĕнмест те. Хăй те каламасть. Йывăрланса çитсенех ĕçме пуçлать.Пуслăх пусарса тăнине арçын мар, хĕрарăм та юратмасть.Анчах хĕрарăмăн чăтăмлăх ытларах. Халĕ ак Уйкуç юмăç карчăк.
ЯША Кĕтерук, эсир ытла та çивĕччĕн тĕшĕртетĕр арçын пурнăçĕпе хĕрарăм пурнăçне.
УЛЬЯНА (Кĕрет).У-у... пирĕн патăрта çынсем пур, иккен.
КĔТЕРУК Апай, эсĕ те лар улма çиме. Паян пирĕн нимех те çук. Ыран суха туса пĕтерсен, çур михĕ ыраш памалла. Ăна авăртса ыраш çăнăх çăкри туса çитерĕп.
УЛЬЯНА Юрать-ха, ачам. Юрать. Тавах сана мана выçтарманшăн. (Пуç çапса сĕтел хушине ларать).
КĔТЕРУК Халĕ эпир юнашар ялсене кайăпăр. Апай, эсĕ никама та ан уç. Кин çывăрать, те.
УЛЬЯНА Юрĕ-ха. Юрĕ. Эсĕр асăрханса çӳрĕр-ха унта.
КĔТЕРУК Апай, хут чĕркисене валеçсе пама та юрать. Илсе тух.
УЛЬЯНА ( Сакайĕнчен хут чĕркисене илсе тухать те кашнинех валеçсе парать). Тĕплĕнрех чикер, ачамсем. Шăширен шикленекен шăши шăршине аякранах туять.
ЯША Кăна тĕрĕс каларăн.
ХУРАЛÇĂ Ульяна та тĕрĕс шухăш каламасан.

СЛАВА чӳречерен пăхса: Хăюне сӳнтерĕр-ха. Такамсем!..
КĔТЕРУК Хăвăрт! Сакайне чăмăр, Слава, Хуралçă! (Вĕсем пытанаççĕ). Ыттисем çĕнĕрен çĕр улми шуратса ларнă пек сĕтел хушшинче ларaççĕ).
УЛЬЯНА Çимелли пулнă пулсан, çакăн пек арканчăк пурнăç та пулмастчĕ пуль. (Шаккани илтĕнет. Çеменпе Марине кĕреççĕ). Кĕтерук, хĕрĕм!...
КĔТЕРУК Атте! Анне! Эсир çĕр хута ăçта кайма тухнă вара?
УЛЬЯНА Иртĕр-ха, иртĕр, алăк патĕнче ятлаçма килнĕ çын тăрать.
МАРИНЕ Ах, тăхлач, ятласан та нимĕн те тăвайрас çук. Пирĕн кунтан тухса каймалла-çке. Çуртне ял вулăсĕ тăваççĕ.
ÇЕМЕН Тăхлачă. Петĕр пулнă пулсан, тен, пире те çăлатчĕ пулĕ те.
МАРИНЕ Тăхлач, Кĕтерука çăлăрах.
УЛЬЯНА Ара, тен, эсир те юлатăр-ха.
ÇЕМЕН Çук. Çу-ук! Халĕ пире пĕтĕм ял кураймасть. Паян çĕр каçма та памарĕç. Сирĕнпе сывпуллашма кĕтĕмĕр. Япаласем те юлчĕç. Лашине те пĕр начартарах–хине илсе килсе лайăххипе улăштарса кайрĕç. Ку начарпа ăçта çитетпĕр ĕнтĕ. Сывă юлăр – Сы – вă – ă юлăр!   ( Тухса каяççĕ).
МАРИНЕ (Йĕрет). Сывă пулăр.
КĔТЕРУК Ан йĕрĕр-ха. Эпĕ сире каллех илсе килетĕп тесе шухăшлатăп. Эсир инçетре çухалсах ан кайăр. Пурнăç пирĕн майлă та пулĕ-ха каллех...
ÇЕМЕН (Марине йĕрет). Мĕн калать Кĕтерук? Хăй вара тахçанах революционерка-ха. Ы–ых. Самана. Ăна хирĕç кайса пăх-ха. Тен, пирĕн эсĕ тĕрĕс те турăн пулать. Пурнăç кăтартĕ ак. Ун чухне курăпăр ăçта лайăххраххине. Тен, çак пурнăç патне те каллех килсе тухĕç хăйсемех. Халăхпа улталаймăн. Унта пĕр пуç мар – пин-пин пуç пĕрле те.

3 курăну

Павăлсен килĕнче эпи карчăк Уйкуçпа Павăл амăшĕ Праски ĕçсе лараççĕ. Сони – йывăр çын. Праски аран-аран уткаласа чўречерен пăхать.
ПРАСКИ Хура пўртĕн чўречи те хура çав. Нимĕн те курма çук.
УЙКУÇ Эсĕ ма тасатмастăн ăна?
ПРАСКИ Эсĕ хăв-иç аякри ялтан килнĕ пулать те, эп вара кантăк çуса тăратăп-и-ха сан омăнта.
УЙКУÇ Ара, вара мĕн вара? Эсĕ ĕçле, эп ĕçетĕп. Эп такамах мар, санпа пĕр ял хĕрĕсем, тантăшсем çеç. Паян кун та манаймастпăр çав пĕр-пĕрне.
ПРАСКИ (Аран) Э-э, ман-ха сана. Килсе те шаккаса кайăн.
УЙКУÇ (Кулса) Эп сана шаккама арçын мар вĕт. Мĕн калаçатăн эс?
ПРАСКИ Эсĕ хăв мĕн калаçатăн? Санран тем те кĕтме пулать.
УЙКУÇ Ара вара. Эсĕ те кая юлмастăн. Çавăнпа пĕр-пĕрне манаймастпăр. Шăп та лăп пĕр пек.
ПРАСКИ Эп сан пек-и?
УЙКУÇ Ара вара. Ман пекех.
ПРАСКИ Вăт шойттан. Эс ача чухне шапана олăм пĕрчипе карăнтарса нуша кăтартрăн.
УЙКУÇ Эсĕ вара лĕпĕше çурмаран пайларăн.
ПРАСКИ Ан калаç-ха. Хытă ан шавла-ха. Мана кин мĕн калĕ кайран?
УЙКУÇ ара вара. Атя ĕçер, капла тавлашса кайса ватлăхра сивĕнсе кайăпăр.
ПРАСКИ Санран сивĕнмелле пулнă пулсан, эс ман савнине савсанах сивĕнме пулатчĕ. Сана пола çак çолсăр, холаран аякри тĕттĕм яла лекрĕм те.
УЙКУÇ М-ĕ-ĕн? Мана пула? Вăл Сантăр никама та юратман мансăр пуçне.

ПРАСКИ Пит пĕлен арçын юратнипе юратманнине. Сан чухлĕ мана та юратнă.
УЙКУÇ Ара вара. Санпа çывăрнă-ха вăл.
ПРАСКИ Çывăрни – туниех мар-ха та, çапах та эп çирĕп хĕр пулман пулсан... Вăл паллах ман пулатчĕ. Эп ăна сан чухлех савман çав. Аттуш ара вара пулатчĕ.
УЙКУÇ Эп сана «Ара вара» тухататтăм çеç.
ПРАСКИ Ара. Унран та хăрарăм полĕ.
УЙКĂÇ Хăрамасăр, Сантăра эп тахçанах хам çумма çыхса хурсаччĕ-çке.
ПРАСКИ Ара вара. Тĕшмĕше аван пĕлен пулсан, ма тата стариккуна вăхăтсăр пурнăçран каймалла мар тăваймарăн. Лăпăртататăн çав. Мĕн телейŭ пор-и? Ман пекех хура пўртретчĕ-ха эсĕ те малтан.
УЙКĂÇ А-а халь. Халь (хăлаçланса) тата аванрах пурăнма пуçлатпăр.
ПРАСКИ Манăн та Павăл ывăл пур. Арçынна вăрçа илсе кайса пĕтерчĕç. Микулай патша вăрçи çирĕ ун поçне.
УЙКУÇ Павăлăнне те çиет.
ПРАСКИ (Чĕвĕлĕнсе) Ах, шуйттан поçĕ. (Ухват илсе хăваласа ярать). Кай! Тухса кай контан! Эс пире телей сунмастăн. Ыррине нихçан та каламастăн. Сана тĕшмĕшŭ пĕтертĕр хăвна. Пăсташ пуçĕ.
УЙКУÇ (Кĕпине çĕклесе кутне çапса кăтартать те тухса тарма хатĕрленет). Куртăн-и çакна? Ухмах, кахал, măран хĕрарăм. Нимĕн те ăнланмастăн вĕт эсĕ. Тĕшмĕш мар, вăл – физика -математика ман пуçра шутласа кăларать çын пурнăçне.
ПРАСКИ (Хытса) Ара вара. Мĕ-ĕн? Мĕн калаçатăн эсĕ, Уйкуç? Ăсран тайăлтăн-им?
УЙКУÇ (Каялла çаврăнса) Эпĕ мар, эсĕ мана ăнланмастăн. Вĕт эпĕ сана усал каламарăм, сан ывăлун пурнăçне манăн пуç шутласа кăларчĕ. Эсĕ çывăх тус тесе çеç каларăм. Теприсене пулсан... Шиш калатăп. Каламас.

ПРАСКИ Эсĕ вара тĕшмĕшне мĕн тетĕн-ха? Хисик- матик тетĕн-и-ха?
УЙКУҪ Халĕ физика- математика аталанма пуҫланă. Ăна пĕтĕмпех пуҫ шухăшласа тупать тет. Пирĕн пек пĕлекенсене тĕпчемелли те пулать тет.
ПРАСКИ Эс чăн та, ара вара, ăслăрахчĕ пуринчен те, вĕренменни ҫеҫ пĕтерет ĕнтĕ.
УЙКУҪ Ачана вĕрентетĕп, опис-сательно.
ПРАСКИ Описачи вĕретмелле те пурне те. Анчах сан ачу ăслинех каламарĕҫ-ха ялта.
УЙКУҪ Эҫе. Сантăр мар-и. Каснă лартнă вăл. Ухмахран мĕн илен? (Макăрать) Ача та ухмах пулчĕ ҫав. Хам пек мар. !Пĕртте хам пек мар.
ПРАСКИ Кил, тусăм, ан йĕр-а. Макăрма ман коҫҫоль те ҫок. Старикшĕн макăрса коҫҫăр пулса лартăм ĕнтĕ. Соккăр пулманни ҫеҫ–е. Кил-ха, кил сĕтел хошшине
УЙКУҪ Праски, ĕҫер. Эп ĕҫме юрататăп. Тавси, Праски.
ПРАСКИ Тавах, саван пулсан – тĕппипех ĕҫ.
УЙКУҪ Ĕҫетĕп, ĕҫме ăс кирлĕ мар.
ПРАСКИ Эп вăт ăслă мар, ĕҫес килмест.
УЙКУҪ Сан,Праски кран пур.
ПРАСКИ Эс урăх ан ĕҫ-ха. Мĕн пăтранан. Мĕн кранĕ? Вăл мĕн тата?
УЙКУҪ Карланкă. И вҫо.
ПРАСКИ карланкăна халь кран теҫҫĕ-и?
УЙКУҪ Тăмана мар-и?
ПРАСКИ Тăманана калаҫҫĕ-и?
УЙКУҪ Сана.
ПРАСКИ Нимĕн те ăнланмас (Пырне,пуҫне тытать).
УЙКУҪ Ҫитĕ, кран ҫук та хуйхи ҫук, ĕҫмелли те урăх ҫук. Каям. Каҫпа ҫут капансем чупма пуҫлĕҫ. А–а, тăхта. Каймас паян. Физика кайма хушмасть. Ҫĕрле ҫĕтсе каятăн тет-е.
ПРАСКИ Халь каҫ пуличчен вăхăт нумай.
УЙКУҪ Апла каятăп. Вăрманта выртса канатăп та, ҫитетĕп.

ПРАСКИ Вырттарма та вырăн çок пирĕн сан валли. Хамăр та аран шăнăçатпăр, ара-а вара пўрчĕ пит пĕчĕк-çке.
УЙКУÇ (Тухас тесе тумне илет). Сывă юл. Сывă юл, тусăм, тек ку юлашки тĕл пулу пулчĕ ĕнтĕ. Эсĕ те нумаях пурăнаймăн, шăпана патша вăхăтĕнче пўкле вилĕм илет сана, мана та Сталин текен патша хăй патне илсе кайса пĕтерĕ. Юрĕ-юрĕ. Чипер юл. Эп пакăлтатни çеç пултăр. Чăнни аванни çеçе пултăр, усаллине ан итле. Ăсат.
ПРАСКИ Мĕн мăкăртатакан пулса кайнă эсĕ. Ĕлĕк сисмен сана ун пеккине. Йорать, чипер кай.
УЙКУÇ Праски, эс кала-ха, мĕн çаплах о-па калаçма пăрахмастăн эсĕ? О-та о.
ПРАСКИ Конта çапла клаçаççĕ. Йорать . Чипер кай.
Павăл Апай, камара полчĕ ку?
ПРАСКИ Хосах ялĕнчи тантăш хĕр пулни-çке.
Палламарăн-и? Ăçтан паллан. Ĕççех кая пуçланă вăл.
ПАВĂЛ Паян эпир лаша вити туса пĕтертĕмĕр. Клохоз валли пуçтарнă лашасем малалла эпĕр тунă витере полаççĕ. (Çăвăнма пуçлать). Тьфу! Тусанĕ кив хăмасенчен тухать. Çилне такам хăвалать тейĕн. Юрать-ха. Хăш кун канни пор вара. Ялан çапла ывăнатпăр. Паян ывăнни таçта кайрĕ тейĕн. Çăнăх пачĕç вĕт. Сони, часрах çăкăр пĕçерсе çиесчĕ. Малалла çапла пĕчĕкшерĕн çимелли парасса шантараççĕ.
СОНИ (Кĕрет) Илтрĕм-ха.
ПРАСКИ Илтрĕн пулсан ара вара чуста çăрма хатĕрлен.
СОНИ Эпĕ часах (Шыв витри илсе чĕрес патне пырать те авăнса аялалла тĕшĕрĕлет).
ПАВĂЛ (Чупса пырса тытать) Чиперех-и? Ан хăрат-ха мана.
ПРАСКИ Мĕн хăрамалли. Пĕрре мар-иç. (Мăраннăн уткаласа) Çăкăр пĕçересрен хăраса та ўкрĕ. Мана пĕçертĕр тет ĕнтĕ.
ПАВĂЛ АПАЙ! М-ĕ-ĕн?! калаçан?! Вăл тăраймасть те -çке...

ПРАСКИ Хӗсӗр пулман шуйттан. Выҫтарса вӗлересшӗн пуль. Ҫине-ҫине ҫуратать теперьччӗ.
СОНИ АХ... А–а-а! Павӑл, эпӗ йӗпентӗм.
ПАВӐЛ Апай, мӗнле юрамалла сана, эсӗ юри котӑнлашатӑн. Саншӑн ҫоратни те аван мар, ҫоратманни те хӗсӗр качака. Епле юрамалла-ха сана?
СОНИ А–аа! Аннеҫӗм, ӑҫта эсӗ? Павӑл илсе кай мана эп ҫуралнӑ яла. Эпӗ кунта вилсе те выртӑп. Малтанхине те аран ҫуратрӑм та, ку тата йывӑр пек.
ПАВӐЛ АН хӑра-ха. Йӗркеллех полӗ.
ПРСКИ Вилӗм ҫитесчӗ сана пӗреххут.
ПАВӐЛ (Тарӑхса) Шойттан мар-и эсӗ?!
ПРАСКИ (Ҫӗмӗрӗлсе) Шойтанӗ сан. Выҫтарса вӗлерет ӗнтӗ.(Урамра ҫынсем пухӑннӑ, чӳрече умӗнче вӑрттӑн итлесе тӑраҫҫӗ).
ПАВӐЛ Мӗн ҫӗмӗрлен? Пулӑш Сонине вырӑн ҫине хума. Саккисене пӗрлештер-ха. Вырӑн сар, вырттарар.
ПРАСКИ Ҫорат, ҫорат. Выҫтарса вӗлер пире. (Вырӑн сарать. Лайӑх ҫиттине туртса кӑларать те ҫӗтӗккине сарать). Пырать ӑна. Мана ун пеккине те сарса паман. Картара ҫуратнӑ эпӗ Павӑла. Вырттар, хатӗр.
ПАВӐЛ Тавах, апай. Ҫитӗ сана вӑрҫса. Ҫоралакан ачи те иккӗмӗш ҫеҫ. Пӗр ача пурлӑх мар, ик ача пӳлӗхлӗ. Сонине ҫоратма ҫӑмӑллатас тесе тӑрӑшмастӑн, епле хӗрарӑм эс.
ПРАСКИ Ай! Уй! Эп осал! Эсӗр лайӑх. Караол! Мана килтен хӑвалаҫҫӗ (Мӑран чуппипе васкаса тухса тарать).
СОНИ (Ыратнипе айлатса сывлать).
Урамрисем Праски тухнине курса тарса сапаланаҫҫӗ.

4 курăну

Çуркунне. Ирхине хĕвел хĕртет. Шарлатса шыв юхать. Мăнкун эрни пырать. Пурте таса шурă кĕпесемпе çÿреççĕ.Кĕсйисене çăмарта улăштарма, хĕвел çаврăнăш, мăйăр чикнĕ. Урампа иртнĕ чухне кашниех хăйĕн кĕсйине çапса кăтартать. Ачасем шавлани, выляни, юрлани, такмаклани янăрать. Йытă вĕрсе ярать, унтан улама пуçлать. Хĕвел куçса пырать. Кăнтăрла еннелле сулăнать. Павăлпа Сони савăнăçлăн сĕтел çине çимеллисем хатĕрлеççĕ. Икĕ ачи сĕтел çине кармаша-кармаша илсе кĕсйисене тултараççĕ.

СОНИ Ах, ачамсем, эсĕр паян пĕтĕм çимĕç-е урама илсе кайса пĕтерес тетĕр-им?

ПАВĂЛ (Ачисене пуçран шăлса). Сони, ан шарла, паянхи кун çулталăкра пĕрре пулать. Вăл пире çăлма килнĕ çыннăн уявĕ, Мăнкон. Çав конта вăл вилнĕскер чĕрĕлет. Оншăн эпĕр савăнатпăр, ачамсем те савăнччăр.

СОНИ Ах, Павăл, он пекех йорамасть. Ыран та çияс килет -çке. Çималли номай мар.

ПАВĂЛ Çапла-ха та. Христос конне-çке çынсем пек irттерес килет. (Шаккани илтĕнет)

ПАВĂЛ Кĕрĕр. Кам ара ко?

ПРАСКИ Эпĕ-ха, ывăлăм. Кĕме йорать-и?

СОНИ Карчăк корнăçлансах кайрĕ.

КĔТЕРУК Вăл пирĕншĕн шаккарĕ.

СОНИ Э-е. (Савăнса) Инки, Слава, Яша, иртĕр.

ПАВĂЛ Кĕтерук инкисем килчĕç, аван. Эпĕр чохăнсем тесе ниçта та тухмасăр ларатпăр.

КĔТЕРУК Çиме çăкăр пур-и?

СОНИ Пор-ха халь.

КĔТЕРУК Ыранхине Турă пĕлет.

ПРАСКИ (Мăранннăн) А-ра иртсе ларăр çакăнталла,

тăхлачă.(Пурте иртсе лараççĕ). Ват тăхлачи епле порăнать-ха?
СЛАВА УЛЬЯНА аппи-и? Сиккипех чупать.
СОНИ (Кулса) Ан суй-ха.
ЯША Мĕн тен? Вилсе чĕрĕонĕ пулсан, халь унăн çĕнĕ çулĕ сахал-ха. Халь çĕнĕрен шутламалла. Пи-ит нумай пăрăнмалла унăн.
КĔТЕРУК Çапла. Эпир мĕн тунине йăлтах пирĕнпе пĕрле чупса тăвать. Сталин грамотине тивĕçрĕ вĕт. Ун пек çулхисем колхоз тунă чухне кăмака çинче ларчĕç пулсан, вăл вара пирĕнтен малта хăш чухне пычĕ: ăспа та, ĕçпе те.
СЛАВА Энтри пичи ăслă пулнă та хăй, арăмне те ăслине шыранă.
СОНИ Пирĕн вĕсем ăслăччĕ, эпир вара таçта çохатрăмăр вĕсен ăсĕсене.
ПАВĂЛ Э-е... Хĕрарăмсене пар сăмах, вара пĕтрĕ порнăç.
КĔТЕРУК (Павăл çине тĕлĕнсе пăхать) Ку тата мĕнле тĕлĕнтермĕш? Ку пире улталанă-им? Калаçма та пĕлместчĕ. Халь кур-ха.
СОНИ (Именсе) Вăл мана тĕрĕсленĕ имĕш.
СЛАВА (Кулса ) Яша, каламан-и вара?
ЯША Ма ман?
СЛАВА Эсĕ вара чăн-чăн партизансен разведчикĕ. Эп пулсан тем тесен те чăтайрас çук.
ЯША Мĕн. Мана хушман калама, хушман. Хушнă пулсан пурнăçламаллаччĕ.
ПАВĂЛ Каллех таçта кĕрсе каяççĕ. Йорĕ сире, тавай тăвар мăн кон. Пирĕн вăл пĕрре килет. Ошкăнпа савăнма та аван.
СОНИ  Йорĕ, вырнаçса ларăр. Пĕрле савăнар мĕн поррипе.
КĔТКРУК Яша, кучченеç ăçта пирĕн?
ЯША Эп часах. Эп ăна çенĕкех хăварнă манса, ура

тасатма пикеннĕччĕ те кучченеç çинчен мансах кайнă.
СЛАВА Э-х, арăмна та çухатма пултаратăн кун пек.
ЯША (Тухас умĕн) Çук. Арăма çухатас çук-ха, çукки пĕтерет.
ПРАСКИ Çам-рăк-сен полĕ-ха, пирĕн он пирки шотлама та çок.
КĔТЕРУК Тăхлач, эс те тупасшăн-и?
ПРАСКИ Чăрмантармĕ та-ха.
(Сонипе Павăл пĕр-пĕрин çине пăхса илсе кулаççĕ).
СЛАВА Куртăр. Пурнăç ватăлмасть тăхлачăн, аван.
ПАВĂЛ Çитĕ-çитĕ, тытăр ĕçмелли-çимелли. (Яша кучченеçе илсе кĕрет те Кĕтерука тыттарать. Вăл ват тăхлачине парать. Праски тĕпеле илсе кайса хурать)
ПРАСКИ (Тĕпелтен чашăкпа тухса) Ай, епле чаплă пирошкисем туса килнĕ, çухусем тата аван хăпарса пиçнĕ.(Çуху хуçа-хуçа илсе Аки-сухи юрласа ĕçкĕ пуçлаççĕ. Ачисем каллех чупса кĕрсе сĕтел çине кармашаççĕ).
СОНИ (Çапса) Çитĕ сире, марш контан. (Ачисем кăмăлсăррăн тарса пытанаççĕ).
ПРАСКИ Ачасене çын килсен тарса пытанма вĕрентсе çитерейменĕр. Халь çын омĕнче вăрçа ларăрах.
СОНИ Тĕрĕс те, анчах порне те тӳрех ăса хума çок. Вĕсем хăна килнине корнă-и-ха?
ПАВĂЛ Ĕçĕр-çиййĕр, корма лартман. Тыт-ха, тосăм, ĕçсе пар, Яша, унтан ыттисене ĕçтерер. Хăвăртрах.
СЛАВА (Юрлама пуçласан, пурте пĕрле юрлаççĕ).
Ыт хуринчи  хыт хурине
Кам  шухăшлать çава тытса çулма?
Пирĕн пек чухăн ай, çынсене
Кам хурать ай, çын выранне?
КĔТЕРУК Мĕн эсир, тăвансем, эпир тек ухмахла пурнăмăпăр. Чухăнсен те пурнăç кайрĕ. Вĕсене хисеплеме пуçларĕç.

ПАВĂЛ Хисеплеттерессин хамăртан килет те... Анчах пĕр шухăшлă пулманни пĕтерет. Халăх сурать, кӳлĕ пулать тесе ахальтен каламан.
СЛАВА Чăн тĕрĕс. Пĕччен мĕн тăван?
ЯША Каç пулать, каяр пуль. Ыран пирĕн колхозра ĕç нумай. Хуларан пуçлăхсем килеççĕ. Кĕтерни патшан пирĕн ĕç халь пуçлăх ĕçĕ вĕт.
СОНИ Инки, эсĕ халь колхоз председателĕ пулатăн-и?
КĔТЕРУК Пĕлмес-ха, ыран çирĕплетме килмелле.
СЛАВА Çапла-çапла. Халь эпир уншăн «в ответе» терĕç.
ЯША «Волосок ее не должен упасть» терĕç пире Славăпа иксĕмĕре. Вăт эсир арăм пирки калатăр, кунта арăмсăрах кама сыхламалли пур.
ПАВĂЛ Эп сире ăмсанатăп. Эсĕр сиккипех социализм çулĕпе пыратăр. Пирĕн конта арантарах. Колхоза эпĕр çеç кĕнĕ-ха. Ыттисем шохăшлаççĕ терĕ холаран килни.
СОНИ Эсĕр контан кайнă чохне асăрханса кайăр.
КĕТКРУК Ан пăшăрханăр. Пĕрре вилсен, иккĕ вилес çук.
ПАВĂЛ Эсĕр чипертерех. Сонин ахальте никам та йолман, манăн çок. Тăван тăварлă, тăвар ялан кирлĕ, тăван та çаплах. Ак епле Мăн кон уявĕ полчĕ пĕрле, пĕччен лар-ха уявра.
ПРАСКИ Павăл тĕрĕс калать. Сыхланакана Тор сыхлать. Çаплах. («Праски юрри» (34с.) юрлать. Сăра ĕçтерет).
КĔТЕРУК Тавси, тăхлач, ĕç-ха хăв. Ĕçмасĕрех юрлатăн.
ПРАСКИ (Шалтах хурать. Эрехне те ĕçет). Пуçах кайрĕ вĕт. Йоррине эпир ĕçсе йорламан-ха нихăçан та.
КĔТЕРУК Чăваша ӳсĕртме пичке кирлĕ. Пирĕн вара бидон çеç. Чăваш четвертьне те ĕçмест, пички çинчен ĕмĕтленмест. Ăна ĕç пултăр. Вырăссем тĕлĕнсе кайнă эпир ĕçлениннчен. Вĕсен хытă ĕçеççĕ, тет, начар ĕçлеççĕ тет. Пире ялан мухтаççĕ. Чăваш пек халăхпа пуян пурнăç тума пулать теççĕ. Апла пулсан тăватпăр.
СЛАВА Утмалла пек-и, Тăвансем. Каç енне кайнă вăхăт кăмакара çунакан вутă пекех, çут кун кĕл пек сапаланать.

КĔТЕРУК Каяр-каяр. Тухрăмăр. Тав, сире тăхлачă, кĕрӳ,
Сони хĕр пултăр.
СОНИ Ятласа ан кайăр, инки. Аван çӳрĕр. Ăсатар-ха.
ПРАСКИ Кин, кочченеç пар-ха.
КĔТЕРУК Çук-çук, ачасене пултăр. Пире ним те кирлĕ мар.
Шушкă, премĕк, канихвет пĕр ещĕк илсе килсе панă пире
Шупашкартан. Çавна сире çитерес тесе анчах килтĕм.
ПРАСКИ Ай, унта пылак та хонă эсĕр. Эп пăхмарăм та.
СОНИ (Хунямăшĕ çине пăхса илет). Ачасем пĕлесрен
пытармарăн-и?
ПАВĂЛ Йорĕ-йорĕ. Вĕсене те парĕ-ха. Хăй те пĕчĕк ача-
иç.
КĔТЕРУК Май килсен сире пулăшма тăрăшăп-ха. Эсир
хăвăр та пырăр. Тен, кунтан куçса пыратăр? Пирĕн килте
пурăнма пулать.
СОНИ Эпĕ таçта кайсан та хам килте полас çок ĕнтĕ.
КĔТЕРУК Юрать сана. Çитĕ хурланма ялан, çывăрса
çуралнă хĕр. Ну, юрĕ. Чипер юлăр. Çитĕр пирĕн паталла.
Сирĕнсĕр ман никам та çук. Эсир пĕлетĕр. Ман аттепе-
анне çинчен нимĕнле хыпар та илтĕнмест. Чун ыратать:

Чун хурланать, чĕре юрлать.
Атте-анне панă чĕре.
Ăçта-ши ман, атте-анне?
Мĕнле пĕлес халь ăçтине?

Ах, кил карти – çын ĕç карти.
Картипеле хур кайăксем.
Ăçта эсир вĕçеттĕр-ши?
Хурлăха сисеттĕр-ши?

Кашниннех пур măшăрĕсем.
Мана валли Тур çырман-ши?
Чун савнине калăр-ха,
Антăр курма улăха. (Йĕрет).

ЯША Ма çак юрра юрлатăн, эсĕ? Кашни юрламассерен юхать куççулю.
КĔТЕРУК Юрать–юрать. (Куçĕсене шăлса, пуçне чикет).
ПРАСКИ Мăшăрсăр такама та çăмăл мар. Торă ахаль шотласа кăларман мăшăрланмаллине, ачамсем. Мĕнле Мăн кон полтăр йорăсăр. (Юрлать).

Отмăл хăма ай, пĕр кĕпер
Каçса та вĕçне ай, çитрĕмĕр.
Отмăл çулхи ай, ĕмĕрне
Пор(ă)нса та вĕçне ай, çитрĕмĕр.

Отмăл çулхи ай, ĕмĕрне
Пор(ă)нса та вĕçне ай, çитрĕмĕр.
Йăвăр, кĕске ай, ĕмрине
Çилам порнса ай, пĕтрĕмĕр.

Йăвăр, кĕске ай, ĕмрине
Çилам порнса ай, пĕтрĕмĕр.
Ĕмрипеле ноша корнине
Тор ыр вилĕм парĕ-ши?

СЛАВА Ай, ваçка, кинеми мĕн юрать? Каяр-каяр. Халех тухса каймасан тата вилсе те кăтартас тейĕ. Епле юрă пулчĕ ку? Халĕ пирĕн те пурнăç аванланать. Эсĕпур, кинеми, вилесшĕн. Чипер юлăр.
СОНИ Вăл хăй юрлама пĕлет çапла сăвăлласа. Тĕлĕнмелле пĕлет çыпăçтарма.
ЯША Матттур. Епле калать юрри.
КĔТЕРУК Ват лаша мар-и? Ват лаша. Каяр, ачамсем.
ПАВĂЛСЕМ Çул куркине тытса парăр-ха. (Кĕвĕ тепĕр хут).

5 курăну

Çуллахи ирхи шуçăм хăрушла хĕрелсе ларнă.
(Урамра чан çапни, çуйăхни, макăрни, «Вăрçă» – тесе кăшкăрни илтĕнет.

СОНЯ Павăл, таçта пушар пырать пулас, вăран-ха, тăр-ха.

ПАВĂЛ (Хăврăрт тăрса тумланать те урама тухса чупать). (Кĕçех каялла кĕрет). Вăрçă. Вăрçă пуçланнă. Ку Çĕршывăн Аслă вăрçи – тĕнчен иккĕмĕш вăрçи пуçланнă.

СОНИ Турăçăм, хăтар мана мĕн пур хура куççельрен.

ПРАСКИ Хура пурнăçран та ,
Хура куççульрен те хăтараймасть пире Торă.

ПАВĂЛ Вăрçă поçланман полсан, аванах полмаллаччĕ-ха та...

ПРАСКИ Кин, мĕн пăхса ларан. Хатĕрле опăшкуна çола кайма.

СОНИ (Йĕре-йĕре тутăр кĕтеслет, унта çуху, çĕр улми тата сало хурать). Ме тыт, Павăл.

ПАВĂЛ Ан йĕрĕр-ха. Ытла та чона касать сирĕн çинче сасă. (Çыххине илет те пурне те ыталасан тухса каять).

СОНИ (Выртса йĕрет).

ПРАСКИ Мĕн йĕрсе выртан. Кай шу патне.

СОНИ Эх, анне, шывне шыв лупашкине кайса ятăн-им? Каçхи тултарса лартрăм чана.

ПРАСКИ Катка шăтнă, тултар çавна!

СОНИ Мĕ-ĕ-н? Шăтнă каткана шыв йăтас-и?

ПРАСКИ Кин полсан, йăтан, мана та çаплах тонă! Опăшкаран çакăнма вĕреннĕ ато.

СОНИ (Куççульне шăлса ларать. Каç пулса килет).

ПЎРТРЕ. Сони титрпейленĕ килте аван та таса. Шап-шурă çиттисем витнĕ вырăн çинче икĕ ача çывăрать. Сак çинчи пĕр вырăнне чĕрке пек пуçтарса витсе хунă.

СОНИ Манăн ĕнтĕ икĕ ача. Вĕсемшĕн те хуняма çисех ярать. Павăл çукипе усă курса татах курайми пулчĕ. Çынсене ялта темĕн те калать, элек çине элек сарать. Унччен Павăлпа ялан вăрçтаратчĕ. Халĕ хам Павăл вырăнне лава та, сухана та – вопшĕм пур ĕçе те , пур çĕре те хамăр, хĕрарăмсем, тăватпăр. Вутта та каятпăр. (Кантăкне шăлса чўречерен пăхать). Ав каяс çынсем хăпарса кайрĕç. Паян Канаша лашапа вăрлăх тырă илме каймалла. Çиме те çук, вăрлăх та сахал, мĕнле ку тырра туса илмелле-ши кăçал? (Тухса каять).

ПРАСКИ Йĕксĕк! Мана выçтарса вĕлерет ĕнтĕ. Хăй тухса каять те тутах çўрет пуль. Ват çын пирки шутламасть те. Паян ак пĕр пĕрчĕ çăкăр та çук. Икĕ татăк ик ачине пачĕ-ха, вăл ĕнтĕ икшер çăвар шăпах пулать. Вĕсенчен туртса илеймĕн, çăварне кĕрсе пăхас-и? Кине те ятлам мар-ха. Ăçтан пăхтăр пире ? Мĕнпе? Арçын ĕçне ĕçлесе те çимелли çук ун. Пĕр чĕл çăкăршăн та пайтах шăнать-çке кин. Эпир вара тăваттăн. Çитмест кин ĕçлени. Пĕр кун пурăнмалăх çăнăх пĕртакшар памалла терĕ-ха. Кине йăпăлтатса халь тин епле çием ун çăкрине. Хăйĕн те çук. Çиес килнине урăх чăтма çук. Хамах айăплă тесе çырăттăм, çырма пĕлместĕп. (Пăяв илет те мăйĕ çине хурать).

ВЛАССА (Шаккать). Ман килес. Кĕме юрать-и?(Праскине пўкле вилĕмпе вилнине асăрхать). Ка-а-ара-у-ул...(Унтан урамалла вирхĕнсе тухать те çынсене чĕнсе кĕрет). Сони амăшне çакса хăварнă! Курăр-ха! (Ватăсем аран кĕштĕртетсе пухăнаççĕ).

КАРЧĂК (Праскин аллине тытса пăхать) Сони ирех кайрĕ-çке, ку вара халĕ те ăшах. Хăех çакăнчĕ пуль. Чирлеме те чирлесех кайман-ха вăл мăранкка, хырăм выççи пĕтерчĕ пуль?
ВЛАССА Эп юнашарта веçех куратăп. Сони çитермест.
СТАРИК (Кăштăртатса). Сони çитермест мар-ха, хăй те мĕн çиет-ши те.
СОНИ ( Ĕçрен таврăнать каçхи. Тĕттĕм). Хуняма çынсене пухакан марччĕ-çке. Мĕн пулнă-ши? (Кĕрсен хăраса каять). Каçар, анне, пăхаймарăм сана. Павăл мĕн калĕ-ши?
ВЛАССА Илтрĕр-и? Мĕн калать. Каçару ыйтатаь. Хăй вĕлернĕ.
СТАРИК Тьфу! Сан чĕлхÿне хурт тапăннă пуль?
КАРЧĂК Хурт та ларас çук ун чĕлхи çине. Ытла та майсăр çак матка. Ăçтан тупса килчĕ ăна Иван суккăрскер пек. Арăм илме те пĕлмеççĕ хальхи арçынсем.
СТАРИК Хăйĕнчен икĕ хут пĕчĕккине тытса чарма аван тенĕ ĕнтĕ вăл.
КАРЧĂК Хăйне чараканни пулмасть тенĕ пуль?
ТЕПРИСЕМ ХА-ха-ха.
ВЛАССА (Ун-кун пăхкалать те, пурте шăл йĕрнине курсан шăвăнса тухса тарать).
МИЛИЦИОНЕР (Кĕрет, пăхса çаврăнать те, пăявне татса ярса Сонипе майласа хураççĕ. Унтан хут çырать те тухса каять).
СТАРИК Кин айăплă мар, милици. Çаплах çырса хор. Вăл килте пулман, ирех лашапа Канаша кайнă. Ăна ан айăплăр.
МИЛИЦИОНЕР Юрĕ, çаплах çырса хурăп, эсир хăвăрăн ятăра-шывăра калăр-ха.
КАРЧĂК (Старикне килелле туртса) Атя киле. Мĕн ĕç пур санăн. Ак хăвна турттарма пуçлаççĕ милицине. Вĕсем патне лек кăна, тасан тухаймăн кайран. Торра шĕкĕр те, ку таранччен лекменнине лекес марччĕ. Атя, старик! тенĕ

мар-и сана? Мĕн хыпма килтĕмĕр кунта? Милици таврашне курсан аякран тарма хушнă ĕлĕк-авалран. Унта темле лайăх çын пулсан та ырă пулма пăрахать.
СТАРИК Тăхта-ха, тăхта, карчăк. Çăпата кантри çине пусса лартрăн. кайса ўктĕр тетĕн-им?
КАРЧĂК (Шăппăн) Вăл пур чухне вăхăтлăха вилсе кайнии те аван.
СТАРИК  Мĕн пакăлтататăн?
КАРЧĂК (Сони макăрса ларнине асăрхать те) Ара-иç. Сони айăплă мар тесе çырмалла. Пĕтĕм ял-йыш пĕлет. Ку килте нихăçан та апат çителĕклĕ пулман. Çапла порнăç пирĕн кунта пирĕн те. Çыр, çыр. Кўршисем те, ялĕпех пунятийсем те. Эпĕр ял ятне ямастпăр ĕнтĕ. Кин кунта чухăна килнишĕн айăплă мар. Вăл ытти арăмсем пек ача та ĕмĕртсе лармарĕ. Уя хунямăшĕ йăтатчĕ кăкăр çитерме.
Çапа х кин килте ларса курмасть пулин те çимелĕх ĕçлесе илеймест. Çавна та çыр эс, милици.
МИЛИЦИОНЕР Çыратăп, çырма хушсан.
КАРЧĂКПА СТАРИК  Çыр! Çыр, ачам. Ăнлансах çыран пулсан.
МИЛИЦИОНЕР Кун пек калаçнăшăн сирĕн явап тытмалла пулать.
КАРЧĂКПА СТАРИК Мĕн терĕмĕр вара эпĕр?(Пĕр-пĕрин çине пăхса куç хĕсеççĕ те). Ним те каламан. Çок. Çок. (Тухса шăвăнаççĕ, вĕсем хыççăнах милици хутне çыра-çыра утать. Вăл хыçалтан пынине курса).
СТАРИК (Карчăкне хăлхаран).  Халь лекрĕмĕр.
КАРЧĂКĔ ( Çаплах хăлхаран). Лекмеллипех лекрĕмĕр. Каларăм вĕт. Вĕсен пакунĕ кĕпи çумне лексен, усалĕ чунне кĕрсе ларать тет-е?
СТАРИК Тет! Тет! Ут. Шуйттан карчăкки, пĕр стакан сăрапа ўсĕртсе ярать. Сан сăру кăрчама пулчĕ пуль! Систерме айăкран тĕкет карчăкне).

КАРЧĂК Пулчĕ пуль. Эс мĕн?
СТАРИК  Ара (Милици каясса кĕтсе), ара. (Вăл иртсе кайсан, ӳсĕре пер).
КАРЧĂК Ара-а, старик, ан ятлаç-ха. Ĕçсен кăрчама мар, сивĕ шыв та ӳсĕртет.
СТАРИКПЕ КАРЧĂК (Лешĕ курăнми пулсан) Фу! Аранах курăнми пулчĕ. Вăт хăнкăла-тăк,  хăнкăла. Курăнми пулсан та шăршă çапать вĕт. Тьфу! Мур илесшĕ!
СТАРИК  Халь тартăмăр пуль-ха та. Килĕшсен, ыран та тупать.
КАРЧĂК Çăпан тухтăр сан чĕлхӳне!
СТАРИК Санăнне ан тухтăр. Эсĕ ал çине тухнă çăпана та аран чăтса ирттертĕн, мана вара чĕлхӳ çине тетĕн-и?
КАРЧĂК Аранах пĕтрĕ паянхи кун. Ытла та йывăр полчĕ.
ТЕПĔР КУННЕ ВИЛĔ ПЫТАРНĂ ÇĔРТЕН ИКĔ МИЛИЦИОНЕР КАРЧĂКПА СТАРИКЕ ТЫТСА КАЯÇÇĔ. ВИЛĔ ХЫÇÇĂН УТАКАНСЕМ ПУРТЕ ВĔСЕМ ХЫÇÇĂН КАЯÇÇĔ.
МИЛИЦИОЕНР (Каялла çаврăнса) Сире пурне те пĕрле илсе каймалла-им?
(Çакна илтсен пурте пуçĕсене хуплаççĕ те тупăк  енне çаврăнаççĕ, унталла утаççĕ).

6 курăну

ХĔЛЛЕ.

СОНИ (Килте краççын çутипе фуфайкине сапласа ларать). Вут хутас пулать, пытарса хунă вут-çатракана кайса кăларам.(Йатса кĕрет). Ачамсене шăнтса вĕлерĕп. Çынсем çывăрса пĕтсенех вăрмана туха чупатăп-ха. (Саплăкне якатать те, фуфайкине тăхăнать). Чуптарас вăрмана. Миçе хутлăп-ши паян?(Калаçнă май алсишĕсене тата пуян çын тутрине илсе пуçне çыхать). Çак пуян çын тутри пире те çитрĕ-ха та, Павăл. Вăт, пурнăçĕ пире çитесшĕн мар. Йывăр-çке мана. Эс пулнă пулсан, эпĕ пиллĕк хут çĕклени вуннăпа танлашатчĕ. Шел, пӳрмен сана, мана – пурнăç паман çав пире. Нӳши кăна лавĕпех. Пӳрт те шăнса ларчĕ. Кăçал тата уйрăмах сивĕ хаярланать, теççĕ ваттисем. Каймăттăм, ачамсене шăнтса вĕлерес çук. (Чӳречерен пăхать). Тем ман куç улшу курать-и? Е Караçах килет?(Чĕтреме ерет). Турăçăм, хăтар. Мĕн кирлĕ-ши çĕр хута? Халех лава ярать-ши?

КАРАÇ (Шаккать, кĕрет). Кĕме юрать-и?

СОНИ Кĕрех-ха,эппин, кĕрех. Мĕн ĕçпеччĕ? Паллах, ырă ĕçпех килес çук. Ăçта лава яратăн-ха ачасене пăрахтарса?

КАРАÇ (Кулса). Мĕншĕн тӳрех апла ыйтатăн? Лайăх мар шутлатăн. Эпĕ çын куриччен çеç хĕрхенме кĕтĕм. Сана, никам та хĕрхенмест. Эсĕ чухăн хĕрарăм, икĕ ача пур та санăн – урăх нимĕн те çук. Хунямуна çакнă, Павăла вăрçа ăсатрĕ те манчĕ, хăй вара вăрмана лесник патне чупать, теççĕ сана. Ĕненменччĕ. Халь вара ĕнентĕм. Иртнинче çĕрĕпех килте пулмарăн. Çĕр каçиччен сан патне миçе килсе те, а эсĕ вара çук та çук. Ир енне килнĕ пулас эсĕ. Ачусене пăрахсах чупатăн-и?

СОНИ Çапла, чупатăп. Çĕрле ачасем çывăраççĕ-çке. Ма чупас мар. Вăт сан мана кăнтăрла хĕрхенесчĕ. Çук вара, ир пулсанах шаккатăр. Лава каймалла. Сан каймалла,

асли пысăк, кĕçĕнни пĕчĕк. Вара эсир пĕлместĕр пуль, кунĕ-кунĕпе вĕсем выçса лараççĕ, вут хутма çĕрле вăрмана кайса килмесĕр те вутă çук. Кулмаллипех кулатăр. Халĕ те кулма çитрĕн пулать.

КАРАÇ Сони, санăн яту илемлĕ,çавăнпа килтĕм!

СОНИ Мĕн терĕн? Эсĕ мана сыхлама килтĕн-и? Путсĕрсем, çын çиенсем. (Караç, ун патнерех йăпшăнса пилĕкĕнчен ыталама хăтланать, Сони çаврăнать те çупса ярать. Караç тулхăрса каять). Çылăх та çук вара сирĕн, 4 çул вĕреннĕ, начальник тесе çўретĕн. Ăçта санăн намăсу? Мана ыталасшăн тата!..

КАРАÇ Намăс мĕн вара вăл, тĕтĕм мар вĕт, куçа кĕмест. (Караç хаяррăн Сонине ыталаса илет те вăйпа вырăн çине илсе хурать. Сони те пĕтĕм вăйпа кĕрешет).

СОНИ Мĕн, эсĕ мана вăйпа илетĕп тетĕн-и? Çук сана хама вăйпа илтерместĕп. Вилем-каям çакăнтах, санăн айна пулмастăп. (Çакăнтах ачисене вăратмалла кăшкăрса ярать). Ачасем тăрăр: вăрă-хурах, караул! (Ачасем вăранса йĕрсе яни илтĕнет). Караç ăна илтсен, каялла пăха-пăха тухса тарать). Çын, тет, хăйне. Пĕчĕк ачасемпе хăратма пултартăм . Эсрел чунĕ. Халиччен миçе çĕклем çатрака илсе килеттĕм. Ачасем, çывăрăр, çывăрăр. Эпĕ те выртатăп. (Хăй вара тумланса вут йăтма пăяв илсе тухса каять). Часрах кайса килмелле. Паян ирех лавпа тухса каймалла. Миçе çул çапла чăтăп-ши?

## 7 курăну

Çуркунне.

Сивĕ çумăр лĕшкет. Лавçăсем тырă миххисене урапа çине тиеççĕ. Çумăр çăвать.

ПĔРИ Павăл вăрçăран таврăннă, тет.

ТЕПРИ Мĕн таврăнни, кайнă вăл тахçанах. Унтанпа çур çул иртнĕ. Ан шарлăр. Хуçи хăй килет.

СОНЯ (Çитет). Ырă ир пултăр пурне те. Паян манăн мĕнле лаша кӳлмелле-ши? Воронкăна алăран туртса илсе хăплантарчĕç.

КАРАÇ Воронкăна кӳлекенни паян тухмасть. Кӳл ĕнтĕ ăнах. Вăл лайăх туртать.

СОНЯ (Аванмарланса пуçне чикет). Хырăмĕ ыратнăран никам куриччен алăпа шăлса илет. Хăйпе хăй калаçать). Ырра пултăрах. Павăл ятне каланăнах туйăнать. Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ тет. Эпĕ те çавăн пек çав. Караç ав намăсланмарĕ те. Эпĕ вара хама ниçта чикейместĕп. Кайса кӳлес лашана хăвăртрах. Çынсен хатĕр.

(Лавçăсем янраççĕ. Урапа кӳлнĕ лашасем пĕрин хыççăн тепри пыраççĕ. Сони пĕр урапа çинче. Хыçаларах юлас тесе пĕрне ирттерет).

ЛАВÇĂ Эсĕ мĕн, юласшăн?

СОНИ Кумма атте, эсĕ иртсе кай-ха, Эпĕ чирлерĕм!

ЛАВÇĂ Кин, мĕн пулчĕ сана?!

СОНИ Тем чирлерĕм...

ЛАВÇĂ Ыттисем кайччăр, сана пĕччен хăварам мар. (Юнашар пырса калаçать те каллех хыçала юлать).

СОНИ Хăрама хăратăп-ха та. Юрĕ эппин. Ах, ах!..

ЛАВÇĂ Мĕн ара пулчĕ?

СОНИ Вар хырăмĕ ыратать. Пăсăлчĕ пулас.

ЛАВÇĂ Чарар пуль лашасене?

СОНИ Каяр-ха. Тăрар мар. (Хăй урапа çине майлашса выртать, тăрса пăхать, каллех хырăмне шăлать, каллех

выртать. Каç пулса килет те тĕттĕмленме пуçласан та çутă пĕтмест). Ах, ах! (Ача çуралать)... У-а, У-а – а – а!...
ЛАВÇĂ Мĕн. Ах, вара мĕн çинĕ ку Сони? Хытах аптрать пулас. Вилсе каймарăн-и унта эсĕ?
СОНИ (Чĕнмест шăппăн пăшăлтатса кăвапа пыршине шăлпа çыртса татать).
ЛАВÇĂ Сони?!
СОНИ Ар çын ача... Ах, Турăçăм. Çуратрăм. Шăпрах, ачам. Ах, мĕн тума калам-ха? Вăл сиссе юлмарĕ. Кун пек пăрлă сивĕ çумăрта ачана илсе çитерейрес çук. Арçын ачан пурăнас шанчăкĕ сахал теççĕ. Çуралнă çуралман хамăн савăнăçа – хурлăха пĕлтерес мар-ха. (Саппун салтса ачине чĕркет те сăхманне хывса, сăхман ăшне хурать). Тирпейленсе шăлăнса майланса ларать те лашине васкаса чуптарать). Ну! Чуп! Хăвăртрах. Киле!..
ЛАВÇĂ Сони, чиперех-и эсĕ?
СОНИ Атя, хăваллар. Сивĕтсе ячĕ.
ЛАВÇĂ Каçхи çанталăк хĕвелсĕр. Ăçтан ăшă пултăр. Çитменнине халь хĕл çуркуннепе тавлашать.
СОНИ Кумма атте, эсĕ мĕн мăкăртататăн?
ЛАВÇĂ Нимех те мар, хăвалар. Шăнса вилер мар ку сивĕ çумăрлă – пăрлă юрлă çанталăкра.
СОНИ (Хăраса).Тăхта-ха. Тем сисмерĕ-и вăл, старик? Пĕлтерес марччĕ. Арçынсăр тесе питрен сурĕç. Ах, Павăл та çав. Арçынна мĕн ăна? Хĕрарăма пĕтĕм йӳçĕ паракансем кăна çав вĕсем. Ыx, сивĕ-çке. Манăн ачам та çитеймĕ. Хам чĕтрекенех пултăм.
ЛАВÇĂ Сони, теп! Мĕн ара чĕнместĕн?
СОНИ Шăнса кайрăм. Чирлесех ӳкрĕм пулас. (Каллех хăйпе хăй). Мĕкĕте арăмĕ паян мана houses каларĕ пулас. – Тулли мар-и эс, текелет. «Тулли пулсан та нимĕн те калаймаççĕ. Ан йăт-ха михĕсене текен çук. Ара Павăл вăрçăран аманса килсен çултаăк пурăннине пурте пĕлеççĕ вĕт.

Мĕн пытармалли.» Пурпĕрех, халь Павăл çук. Ăна вăрçа тепĕр хут ячĕç. Аран пулин те кураймасăр çăхав çырса, вăрçа ячĕç. Апла пулсан хама та выçса вилччĕр теççĕ. Икĕ ачана усрасан та, выçтарса вĕлермесен тем пекехчĕ...
ЛАВÇĂ Ну, Сони! Яла çитетпĕр. Нумаях юлмарĕ пулас.
СОНИ Çитрĕмĕр! Тавах Турра. (Хăйпе хăй). Çынсем куриччен лаша тăварса, хăвăртрах ачана киле илсе вĕçтересчĕ. Ах, тата унта çынсем тăраççĕ. Эп васкам мар. Пурте лашисене тăварсан, килĕсене васкĕç. Эпĕ тăхтам-ха. Ах, шальмă,кумма атте-иç. Вăл пĕлет эп чирленине. Мансăрăн каймĕ. Манăн вăл киличчен вĕçтерес. (Хăвăртрах анма тăрать те юн кайнипе аптрать). Ай, Турăçăм. Анне. Киле çитер. Хутланса илет те пуçри тутăрне аяла хурса лашине тăвармасăрах тарать.
ЛАВÇĂ Сони, Сони! Эсĕ лашине пăрахса кайрăн-и ара? Пĕрле ярас тенĕччĕ сан лашуна та. Юрĕ – юрĕ. Чупрĕ пулас. Каях – кай. Мăнтарăн. Хытах чирлесе ӳкнĕ пулас. Ун пек маттур хĕрарăм, ĕçчен кин ялĕпе те çук. Пĕр – пĕччен ĕçлесе çемье тăрантарать. Ах, шельмăна шел те... Хăй вара маттур. Эпĕ лашине пĕрле хупма илсе каям-ха, эппин. Ах-хах-хах... Йывăр çав хĕрарăма.Эсрел вăрçи, пире кашнинех çапла пĕрерĕн пĕтерет ĕнтĕ.(Лавĕ çине пăхсан, улăмне пуçтарма тăрать те юн асăрхать... Çине-çине çутă мĕлтлетет, старик хĕрарăма шелленипе пуçне пĕксе сулла-сулла илет...) Шальмă...

8 курăну

Ирхине. Сони килĕнче. Пĕчĕк пӳртре. Пĕчĕк сĕтел, унта пĕр çĕр улми, краççын лампи. Шаккаççĕ.
СОНИ (Кăмака хыçне чупса кĕрет). Вырт çакăнта, ывăлăм. Эпĕ сана сыхлаймарăм. Каçар.( Куççульне шăлса тухса). Тухатăп. Халех. (Çенĕке тухать). Кам унта?
КАРАÇ Мĕн çывăрса выртатăн! Тырăпа каймалла. Ма тухмастăн? Халех председатель те килетĕп, терĕ.
СОНИ Аран-аран. Килтĕр! Килтĕĕр... Мана вăл та нимĕн те тăваймĕ. Мĕн çиетĕп тырă йăтмаллăх. Мана хама йăтса каймалла унта. Çӳрейместĕп эпĕ.
КАРАÇ Çӳрейместĕн пулсан, пульницăна кай.
СОНИ Каятăп. «Описательно» каятăп. Ĕçе тухма вăй çук, унта çитме вăй пухсанах кайăп.
КАРАÇ Паянах каймалла.
СОНИ Каятăп, каятăп пуль.
КАРАÇ Мĕн çĕр каçа çывăратмарĕç-им? Питĕ вăйлă ăйăрпа пултăн пуль? Ха- ха-ха! (кулать).
СОНИ Кулах, кул. Эпĕ сана аван култаратăп-ха. Манран мĕн чуль кулнине хăв та манмăн тетĕп-ха. Кулах, кул.
КАРАÇ (Тăруках кулма чарăнса). Мĕн сӳпĕлтететĕн эсĕ?
СОНИ Çапла çав. Пире нимĕн те калама юрамасть, сирĕн вара пирĕнтен кулма та юрать. (Шаккани илтĕнсе каять).
КАРАÇ Председатель – Лаврентиçитрĕ тинех. Лекрĕн халь.
СОНИ (Алăк патнерех пырса). Уçах, кĕрĕр.
ЛАВРЕНТИ (Кĕрет). Кăнтăрла çитет. Мĕн эсĕ, Сони, ĕçе каяс мар терĕн-им?
СОНИ Каясчĕ-ха та, каяймастăп. Чирлесе ӳкрĕм.
ЛАВРЕНТИ Мучи ĕнер эсĕ аран терĕн -ха. Çапах вăл ĕнер пулнă. Паян иртсе кайнă пуль. Ĕçе тухмалла! Никам та çук, сансăр кам йăттăр михĕсене?
СОНИ Çаплах пулĕ те. Вăй çук ман.

ЛАВРЕНТИ Пульница кай, эппин! Мĕн туса выртан?
КАРАÇ Эпĕ те çавнах калатăп. Мĕн вăхăта ирттермелли. Вĕçтер, хăвăртрах кайса кил.
ЛАВРЕНТИ Чăнах. Мĕн вăхăта тăсмалли.
СОНИ Вăхăчĕ мар-ха, вăйăм çук. (Кăмака хыçне кĕрсе чўркенĕ вилĕ ачине илсе тухать). Куратăр-и? Мĕн калăр?
КАРАÇПА ЛАВРЕНТИ (Çăварĕсене карса хураççĕ). Паччушки!..
ЛАВРЕНТИ Караç, мĕнле бригадир эсĕ? Кала-ха. Бригадăра хĕрарăмсем мĕнпе сывланине те туймастăн. Санăн пĕлмелле пулман-и çакна! Аманнă Павăлĕ çулталăк патнех пурăнчĕ вĕт. Эх, эсĕ те, арçынсемпе тан куран.
КАРАÇ (Кулса). Аманнă тетĕн вĕт. Эпĕ те çапла шутланă. Аманнă, аран çўрекен ар çын ача тутарма пултарать тесе шутламан. Сонийĕ хырăмне каçăртса çўремен, ăçтан пĕлес ман?
ЛАВРЕНТИ Санăн пĕлмеллех пулнă, никам пĕлмесен те.
КАРАÇ Тытса, хыпашласа пăхмаллаччĕ-и-ха ман?
ЛАВРЕНТИ Апла та, капла та...
КАРАÇ Кам шутланă, аманнă çынпа Сони айлашнă тесе.
ЛАВРЕНТИ Чипертерех калаç. Хусахсем айлатаççĕ. Çемйерисем аташмаççĕ. Ăна шутласа мар туйса пĕлмелле!
КАРАÇ Çапла-и?..
ЛАВРЕНТИ Халь ответ– явап тытмалла пулать сан. Ун чухне пĕлĕн! Сталин кашни чĕр чуншăн пуç ярать, манса ан кай.
КАРАÇ (Чĕркуçленсе). Лаврентик, ан пĕтер.
ЛАВРЕНТИ Сонинчен каçару ыйт, уншăн пуç çап. Вăл сан Турру халь.
КАРАÇ (Çаврăнса).Сони, ан пĕтер. Каçар. Çимелли халех тупса килетĕп. Ачи пирки никама та ан пĕлтер. (Пуç çапать). Тур çырлахтăрах. Çылăхлăскере мана Турă каçартăрах.

ЛАВРЕНТИ Малтанах çакăн пек калаçмаллаччĕ сан. Ату, кур-ха, Сонирен кулса тăрать. Сана пула манăн та пуç пĕтме пултарать.
СОНИ Председателех пĕтерес темерĕм çав. Çавăнпа пульницăна каймарăм. Сире хĕрхентĕм. Ĕçе хăваламан пулсан, эсир пĕлмесĕрех юлаттăрччĕ.
ЛАВРЕНТИ Тавтапуçах сана, Сони. Халĕ кала, мĕнпе пулăшмалла сана?
СОНИ Халь çак ачана типтерлемелле ĕнтĕ. Ах, ывăлăм, перекетлеймерĕм. Усраймарăм. Хам та татах хĕр пулать, чăтăмĕ пулать пуль ыттисем пекех терĕм. Апла пулмарĕ. (Куçне шăлать).
ЛАВРЕНТИ Ан макăр. Ахаль те вăйу пĕтнĕ. Сыхла хăвна, хĕрхен. Çимелли те çук. Халь сана чи малтан çимелли мар, ĕçмелли – йўçĕ кирлĕ. Караç, чуп, тупса кил симĕссине.
КАРАÇ Халех... (Васкасах алшишĕсене илет, чупса тухса каять).
ЛАВРЕНТИ Сони, лар.
СОНИ Ларма çук-ха халь.
ЛАВРЕНТИ Юрĕ, тăр. Итле. Халь мĕн пулса иртнине тата халь эпĕ сана мĕн каланине никама та ан шарла. Сан çимелли те çук. Çимелли пулать. Ан шарла çеç. Акнă хыççăн ниçта та çырман пăрçа тата ыраш юлни пур. Ăна сана тўлевсĕрех паратăп. Ан шарла çеç. Пăрçа авăртса йăва туса çиййĕр.
СОНИ Юрать-ха. Хăрамастăр-и?
ЛАВРЕНТИ Пулăшасси пирĕн тивĕç. Хамах айăплă. Сирĕн пек ĕçлекенсем çинчен пирĕн малтанах шутламалла пулнă. Çамрăк арăмсенчен эсĕ кăна кунне – çĕрне пĕлмесĕр лава çўретĕн. Ачусем пĕчĕккине пăхмасăр пăрахса хăваратăн. Халĕ эпĕ кайса хатĕрлем-ха. Караç килсен кала, пытăр. Пĕрер михĕ тырă сан патне леçсе патăр. Халĕ киле кайса карчăкăма çăкăрпа сăра

йаттарса ярам. Сони, тавах, манăн пуçа çиме яманшăн.
СОНИ Ун пек усал пулас темен-ха. Хăвăра та тавтапуç ăнланнăшăн, хĕрхеннĕшĕн, пулăшнăшăн.
ЛАВРЕНТИ Пулăшу ку пысăках мар-ха.
СОНИ Чăнласах çăкăр пулсан... ман чĕппĕмсене çитерме пĕр михĕ сахал мар-ха. Халлĕхе пирĕн татăк çăкăр та çук.
ЛАВРЕНТИ Кин, ун-кун никама та ан шарлах.
СОНИ Çук, çук. Шарлас-тăвасси-и ара. Хам аран çӳретĕп.
ЛАВРЕНТИ Хытах ан кулян-ха. Ачине каçхи, çынсем çӳреме пăрахсан, кайса пытарма тивет. Эп халь каям-ха. Тыррине хатĕрлем.(Тухса каять).
СОНИ (Йĕрсе ярать).
КАРАÇ (Килсе кĕрет). Ну, Сони, тыт, кăлар черкке. Ĕçер.
СОНИ Кирлĕ мар. Илсе кай пĕрлех. Санран мана нимĕн те кирлĕ мар. Санпа ĕçсе ларман, Турă та ан хуштăр çынран кулаканпа пĕрле ларма.
КАРАÇ Юрĕ – юрĕ. Ан çилен. Тыт. Эпĕ шӳтлесе çеç илтĕм.
СОНИ Ман шӳтлемелли вăхăт мар çав.
КАРАÇ Сони, тыт. Ун-кун ни-ни. Юрамасть.Ман пуçа пĕрремĕш касать Сталин. Тур çырлахтăр. Ятне асăннăшăн та. Сони как нипуть, çын пул. Инки вĕт эсĕ пирĕн.
СОНИ (Туртса илнĕ пек, кĕленчене илсе сĕтел çине лартать). Халь тухса кай, Караç!
КАРАÇ Ан хăвала. Халех каятăп. Анчах ывăлна пытарма килмелле-çке ман.
СОНИ Ун пирки председательпе калаç. Мĕн хушать, çавна тăвăн. Халĕ кай. (Алăк еннелле утать).
КАРАÇ (Тухса каяс умĕн). Юрĕ-юрĕ, анчах эсĕ никама та ан шарла.
СОНИ Ут-ут. Хаяр шĕвекшĕн тавтапуç.
КАРАÇ Ĕç эс ăна, ĕç. Унсăрăн чĕрĕ юлаймăн.
СОНИ Хусах каламасăрах пĕлетĕп ăна. Ыран тата илсе

килме пултаран.
КАРАÇ Юрĕ! «Описательно!» Эсĕ тулькăш никама та ан кала. (Тухтăр).
СОНИ Юрĕ. Каçчен. (Эрех кĕленчине ярса тытать те часрах стакана эрех тултарса ĕçет). Вăт, чăн халь вилмĕп. Ĕçе пĕр эрне тухмасан та терĕ-ха председатель. Унчен вăй илетĕпех. Армана кайса килмелле те. Ай, тытман упа тирне сĕвес мар-ха. Ачине пытарсан, тен, нимĕн те памĕç. Пуçа кайрĕ тата ку. Вывртам-ха. (Кăмака хыçĕнчи вырăн патне пырать те ачине асăрхасан, кăшкăрса йĕрет).
СОНИ (Каç кӳлĕм. Краççын лампи çутать).
Нимĕн çимесĕр çак таранччен çывăрнă эпĕ. Юрать-ха ачасене апай илсе кайнăччĕ. Мĕн çитереттĕм.
ЛАВРЕНТИ (Шаккать). Уç-ха, уç, Сони. Эпĕ çăкăр илсе килтĕм. Ман май килмерĕ тепре кĕрсе тухма. Çăкрине кăнтăрлах хатĕрленĕччĕ.
СОНИ (Уçса кĕртет). Кĕрĕр, кĕрĕр.
ЛАВРЕНТИ Вăт, Сони, уçăлан. Халь пайсăрхин пек шурă мар, хĕрлĕ сăн çапнă-ха кăштах. Акă çăкăр, çи ларса. (Хӳмĕнчен çур литр кĕленчи кăларать). Сĕт илсе килтĕм тата вăрттăн. Çуне те майлаштарăп-ха.
СОНИ Кирлĕ мар. Хăратăп эпĕ. Нимĕн те илсе ан килĕр. Усал чĕлхеллисем тĕлне пулсан, Павăл арăмĕ патне чупать тейĕç.
ЛАВРЕНТИ Ачусем килсен яр ман пата ĕçе. Эп унта çимеллисем илсе пырăп.
СОНИ Кун пек татах килĕшмелле. Юрĕ эппин. Ачасене ыран илсе килет пуль-ха апай.
ЛАВРЕНТИ Караç килмеллеччĕ, тем çитеймерĕ-ха. Çурçĕрччен çăва çине кайса пытарса килес тетпĕр, Сони. Мĕнле шутлатăн?
СОНИ Эпĕ мĕн шутлакан çын ĕнтĕ. 9 уйăх та çӳреме пултараймарăм, 8- мĕш уйăхра тухса ӳкрĕ. Хамăннах пĕлмеллетчĕ те асăрханма. Вăхăчĕ пирĕн мар çав.

сыхланмаллаччĕ те. Лавне хăваларĕç.
ЛАВРЕНТИ Пулнă, иртнĕ, асăнмăпăр. Ку пире валли те урок пулчĕ. Хĕрарăмсене кăштах тĕккелесе, тыткаласа лăхмаллах та çав. Ĕç те ĕç тесе пуçа та шеллеместпĕр, хĕрарăмсене арçын вырăнне хурса пурăнатпăр та-ха.
СОНИ Хамăннах та сыхланмаллаччĕ пулĕ те.
ЛАВРЕНТИ Юрĕ, ун пирки тек калаçмăпăр. Караç килмерĕ. Çăва çине кĕреçесем илсе тӳрех каçрĕ пуль. Каям. Эсĕ хайрантарах ачине илсе пыр. (Тухать).
СОНИ (Кăмака хыçне кайса йĕрет). Ачам, ывăлăм. Эпĕ санăн сассуна сивĕ уйра илтме çеç пултăм-ши? Эсĕ вара мана туйса та юлмарăн ĕнтĕ. Ятна та пĕлеймĕн. Ят памаллăх та сана çитĕнтерейменмерĕм. Пирĕн чухăнсен шăпи ача суратма та, ӳстерме те май памасть. Ах, ачам. Манăн хурлăха хурах кушакĕ те ан куртăрччĕ. Мĕнле йывăр шăпа татах кĕтет-ши? Аçу та таçта вилсе выртрĕ пуль. Эпĕ вара пирĕншĕн те хурлăх курма юлатăп çак çĕр çине. Ачам, каçар. (Алăк чĕриклетсе илет). Мĕн ку? Ача мана ăнланчĕ-и? (Татах сас). Мĕн, мана ăнланать-ши чунĕ? Пĕчĕк чун. Эпле арçын ачашăнччĕ аçу. (Татах алăк сасси). Ара ку алăк. Кам кĕресшĕн вара пирĕн пата? (Тухать).
СОНИ Кам унта? (Хăраса кайса ). Кам хыçалтан сыхларĕ-ши? Ача вилнине такам пĕлнĕ-ши? Сыхлаççĕ-ши? Хамăр ил çынни мар ку. (Çĕнĕрен). Кам эсĕ?
КĔРАРĂМ Уç-ха, уç. Эпĕ пĕлтерӳ илсе килтĕм.
СОНИ Мĕнле пĕлтерӳ. Суятăн эсĕ.
КĔРАРĂМ Уç-ха.
СОНИ (Уçать). Кам пултăр эсир?
КĔРАРĂМ Эпĕ усал хыпар валеçекен те хам камне палама та хăратăп. Сирĕн вăрçăра арçын çук-им?
СОНИ Манăн Павăл! Вилчĕ-и? (Йĕрсе ярать).
КĔРАРĂМ (Куççулĕ витĕр).Каçар. Хутне парсах хăварам. Сĕрле килнишĕн каçар. Эсир лава çӳрекенскер терĕç те иле ча сах таврăнмастьне пĕлтĕм те, тĕттĕмпе çитрĕм.

9 курăну

Караçпа Лаврентиçăва çинче шăтăк чаваççĕ.

ЛАВРЕНТИ Караç, эпĕ кăнтăрла çавăнта 4 хăма илсе килсе хунăччĕ, каçса ил-ха çав енне. Вилĕне тӳрех çĕр çине пăрахас мар. Тупăк майлăрах çапса ту. Татмалли пăчăки унтах. Пăтисене кунтан ил.

КАРАÇ Юрĕ. (Каять).

ЛАВРЕНТИ Ак, вĕт. Турă. Ăçта тĕрме пулатчĕ пире валли. Юрать-ха Сони ăслă та çын пек. Ăнланать. Пире ку ачашăн хупса хураччĕç вĕт. Тур çырлахтăрах. (Сăх сăхса илет те чавма пуçлать). Нумаях юлмарĕ. Тепĕр шит чавсан çитет. (Пăта çапнă, хăма татнă сасă илтĕнет).

КАРАÇ Лаврентн, манăн пулчĕ те. Эсĕ пĕтертĕн-и?

ЛАВРЕНТИ Пулчĕ-ха та Сони çук халĕ те. Урăх шухăш тытмарĕ-ши?

КАРАÇ Кайса килем мар-и?

ЛАВРЕНТИ Тăхта-ха. Туртса ярар-ха. Тен, хăех килет. Хăранипех килте ларас çук-ха, нимĕн те пулмарĕ пулсан. (Хут татăкĕнчен пирус чăркама пуçлаççĕ).

СОНИ (Килсе çитет). Ай, Турăçăм, Ман Павăла та пĕрлех пытарăр ĕнтĕ.

ЛАВРЕНТИ Сони, мĕн калаçан ара эсĕ? Павăл килет ак чиперех. Вăрçă ĕмĕрлĕхех мар.

СОНИ Акă (Хут тыттарать). Тытăр, вулăр, пирус çутипе вулама пулать пулсан. Халь пачĕç. Пĕр хĕрарăм, ют çын киле кĕрсе алăран тыттарса хăварчĕ. Хыпарсăр çухалнă манăн Павăл.

ЛАВРЕНТИ Ăна шухăша тĕрĕс пĕлекен çынран ыйтса пĕлмелле. Ун пек хыпарсăррисем пурăнни сахал мар...(Çĕлĕкĕсене хывса пуçĕсене çĕрелле пĕкеççĕ).

СОНИ Манăн валли ун пек пулас çуках.

## 4 пайĕ
## ВĔРЕ ÇĔЛЕН
### 1 курăну

Пĕчĕк пӳрт тайăла пуçланă. Унта

СОНИ (Çывăрса тăрать те майланать). Павăл, Павăл, мĕншĕн-ха ытти арçынсем пек эсĕ чĕрĕ юлайма – рăн. Пускилри Власса Иванĕ килнĕ, вăл та манран ку – ласшăн. Караç каламасăрах пĕлетĕн. Лавренти пусмăрлать, ытти çынсен çăхавĕ хыççăн каять. Павăл, çывăр лăпкăн. Вăрçă чарăннă, апла пулин те маншăн пырать-ха. Эсĕ тăван çĕршывшăн кĕрешнĕ пекех, эпĕ сан ятупа пурăнăп, никама та парăнмăп, ан шутла, ан пăшăр – хан ман пирки. Пепкемсене выçă вилме памăп. Вăрçă пĕтнĕ – эсĕ çук. Апла пулин те эсĕ маншăн чĕрĕ пулăн. Павăл, Павăл. Анчах пур пекчĕ. Ăçта çухалтăн. (Павăл пырать, Сони саланса кĕрсе выртать). Килех, кил. Эпĕ сана кĕтнĕ, кĕтнĕ. Тăна çухатасла кĕтнĕ. Ăçта эсĕ, Павăл? (Чирлĕ саспа калаçать). Павăл, Па-а-вăл!.. (Арçынпа çывăрнăн туять. Ыталать. Кравать çинче сиккелесе илет). Павăл, Павă-ăл!..

УЛЬЯНА (Шаккать). Уç-ха, Сони, уç. Халĕ те çывăратăн-и?

СОНИ Мĕне пĕлтерет? Анне. Халех тухатăп. (Кĕпине тăхăнса тухать).

УЛЬЯНА Мĕн чирлеместĕн пулĕ те эсĕ? (Уçса кĕрет).

СОНИ (Йĕрсе) Анне, тем пулчĕ мана. Павăл кунтах пек, анчах çухалать, чĕнмест. Эпĕ вара çĕрĕпех унпа калаçа – тăп, çывăратăп та унпах.

УЛЬЯНА Ачам-ачам. Эсĕ чирлесе кайнă вĕт. Юмăçа кай-малла. Пĕр тăхтамасăр юмăçа хамах каям. Шыв ĕçтер-ха.

СОНИ Апат çитерме те нимĕн те çук.

УЛЬЯНА Апат çиме килмен-ха эпĕ. Ăш вăркарĕ-çке. Ахальтен мар. Эсĕ чирлесе кайнă вĕт. Мĕнле уçмалла-ха?

Пĕр тăрăх пире кайса парам. Ахаль никам та сыватас çук.
СОНИ (Йĕрет) Анне, каллех хура куççуль çӳрет мана йĕр – лесе. Эсĕ те лăпкăн пурăнаймастăн.
УЛЬЯНА Амăшĕн ĕнтĕ хĕрĕн пурнăçĕпе пурăнмалла. Сансăр пурнăç та пурнăç пульмĕ. Мĕн пурри ачашăн-çке. Эсĕ те вара, Сони, ма çавăн пекех кулянатăн, макăртăн ара? Ытлашши хуйхăрма юрамасть вĕт çынна, çын ухмаха ерме пултарать.
СОНИ Юрать-ха ачасем пур. Тырă выратăп та, куç курмасть – темле ĕçлетĕп. Куç типсе курмасть. Каç пулнă, çынсем киле кайса пĕтнĕ. Асли çĕмел тăвать, кĕçĕнни çаплах киле чĕнет. Пăхмас та, кайăр тетĕп çаксене. Каяççĕ. Киле çитсен лараççĕ – лараççĕ те каллех тухаççĕ. Уя пыраççĕ. Хам нимĕн тĕлне те пĕлместĕп. Юрать-ха ачасем пырса илсе килчĕç. Павăлшăн макратăп. Вилнĕ хутне илнипе пушшиех те çухалса кайрăм.
УЛЬЯНА Юрĕ. Ун пек ытлашши ан макăр-ха. Сывлăхна ачасем валли упра. Вĕсене ура çине тăратмалла. Эпĕ каям. Кĕçĕрех çаврăнса çитме тăрăшăп. (Каять).
СОНИ Ах, мăнтарăн, анне чĕри. (Сулланса каять). Выртас пуль. Выртма та хăратăп. Павăл килет каллех. Анне, ан кай-ха! Çук. Кайрĕ пулас.

## 2 курăну

Юмăç патĕнче.(Шаккани илтĕнет).

ЮМĂÇ Кам унта? Кил, ирт.

УЛЬЯНА (Кĕрет). Эпĕ - ха. Çак шур пире сире парнелес терĕм. Йышăннишĕн тав.

ЮМĂÇ Кам-ха эс? Мĕн йывăрпа?

УЛЬЯНА Хĕрĕм чирлесе кайрĕ. Аташать каплех. Вилнĕ арçынĕпе çывăрмаллипех çывăратăп, тет.

ЮМĂÇ Пулнине калать пуль-ха, ун патне ку-вĕре çĕлен пырать. Урăх каламасан та пултаратăн. Пĕтĕмпех ăнлан – тăм. Халĕ сире çав тери йывăр ĕç хушатăп. Хăрама кирлĕ мар сывалас тесен.

УЛЬЯНА Мĕн тумалла-ши? (Куççульне шăлать).

ЮМĂÇ Тăхта, йăлтах каласа ăнлантаратăп. (Хăй тем вĕрет, сурать те хут тыттарать). Çакна хĕрне пар. Минтер айне хурса çывăртăр. Иртсе кайĕ. Анчах ку пĕр виçĕ çĕрлĕ хе çеç. Виç каçран ытла пулăшмасть.

УЛЬЯНА Ай-уй тата. Мĕнле ытларах тăсмалла-ши?

ЮМĂÇ Тăхта, тăхлач. Ан васка. Васкакан мăшăрĕнчен савăнман. Халĕ çак шыва сурса парса яратăп. Ĕçтĕр. Лăпланать.(Сурать-сурать те тем калать...). Пулчĕ. Тыт. Халь кайиччен лайăх тăнла. Сирĕн çĕрле, çур çĕр тĕлĕнче автан авăтман ялта пулма тивет. Пĕр икĕ шăтăка алтса пĕринчен алă шăмми, тепринчен ура шăмми тата айăк пĕрчин шăммине илсе тухмалла, çавна хĕрӳ тарласа çӳренĕ кĕпине тăхăнтартса хĕрарăм туса хăвармалла. Ыран килĕр иксĕр те.

УЛЬЯНА Ах, турă. Ах, турă.

ЮМĂÇ Каймах тивет, унсăрăн уçăлаймасть. Çын кĕлетки туса шăтăк чавса çав ăсталанă вил çынна пытарăр.

УЛЬЯНА Тавтапуç.

ЮМĂÇ Юрĕ. Сывалсан калăн.

УЛЬЯНА Юрĕ. Тем ыйтсан та памалла. Сывалтăрччĕ çеç.
ЮМĂÇ Сывалать.
УЛЬЯНА Çĕрлехи хĕреслĕ ял хăратать-ха та ĕнтĕ.
ЮМĂÇ Çапла. Хĕреç хурса тухăр, хĕреç хурса кĕрĕр.
Малтан çăва пуçлăхне, Натлине, асăнăр. Юрать. Чипер çаврăнса кил.

3 курăну

Ял. Каç пулнă.

УЛЬЯНА (Яла кěрет). Çитрěм ěнтě. Сонисен килне çыв – харатăп. Турă, çырлах, Турă сыхла. Хăрама юрамасть, тет. (Çěлен ялтăртатса вěçет. Ылтăн тěслě хěм сапса сарай çийěн Сонисен пўрчě хыçне анса çухалать). Чăн та, вěре çěлен ку. Сони патне кěрет ěнтě. Мěнле шыраса тупмалла-ши тумне? Ăçта пытарать-ши. Тупасси пульмě. Капла мар, часрах кěрем. Апла юрать-и-ха? Тăхтам-ха. Çук, таçта кайрě пек. Сонин пулмарě ку. Ялта пěччен юлнă хěрарăм – сем сахал мар çав.(Шаккама тăрать. Кăштахран çенěк алăкě уçăлнă сасса илтет те шартах сикет). Ай-уй, пěтрěмěрех!

СОНИ Анне, эсě-и ку. Ма хăран? Шаккатăн та чěнместěн.

УЛЬЯНА Ачам, эп шаккаман- ха. Эсě тухнинчен те хăраса кайрăм. Çапла хăвах уçса кěртнě ěнтě эс ăна.

СОНИ Мěнле-ши? Анне, ěç тухрě-и?

УЛЬЯНА Пўрте кěрер-ха.(Кěреççě).

СОНИ Лар кунта, курăкпа шыв věретрěм. Ěç-ха, яшка ан – тарса парам. Курăксенчен пěçеркелерěм. (Апат лартать). Пěр витре çěр улми пачěç те, ăна пěтерес темес-ха, çа – вăнпа ěнер уя кайса шăн улма пуçтарса килнěччě. Крахмал юхтарасшăн икерчě тума. Çăнăх питě сахал. Çулла халь пире кашкăр ути усрать-ха.

УЛЬЯНА Юрě çием-ха, эппин. Апатсăр та утма вăй юлмасть. (Çиме ларать). Тавта пуçах Турра, юмăç йышăнчě.

Халь çур çěрччен выртса канар та кайран, çăва çине кайма тивет. Çирěм, тав, ачам (Пуç çапать). Аннене, ывăлне, таса сывлăшне. Аминь! Çывăрма каять.

СОНИ (Сěтел пуçтарать). Майланса кěрсе выртать.

УЛЬЯНА ( Сăнаса выртать). Сони çывăракан вырăна йытă евěр хăмăр чěр чун пырать те çитти айне кěрет. Тем

мăкăлтатни курăнать. Ну çакă, хывăннă çĕлен пуль. Ах, турух. Чĕнсе пăхам-ши? Тăхтам-ши?

СОНИ (Йăшăлтатать те йăшăлтатать).

УЛЬЯНА Вăратам, вĕлерсе кайиччен. Сони, Сони теп вăран-ха, вăран.

СОНИ (Майĕпен). Мĕ-ĕн? Мĕн ара?

УЛЬЯНА Вăран-ха, хĕрĕм. Вăран.

СОНИ Анне! (Сиксе тăрать).

УЛЬЯНА Ачам, ан хăра-ха. Эс нимĕн те туймарăн-и? Уçса пăх-ха çиттине.

СОНИ (Уçать). Нимĕн те çук.

УЛЬЯНА Апла пулсан, аван. Халь тăрар та каяр. Вăхăт каять. Çур çĕрте ĕçне тумалла. Çакна ĕç, кусене ил – пуççăр та чунсăр яла каймалла.

УЛЬЯНА Сони, хĕрĕм, ан хăра тулькăш. Хăрасан пулăш – масть. Сан сывалмалла. Хăв чирне çăвана хăварас тесен, тарланă хура кĕпӳне ил-ха. Ыттине кайран калăп. Хăрама кирлĕ мар çăваран. Унта чĕррисене пытарман. Вĕсем нимĕн те тумаççĕ. Эпĕ санпах пулатăп. Халь атя каяр. (Сони хуралнă кĕпине илет те амăшĕпе тухса каяççĕ).

4 курăну

СОНИ килĕнче. Чиперленнĕ самаях. Сăнĕ те шупкаланнă.
СОНИ (Чўречерен пăхать, сасартăк хăраса ўкет).
Тата-мĕн сахал кўрентерчĕ тесе шутлать-им? Пĕччен
мар, иккĕн килеççĕ. Эх, çамрăк хĕрарăмсем, мĕн пирĕн
чурăнни? Нумайăн эпир, анчах та вăйсăр. Эпир чун
хĕререн тăван çĕршыва юрататпăр. (Шакаççĕ). Уçмастăп!
Карас! Лаврenти!
КАРАÇ Уçмасан çĕмĕретпĕр.
СОНИ (Алăка уçса ярать). Мĕн кирлĕ сире?
ЛАВРЕНТИ Эсĕ ĕнер налук тўллемен, халĕ вара мĕн
журрине илсе каятпăр.
СОНИ Мĕн-ха апла? Ара налук тўллетĕп, терĕм-çке. Халь
мар кайран. Килте те нимĕн те çук сире илсе каймалли.
Канаша лавпа кайма килĕшрĕм, унта никам та каясшăн
мар. Эпĕ ачасене кунĕ-кунĕпе выçă лартса хăварсах
каятăп, налук парса татассишĕн каятăп.
КАРАÇ Эпир тупатпăр, çапла-и, Лаврenти? (Пăхкалать).
ЛАВРЕНТИ Кĕнĕ чух эпĕ пĕр çĕклем вутă куртăм.
КАРАÇ Питĕ тĕрĕс. Эпĕ ун çинчен мансах кайнă. Ăна
лесник хăйĕнпе çыварнăшăн парать. Çĕрĕпе унта
сывăрать те ирхи вутă йăтса киленçи тăвать тата.
СОНИ Эх, этемсем те мар эсир. (Ĕсĕклесе выртса
макăрать).
ЛАВРЕНТИ Атя, мĕн пăхса тăран вăл сăнсăр хĕрарăм
ине. Йăт вуттине. (Караç йăтса тухса каять).
СОНИ Илсех кайрĕç. Нивушлĕ пирĕн çапла ĕмĕрĕпех
чушара пурăнмалла. Совет саккунĕ çитĕ кунта та. Ун чухне
курăр-ха. Пуринчен ытла ĕçлет чухăн çын, пуринччен
начарри вăл. Ĕлĕк ĕçлекенĕн пулнă-çке. Мĕнле-ха капла?
Кăрмана чупас. Лава тухса кайиччен пĕр çĕклем вутă илсе
килес. Тен, талăкран та таврăнмăпăр. Ачасем шăнсах
килĕç сивĕ пўртре. Выçтарса вĕлерес марччĕ.

Паян крахмал икерчипе пурӑнкалӗҫ. Ыран ҫӗр улми пӗҫерӗп. Ман пурнӑҫа чухӑн ҫын кушакӗ те ан куртӑрччӗ. Хура куҫҫульсӗр пуҫне нимӗн те курмарӑм ҫак пурнӑҫра.

СОНИ (Пӑяв илет). Ҫак пӑявпа вутӑ йӑтса ҫемьене усратӑп. (Тухса каять).

(Кил картинче чӑхӑсен сасси янӑраса каять. Автанӗ тапӑртатса авӑтать те йӑхӑрса какӑлтатать).

СОНИ Чӑхсене кам хӑрата пҫларӗ? Ҫӑмарта та тума пӑрахрӗҫ. Налук тӳлеме те ҫук. Чӑх ҫӑмарта тумасть тесен кам ӗненет. Выҫӑпа хӑйсем ҫисе яраҫҫӗ-ши? Ҫу-ук. Кунта урӑхла. Ачасем ахальтен каламарӗҫ, пӗр кун вӗсем пирӗн пахчаран Иван арӑмӗ – Власса тухса кайнине курнӑ. (Сасӑ илтӗнсе каять).

ВЛАССА Иван, пӑх унталла! Пӑх тетӗп. Сони-и ӗҫе тухса кайрӗ-и?

ИВАН Мӗн тӑван ара ҫав Павлаарӑмӗпе? Ир пулсан килте хӑҫан юлнине курнӑ эсӗ? Килте пулман, пулас та ҫук. Мӗн пӑхас ӑна. Пӑхсан хӑв кӗвӗҫетӗн-иҫ.

ВЛАСССА Тӑмсай! Лайӑх пӑх.Тен, паян киле юлать. Ун патӗнче ӗҫе хӑвалакансем пулчӗҫ анчах. Хӑйне курмарӑм. Кайнӑ-ши вара?

ИВАН Вӑл тырӑ илсе килчӗ ӗнер. Апла пулсан паян авӑртма кайнӑ. Кашнинчех ун пек катӑк сахӑр лекмест ӑна. Унран пурте кулаҫҫӗ ҫеҫ. Анчах ахалех ҫылӑха кӗреҫҫӗ, вӑл вӑйлӑ та таса хӗрарӑм. Ун пек чуна пирӗн ялта ҫеҫ – юнашар ялсенче те пӗлсех каймаҫҫӗ. Ҫав хунямана пулах усала тухрӗ вӑл. Ял-йышра Сони мӗнлине пӗлеҫҫӗ пулин те, япӑх хӗрарӑмсем хӑйсем ҫинчен калаҫасран хӑраса хӑйсен ҫылӑхне ун ҫине тиесшӗн пулӗ те. Анчах вӑл пуян ҫемьерен тухни те паллӑ-ҫке. Сони ырӑ пурнӑҫ мар, тӑраниччен ҫӑкрине те ҫисе кураймасть, икӗ ҫыншӑн ӗҫлет. Пуян чухне ырӑ курнӑ теҫҫӗ вӗсене. Вӗсем хӑйсем ҫеҫ ӗҫлесе тунине никам та шута илмест.

ВЛАССА Мĕн эсĕ? Кам хӳттине кĕресшĕн мар пулĕ те?
ИВАН Эсĕ! вара килте аран тĕнкĕлтетсе çӳретĕн! Мана вăрçма пĕлетĕн, суккăр арăм! Власса тенĕшĕнех сана хам влаçа памăп-ха... (Ĕнсине шатăртатарса хыçать те кĕпи çине пăхса илет. Хура воротникне туртса пăхать ). Кĕпе те çуса тăхăнтартаймастăн, хамăн çуса тăхăнмалла.
ВЛАССА Мĕн, эсĕ ăна юратса пăрахмарăн пулĕ те?
ИВАН Çук çав, юратасчĕ те, вăл, ун пек хĕрарăм мар çав. Хăй патне çывăха та леçмест. Пĕччен хĕрарăма кам ырă калатăр. Çын çынна ырă тăвакан сахал вара пирĕн саманара. Çӳрекенсем пирки шарлакан çук, тӳрĕ хĕрарăмсене вара час-часах сăмахĕ лекет.
ВЛАССА Эсĕ мĕн палкаса тăратăн? Шутласан хĕрхенмелле ăна. Ăна хĕрхенсен мана курайми пулаççĕ ялти маткасем.
ИВАН Эс мĕн палкан? Хăв-иç аса илтеретĕн ун çинчен. Вĕт вăл тата атте калатчĕ, хĕлле сивĕ – вĕсем ватă, лава кайни камсем? Ватă стариксем те пĕччен хĕрарăмсем. Пĕр татăк çăкăршăн лаша тăваратчĕ, кӳлетчĕ, шăваратчĕ, канма ларсан та вăл – Сони канмастчĕ тет.
ВЛАССА Карĕ-и, каймарĕ-и?
ИВАН Кайрĕ! (Трăхса пăхмасăрах).
ВЛАССА Ут апла хурална, каях тек кирлĕ мар ăна сыхлама. (Иван тухса каять). Кайтăр-ха вăл. Эпĕ хам ĕçе пĕлетĕп. Паян унта сахалах мар çăмарта . Çăмартисем вара шултра, икĕ сарăллă. Качакин те сĕчĕ тутлă пуль те-ха. Качаки патне пыраяс çук. Икĕ ачи качакана мăйĕ – нчен тытсах çӳреççĕ.
СОНИ (Власса каçнине курать, тата майлăрах вырăна куçса сыхлама пикенет). Акă вăл çăмарта ĕçекен чăх каçать ман енне!
ВЛАССА (Каçса килет те тӳрех чăх витине кĕрет. Унтан пĕр хĕв çăмарта илсе тухать те тарма тăрать. Çав вăхăтра Сони Влассана ярса илет).

СОНИ Акă мĕнле чăх ĕçет пирĕн çăмартасене! Пускил хĕрарăмех иккен мана çын вырăнне хумасть. Сан арçын пур тесе манран кулас терĕн-и? (Сони ăна çупа-çупа ярать, Власса хирĕç çапса тарма хăтланать. Сони Власса хĕвне тытса лотăркаса пăчăртать. Çăмартисем юхса тухаççĕ).
ВЛАССА Сони, хĕрхен, эсĕ аван çын. Хўмрех ан çĕмĕрха. Çын курĕ çăмарта вараланчĕкĕсене. Вăрă тейĕç.
СОНИ Курччĕр, пĕлччĕр. Эсĕ мар-и ха ман çинчен усал ят сараканĕ. Ман çăмартасене çисе пурăнсан та, мана усал туса çўретĕн-ха эсĕ. Тата хырăмшăн иртĕхсе çўретĕн. Эпир выçă ларатпăр. Ачасем! Чĕнĕр çынсене, курччăр Власса мĕнле хĕрарăмне. (Сони Влассăна ĕнсинчен ярса илет те тутине юхса тухнă çăмартапа сăрмалать).
СОНИ Çи-çи, хам çитернĕ пек чухне! Ма кăшкăрмастăн?! Чĕн пулăшу! (Власса аран, вараланнă тутине шăлкаласа упалене пуçлать). Ме! Хып! Вăт çын пулать.
ВЛАССА (Çаврăнса) Усал Павлаарăмĕ!!! (Кăшкăрса тарать.. Чĕлхине кăларса кăтартать. Çынсем çакна илтсен пухăна пуçлаççĕ. Пĕççисене алăсемпе çапкаласа шавлаççĕ. Сони хуса çитет те пăявĕпе Влассан аллипе урине çыхса хурать. Лешĕ, тăлланăскер, сиккелесе тăрасшăн тапаланать).
СОНИ Шел пулин те, сан пек çынсене вăрлама та юрать. (Майланкаласа пăява илет). Сана пăяв та шанмалла мар. Ыран уяв ĕнтĕ, эпĕ вара уявсăр. Маншăн савнăç çук.
ИЛПИ (Чупса пырать савăнса). Мĕн кунта? Çынсем пухăнса тулнă. Камит мар пулĕ? Мĕн курман?
ÇЫНСЕМ Ял камитне курма килтĕмĕр.
ИЛПИ Кайăр-ха кунтан. Сонин уява...(хулĕнчен тытса килнелле илсе кĕрет) хатĕрленмелле. Итле-ха, Сони, астăватăн-и? Тахçан сан çине Степан юратса пăхнине.
СОНИ Астăватăп, астумасăр, çавăн пек ырă кăмăллă каччăна та астумасан. Вăл Павăл патне час-часах килетчĕ.

Эпĕ вара вăтаннипетухса каяттăм.
ИЛПИ Есĕ тĕрĕс аса илтĕн, вăтаннă унран пур хĕр те, хĕрарăм та. Юратмалла каччă вăл. Вăтăр çула çитнĕ, халĕ те авланман. Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕртен паян тин килсе çитрĕ вăл. Мир! Труд! Май! Победа!
СОНИ Тăнăç терĕç, Ĕç терĕç, Çу терĕç, Çĕнтерӳ терĕç. Ман пата вара нимĕнле нимĕç те килмен, хамăр çынсемех туллаççĕ. Таçтисем мар, вĕсем мана пĕлмеççĕ, ман таврисем, наяннисем, чунсăррисем.
ИЛПИ Эпĕ сана ăнланатăп, анчах та санăн та телей пулĕха. Пĕччен хĕрарăмсем татах та ăмсанĕç-ха сана. Эсĕ тасине курса, эсĕ телейлĕ те, мăшăрлă пулнине курса.
СОНИ Ан калаç-ха – хăмламан лаши, эсĕ вара тихине мухтатăн. Ăçта-ши вăл пире валли телей?
ИЛПИ Ыран санăн уяв! Кăвак куçлă, сарă кăтра çӳçлĕ каччă сан патне купăспа кĕвĕ янраттарса килет.
СОНИ Илпи, эсĕ ăçтан пĕлетĕн? Тен, урăххисене савать.
ИЛПИ Ăна никам та хирĕç пульмĕ те... Анчах та, анчах, хусахсем такасем мар. Ун чуль пурăнсан та арăм суйлама пĕлеççех пулĕ. Вĕсем чупаканнине суйламаççĕ. Вĕсен арăмĕсем те тăн-тăн пулаççĕ. Ку вăл пурте ăмсанакан арăм (шĕвĕр пӳрнине Сони умĕнче выляткаласа та кĕлеткипе тĕккелесе) – эсĕ.
СОНИ М анăн телей пулсан, хĕвел ыранах пӳртрен тухĕ.
ИЛПИ Тухать. Авă кур, Степан кунталла килет. Вçо... Яла кĕрсенех сан çинчен ыйтрĕ тет. Павăлпа вĕсем пĕрле госпитальте сипленнĕ. Сывлăхĕ пĕтнине туйса Павăл сывалмасăрах фронта кайнă та çухалнă. Степана хăйĕн çемйине шанса пани çинчен калань.
СОНИ (Алăк сасси илтсен). Илпи, хуп алăка леш енчен.
ИЛПИ Мĕ-ĕн? Çунса тухнă хĕрарăма ăнланма та пулать.
СТЕПАН (Илпипе çенăкре çапăнса илет). Сони çеç манран ан тартăрччĕ çапла. (Кĕрет). Сонюшка! (Сони именсе йăл кулса илет те аллине тăсса çĕрелле тĕшĕрĕлет. Лешĕ курмасть «Юрату юрлатăр» юрлать).

## ТУПМАЛЛИ

Персонажсем........................................................4;53

1пайĕ Сони

1 курăну ........................................................5 – 7
2 курăну........................................................8 – 13
3 курăну........................................................14 – 17
4 курăну........................................................18 – 19
5 курăну........................................................20 – 22
6 курăну........................................................23 – 25

2 пайĕ Хура куççуль

1 курăну........................................................26 – 27
2 курăну ........................................................28 – 34
3 курăну ........................................................35 – 36
4 курăну ........................................................37 – 38
5 курăну........................................................39 – 46
6 курăну........................................................48 – 52

3 пайĕ Хура пурнăç

1 курăну ........................................................53 – 55
2 курăну ........................................................56 – 58
3курпăну........................................................59 – 63
4 курăну ........................................................64 – 69
5 курăну ........................................................70 - 74
6 курăну ........................................................75 – 76
7 курăну ........................................................77 – 79
8 курăну ........................................................80 – 85
9 курăну ........................................................86

4 пайĕ Вĕрĕ çĕлен

1 курăну ........................................................87 – 88
2 курăну........................................................89 – 90
3 курăну ........................................................91 – 92
4 курăну ........................................................93 - 97

90.0

Эля Эльф (Клавдия Ивановна Вишневская)

Вĕре çĕлен е Сони (Софья)

Тăвата пайлă трагеди
(Трагедия в 4-х частях)

На чувашском языке

Компьютерный набор *Эля Эльф*
Редактор *Э.И. Яковлева*
Компьютерная верстка *Эля Эльф*

Подписано в печать 20.12.20[illegible]5. Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Arial Cyr Chuv. Печ. л. 4,5. Тираж 500 экз. Заказ № 551.

г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.